к 84.09(=Чув)
С31
Ч-44849

МИХАИЛ СЕНИЭЛЬ

# Таса çутă



Национальная библиотека ЧР
4-044849

Михаил СЕНИЭЛЬ

# Таса çутă

Шкул çулĕсенче çырнă
сăвăсемпе поэмăсем

Шупашкар – 2005



Национальная библиотека
Чувашской Республики
ч-44849



Хунаҫне —
шкул ҫулӗсене аса илме.

М Сениэль



УДК 821.512. 111
ББК 84 (2 Рос-Чув) – 5
С 31

**Михаил СЕНИЭЛЬ.**

**ТАСА ÇУТĂ**. Сăвăсемпе поэмăсем. – Шупашкар, 2005. – 240 с.

Михаил Сениэль шкулта вĕреннĕ чухнех пысăк поэт пулнă, унăн таланчĕ ир вăраннă. Çакна халь çирĕплетсех калама май пур: çырнăранпа çур ĕмĕре яхăн иртнĕ пулин те, сăввисемпе поэмисем, ытти хайлавĕсем кивелмеççĕ, паян çырнă пек хĕрӳн те уççăн янăраççĕ.

«Таса çутă» кĕнеке «Чăнах-ши вăл, ача чухне...», «Шкул вальсĕ» тата «Хĕр уйăрни» текен пайсенчен тăрать. Вĕсене поэт 1949–1957 çулсенче çырнă.

Ум сăмахне çыраканĕ Иван Егоров.

© М.Сениэль, 2005
© И.Егоров, 2005

# Ир палăрнă талант

Вăл шкул çулĕсенчех чăвашла та, вырăсла та çыратчĕ. Чăвашла, паллах, ытларах çырнă – тăван чĕлхене хисепленĕ, юратнă.

Михаил Сениэль шкулта вĕреннĕ чухнех пысăк поэт пулнă, унăн таланчĕ ир вăраннă. Çакна халĕ çирĕплетсех калама май пур: çырнăранпа çур ĕмĕре яхăн иртнĕ пулин те, унăн сăввисемпе поэмисем, ытти хайлавĕсем кивелмеççĕ, паян çырнă пек хĕрӳн те уççăн янăраççĕ.

Михаил Сениэль Тутарстанри Аксу районне кĕрекен Саврăшпуçĕнче 1940 çулхи раштавăн 30-мĕшĕнче кун çути курнă, 1947-1954 çулсенче ялти çичĕ креслă шкулта, 1954-1957 çулсенче райцентăрти вăтам шкулта вĕреннĕ.

Çак тапхăр пирки поэт хăй акă мĕнлерех аса илет: «Вулама мана анне пиллĕкрех хаçат татăккĕсĕкĕ тăрăх вĕрентрĕ», – тесе çырать вăл «Хыпар» хаçатăн 2001 çулхи пĕрремĕш номерĕнче пичетленнĕ «Кун-çул тӳпемĕ» статьяра. – Сăвă çырма эпĕ пуçламăш шкулта вĕреннĕ чухне çичĕ-сакăр çултах пуçланă. Малтанхи поэмăсене 1952 çулта сăрмакланă. Малтанхи калава 1953 çулхи çĕртме уйăхĕнче çырма хĕрринче хур кĕтĕвĕ кĕтнĕ чух çыртăм. Малтанхи повеçе вара 1953 çулхи кĕркунне пуçласа 1957 çулхи çуркунне çырса пĕтертĕм. Çав çулах çулла пĕрремĕш очерка та çыртăм. Кĕскен каласан, çыравçă ĕçĕ, пултарулăх ĕçĕ эппин, ман хам шкулта вĕреннĕ тапхăртах кал-кал пулса пыма пуçларĕ. Вăтам шкултан вĕренсе тухнă тĕле эпĕ пысăк ал çыру çырса хатĕрлерĕм, ăна «Таса çутă» тесе ят патăм. Ал çыру «Чăнах-ши вăл, ача чухне...», «Шкул вальсĕ», «Хĕр уйăрни», «Юные грезы»

тата «Саврăшпуçĕн, ай-хай, савăк тĕнчи» текен пайсенчен тăрать. Малтанхи икĕ пайне 250 ытла сăвă, виççĕмĕшне 4 поэма, тăваттăмĕшне вăтăра яхăн вырăсла сăвă, пиллĕкмĕшне «Ял ачисем» повеçпе новеллăсем, очеркпа калав кĕреççĕ. Паянхи кун тĕлне ал çырăва машинкăпа çапса çырнисен пуххин пĕрремĕш томне кĕртес тесе редакцилесе, страницăласа хунă – 14 автор листи, 450 страница ытла (1949-1957 çулсем)...»

Ку чăнах та çапла: ырми-канми ĕçлетчĕ Мишша! Çав хушăрах вĕренӳ çинчен те манса каймастчĕ. Вунтăватă автор листи, тăватçĕр аллă страница вăл вунулт çулхи шкул ачишĕн ытла нумай. Ку ĕнтĕ упранса юлайнисем çавăн чухлĕ-ха, çухалса пĕтнисем вара тата мĕн чухлĕ пулнă-ши? Тĕлĕнмелле вăй-хăват тапса тăнă çамрăк сăвăçра!

Çак «Таса çутă» кĕнекере ал çырăвăн çуррине яхăнĕ çеç тухать: «Чăнах-ши вăл, ача чухне...», «Шкул вальсĕ» тата «Хĕр уйăрни» пайсем. Унччен хайлавсем тĕрлĕ хаçатсемпе журналсенче, «Малтанхи юр», «Шкул вальсĕ», «Ытарайми», «Савăнăç куççулĕ», «Çĕр чунĕ», «Ирхи юрă» кĕнекесенче, антологисенче тухнă, вĕсенчен чылайăшне вырăсла куçарса Мускавра та кăларнă. Хăшне-пĕрне Григорий Хирпӳ, Александр Васильев, Геннадий Маркиянов тата Филипп Лукин композиторсем юрра хывнă.

Михаил Сениэль шкул çулĕсенче çырнă сăвăсем Чăваш кĕнеке издательстви 1978 çулта кăларнă «Юрату юрри» сборникра уйрăмах нумайччĕ, анчах та çамрăк талантăн хăвачĕ çĕрĕк чунлă кĕвĕç «тусĕсене» питĕ те канăç памарĕ пулмалла: тухнă кĕнекене магазина сутма ăсатас вырăнне çунтарса ямалла тутарчĕç. КПСС Чăваш обкомĕнчи идеологи секретарĕ А.П.Петров хушнипе Михаил Сениэль тирне малтан чăваш

çыравçисен Союзĕн правлени пухăвĕнче, тепĕр кунне издательствăра сÿрĕç, сÿсех илчĕç темелле – «Юрату юрри» кĕнекене, халăхшăн сиенлĕ тесе, пĕтермелле турĕç. Çапла майпа вара Михаил Сениэль хăй сакăр-тăхăр çулта чухнех «халăха хирĕçле» сăвăсем çырни, вăл «халăх тăшманĕ» пулни палăрчĕ, ун хыçĕнчен КГБ çынни уççăнах йĕрлесе çÿрерĕ, Михаил Сениэле «тĕрĕс çул» çине тăма тимлерĕ, тĕрĕс çул çине тухмасан мĕн пулассипе хăратрĕ: «Психушка е тĕрме», – терĕ вăл кĕскен çеç.

Тирне сÿнĕ вăхăтра пухусен протоколне Мишша хăй те çырса пынă, çав материалран тепĕр куннех «Тир сĕвÿ протоколĕ» ятлă пьеса пекки хайланă. Çав хайлав 1998 çулхи «Çамрăксен хаçачĕн» 43-44 номерĕсенче кун çути курчĕ. Пьесăра вылякансем пурнăçри чăн ячĕсемпех шăкăрин çапăнса тухнă çавăнта: А.Емельянов, В.Захаров, Ю.Айташ, Г.Ефимов, А.Кăлкан, Г.Орлов, Ю.Семенов, А.Галкин, В.Ахун, Р.Сарпи, Ип.Иванов, Н.Иванов, А.Артемьев, Р.Тарасова, В.Энтип, А.Соколова, П.Эйзин, Г.Чаржов, Д.Гордеев, Н.Терентьев, Н.Дедушкин... Çирĕмĕн ытла!

«Тир сĕвÿ протоколĕ» вăл икĕ пайлă салху камит. Ун умĕн авторĕ çапла калани пур: «Протоколне, ăна, хăйсем КПСС Чăваш обкомĕ валли çырса пынине, мана тыттарса та пăхтармарĕç. Ку – вĕсем мĕн павранине хам çыркаласа ĕлкĕрни. Вулама кичем ан пултăр тата калаçнă чух кам мĕн хăтланкалани уççăн курăнса тăтăр тесе, ĕç пулса иртнĕ хыççăнах протокола эпĕ пьеса пек туса çырса тухрăм. Вара, чăнах та, çав путсĕр ĕçе хутшăннă этемсем куç умне ытла та чĕррĕн тухса тăчĕç. Унтанпа çирĕм çул иртрĕ ĕнтĕ, апла пулин те халь те çав çынсем ман тире çĕçĕсĕр-мĕнсĕр сĕвеççĕ пек...

Вырӑнтан кӑларнӑ хыççӑн А.П.Петрова пичетре те, ахаль те чылай тиркесе хӑтланчӗç. Эпӗ вара тиркеместӗп, ӑна питӗ йӗркеллӗ, кӑмӑллӑ çын тесе хисеплесе пурӑнатӑп. «Пьесӑри» çав çирӗм ытла çынран эпӗ халь пӗрне те çилленсе çӳреместӗп, анчах та «вылякансен» шутне кӗмесӗр пытанса юлнӑ пӗр йӗксӗке нихӑçан та каçарас çук. Пытанса юлма юратакан çав этемме пула каярахпа Иван Егоров, манӑн тӑван шӑллӑм, вун икӗ çул писательсен Союзне лекеймесӗр çӳрерӗ, тем тӗрлӗ мӑшкӑл та тӳсрӗ...»

Пысӑк чунлӑ çын çав пирӗн Мишша: хӑйне хур тунӑ, чӗр мӑшкӑл кӑтартнӑ этемсене те каçарма пултарать, çилӗ пытарса çӳремест, ӑнланма пӗлет – чисти Иисус Христос ӗнтӗ! «Пытанса юлма юратаканни» вӑл, çав пирӗн тус, – Порфирий Афанасьев. Ӑна та тахçанах каçарнӑ ӗнтӗ Михаил Сениэль. Урӑхла пулма та пултараймасть – Михаил Сениэль вӑл Михаил Сениэль...

Иисус Христоса эпӗ ахальтен асӑнмарӑм. Вӑл ыйтнипе çӳлти Турӑ пӗтӗм ӗçе-пуçа çивӗч куçпа хытӑ сӑнаса тӑнӑ иккен: Мишшана шар кӑтартса хур тунӑ кантурсене вӑл часах тӗп турӗ, элес-мелес этеммисене салатса ячӗ.

Михаил Сениэль (Егоров) манӑн тӑван пичче. Манран кӑшт çеç аслӑ пулнӑран эпир унпа йӗкӗрешсем пек ӳсрӗмӗр, çавӑнпа та мӗн пӗчӗкрен тете тесе мар, ятран, Мишша тесе, чӗнеттӗм. Анчах та литературӑра ӑна эпӗ яланах аслӑ пичче вырӑнне хунӑ, ӗмӗрех хурӑп та, мӗншӗн тесен вӑл мана литературӑна кӗме питӗ те нумай пулӑшрӗ, çыравçӑн йывӑр ӗçӗнче халӗ те пулӑшса пырать, хӑйӗн творчествӑри ӑсталӑхне ырмиканми ӳстерсе пынӑ май, мана та сӑнасах тӑрать, çӗнӗрен-çӗнӗ утӑм тума хавхалантарать, вӗрентет...

**Иван ЕГОРОВ.**

*2002 çулхи утӑ уйӑхӗ.*



*Чăнах-ши вăл,*

*ача чухне...*



## ПĔЧЧЕН ХУРĂН

Вăйлă сивĕ çилсем.
Çап-çамрăк хурăнăн,
çĕр çумнех пĕшкĕнсен,
чунĕ пит хурлăхлă.

Ман тăван хурăнăм,
тек пĕччен эс пулмăн.
Ав лартаççĕ çынсем
сан пекех хурăнсем.

Юмансем те лартаç
ĕçченсем çак сăрта.
Çитĕнĕç йывăçсем
сыхлама тырăсем.

Эсĕ те çитĕнĕн,
ӳсĕн те сарăлăн,
хунавсем кăларăн,
ӳсĕн те савăнăн.

*1950.*

## Тантăшсем

Пĕр çулта çуралнă эпĕр,
ачаран – татуллă,
вĕренме, шкула кайма та
питĕ хапăл тунă.

Тахçанах юлташлă, çывăх,
лайăх пурăнатпăр,
урокра та, тăвайккинче те
тек пĕрле пулатпăр.

Эпĕр, çамрăк икĕ тантăш,
хăвăрт çитĕнетпĕр,
паян камăн мĕнле шухăш
пит аван пĕлетпĕр.

Ирхине шкула каятпăр,
каçпа таврăнатпăр.
Халь кашнин пĕр евĕр паллă –
пиллĕк те тăваттă.

Эпĕр, Мишша тата Павăл,
инçех мар пурнатпăр;
ӳлĕмрен ăçта пулсан та,
юлташлах пулатпăр.

*1949.*

## *КАЧАКА*

Пирĕн качака хушка.
Хушăка вăл хĕсĕннĕ.
Ме-ке-кек! тет качака.
Э-эх! теп, выльăх мĕскĕнĕ!

Ун патне эп пытăм та
ăна туртса кăлартăм,
унтан вăрçма тытăнтăм,
çапла сăмах каларăм:

«Урăх капла юрамасть
купăста пуç кăшлама,
пахча картине хуçма,
çимĕçе сиен тума».

Унтанпа усал хушка
улттă сикрĕ пахчама
пахча картине хуçса
купăста пуç кăшлама.

*1949.*

## *Çырма*

*Çырма юхать кĕрлесе*
*аслă ялăн çумĕпе...*
*К.В.Иванов.*

Пирĕн ялăн çумĕпе
çутăлса юхать çырма.
Çырман ик çыранĕпе –
çӳçе, çирĕк, хурама.

Çырмана шăрăхсенче
ыткăнатпăр савăнса,
пулă пекех темĕнччен
эх чăматпăр ăмăртса.

Çу иртсен, сив хĕл пулсан,
çырма çийĕ çап-çутах.
Эпĕр, конькkисем сырса,
ярăнатпăр савăнсах.

*1950.*

## *КАÇ ПУЛЧĔ*

Хĕрелсе хĕвел ансассăн,
уйăх тухрĕ тӳпене.
Пĕлĕт çăлтăр сапрĕ ячĕ.
Пĕлме çук шутне-йĕрне.

Апат çинĕ. Урок хатĕр.
Тахçанах çывăрмалла.
Салтăн, шăллăм, салтăн хăвăрт, –
ирхине ир тăмалла.

Вĕренме те вĕренетпĕр,
ĕлкĕретпĕр канма та.
Эпирех ӳссе çитетпĕр
чи телейлĕ вăхăта.

*1950–1951.*

## Хытă чирлесен

Кĕркунне те акă çитрĕ.
Хурăн пĕтрĕ çаралса.
Çывăхри раща çаралчĕ,
çулçă пĕтрĕ тăкăнса.

Эп вилсен, мана пытарĕç
варăн сулахай енне,
пуç вĕçне лартса хăварĕç
шурă хурăн хĕресне.

Пытарсанах туссем манĕç,
аса илмĕç ман çинчен.
Аттепе анне çеç йĕрĕç,
йĕрĕç куççуль пĕтиччен.

Эп хам вилĕп, ятăм юлĕ,
усал, ырă тунисем.
Ман çак çырнă сăвă юлĕ,
эп çырнă саспаллисем.

*1950–1951.*

## Хĕлле

Килчĕ çитрĕ, ак, хĕлле
хăйĕн кĕске кунĕпе.
Юрĕ ун тĕлĕнмелле –
хăйĕн шурă тĕсĕпе.

Выльăхсем –
йăш витене.
Ачасем –
çырма хĕрне.

Пăрпа витĕннĕ çырма
куçкĕски пек ялтăрать.
Хĕлле аван уçăлма,
вылямашкăн та кулма;
ярăнмашкăн та юрать.

Конькисем –
çут пăр çине.
Йĕлтĕрсем –
тăвайккине...

*1950–1951.*

4 – 44 849
Национальная библиотека
Чувашской Республики

## *ЮР ÇУСАН*

Лапка-лапка юр çусассăн,
пĕтĕм тавра шап-шурах.
Ачасем, упа тусассăн,
пĕр кулаççĕ ах-ха-хах!

Итлĕр-ха эсир, туссем,
вĕренме те манар мар.
Урамран киле çитсен,
урок тума тытăнар.

*1950.*

## *ШĂЛЛĂМА*

Шăллăм, сыр-ха эс конькки,
эп илем-ха йĕлтĕрне.
Тунсăх маншăн тăвайкки,
пар-ха, шăллăм, йĕлмӳне.

Кайрăмăр-и çухрашмашкăн
тарăн юрлă çырмана.
Эсĕ юлăн ярăнмашкăн
яка пăрлă вырăна.

*1950.*

## *МУЛКАЧ*

Мулкач хура кёркунне
улăштарать кĕрĕкне.
Хир-хир урлă кун каçа
ĕрĕхтерсе вăл каçать.

Курсанах йытта-мĕне,
тăрататъ ик хăлхине,
çил пекех унтан вара
вăрманалла чавтарать.

Хырăм тени хыт выçать,
урлă-пирлĕ чуптарать.
Мулкач сада та пырать,
йывăçсене йалт кăшлать.

Куншăн мучи тарăхать,
сăтăрça вăрçать, юнать,
йĕр çине капкăн лартать.
Сыхла, мулкач, уруна!

*1950.*

## ÇУРКУННЕ

Кунсерен хěвел хěртет,
сивěсене çемçетет,
кěртсене ирěлтерет.
Ăш çил – вěрсе типěтет.

Хура кураксем килеççě.
Часах шăнкăрчсем çитеççě.
Вěсене Санюк кěтет,
лайăх çуртсем хатěрлет.

*1951.*

## ШЫВАРМАНЬ

Килчě çитрě çуркунне
сăртсем тăрне хуратса,
вара атьсем çак кунне
ывăнчěç арман туса.

Пирěн умра çуйхашать
пěр ушкăн ача-пăча.
Пурте, пурте сиккелет.
Хăшě-пěри çапăçать.

Вěсем тунă шывармань
кăлтăртатса çаврăнать.
Епле хўхěм вăл аврать! –
чěререн савăнтарать.

*1951.*

## ЭП ВИЛСЕН

Манăн тус Эрхип кулянĕ,
асăнĕ мĕн виличчен,
ман тăпра çине вăл пырĕ,
сăмах тухĕ чĕринчен.

Ахăрса сĕм тăвăл килĕ,
улĕ çумăр çăвиччен,
çапса çумăрĕ те çăвĕ
варта шывĕ кĕрличчен.

Е хăш чух лăпкă ир пулĕ.
Шăпчăк юрлĕ ирпеле,
варти хурăн çине ларĕ,
юрлĕ вăл куççульпеле.

Пĕтрĕнсе çурхи шыв-шурĕ
юхса выртĕ тахçанччен,
юхнă майăн вăл та йĕрĕ
хăçан шывĕ пĕтиччен.

Хĕлле çил ачийĕ улĕ,
юрлĕ юрă ман çинчен.
Юлташсенĕн такăр çулĕ
питрĕнĕ ир пуличчен.

*1951.*

# Çулла

Çаран çинче курăк ÿсет,
тĕрлĕ тĕслĕ чечекĕ.
Таçтан юрă сасси килет.
Лере юрлать кайăкĕ.

Ыраш халь шăркара ларать,
часах акă саралĕ,
саралсан, комбайн тухать,
вырса та час пĕтерĕ.

Кунран-кунах хĕвел хĕртет.
Çырма шывĕ кăшт чакĕ.
Пĕлĕт килет, ав, çурçĕртен,
кĕçех çумăр та çăвĕ.

Вăрман сип-симĕссĕн курнать,
кĕр енне вăл саралĕ.
Мăй таран курăк пуç таять,
ак часах ним те юлмĕ.

*1951.*

## Ирхине

Кайăксем юрлаççĕ
сулхăн ирхине,
савăнăç кӳреççĕ
йывăç пахчине.

Çавăнпа пуль манăн та
кулă сăн-питре...
Эп те кайăк пулăттăм,
юрлăттăм хитре.

*1952.*

## Çăлкуçĕ

Çĕр айĕнчен тапса тăрать
тăрна куç пек çăлкуçĕ.
Çусассăн, ыррăн уçăлать
çак шывпала пит-куçăм.

Асамлă шыв... Унта вăй-хал
вĕрет пĕр иксĕлмесĕр.
Ун умĕнче тăратăп халь
ывăннине пĕлмесĕр.

*1952.*

## Туляпа Çина

Хĕвел аннă, тĕттĕм пулнă,
шурă тĕтре явăнать.
Именет Туля, çапах та
хăй савнине чуптăвать.

Вĕсем сак çинче лараççĕ,
калаçаççĕ те кулаççĕ.
Хĕр чĕрийĕ савăнать.
Каччăн та хавасланать.

Шурă тĕтре, уçă сывлăш
ял çийĕпе ярăнать.
Хĕпĕртеççĕ икĕ тантăш.
Тем çинчен Çини калать.

Акă иккĕш те тăраççĕ.
Каччă хĕре ăсатать.
Вĕсем хуллен çеç утаççĕ.
Тули татах чуптăвать.

Çутăлать. Тĕтре сайралнă.
Каччă килне таврăнать.
Ĕнтĕ ращара саркайăк
юрă шăратма пуçлать.

*1952.*

## Уйрӑлу

Ял хӗрри. Ҫул такӑр, тӳрӗ.
Каччӑн каймалла инҫе:
«Савнӑ тусӑмҫӑм, ан макӑр», –
тет хӗре вӑл чунӗнчен.

Хӗр салхуллӑ. Шӑлне ҫыртрӗ.
Каччӑ умӗнче тӑрать.
Ыталанчӗҫ те чуптурӗҫ.
Куҫҫуль, куҫҫуль сӑрхӑнать.

Вӑштӑр-вӑштӑр вӗрчӗ ҫилӗ.
Пике аллипе сулать.
Кайрӗ ҫав... Куҫран ҫухалчӗ...
Хӗр чӗри ҫулӑмланать.

*1952.*

# Учитель

Ирех тăтăм эп, тумлантăм.
Тумланиччен пите çурăм.
Хыпкаларăм та уттартăм,
шкулалла ĕнтĕ чуптартăм.

Алăка учитель уçрĕ.
Йăлтăртататать кăвак куçĕ.
Сăнĕ лăпкă, пит кăмăллă.
Хăçан вăрçнă вăл, кăшкăрнă?
Итлеме халаллă, уçă.

Курман эп ун йышшине,
ун пек ыр кăмăллине.
Курнă эпĕ çынсене,
курман кун пеккисене.

*1952.*

## Манăн ĕмĕт

Тулта çил-çапкаланчăк кас-кассăн
кантăк хуппине пырса силлет.
Пушкина каç-каç вуланăçемĕн
сăвă çырас,
сăвă çырас килет.

Эпĕ халĕ çамрăк ача çеç-ха.
Ӳссе çитĕп, пулăп ăслă çын.
Хăшĕсем: ученăй, текелеççĕ.
Итлеместĕп эпĕ. Калĕçин.

Тулта çил-çапкаланчăк кас-кассăн
кантăк хуппине пырса силлет.
Пушкина каç-каç вуланăçемĕн
поэт пулас,
поэт пулас килет.

*1952.*

## Уйăх пытаннă...

Шур юр çăвать. Пăхмашкăн савăк
вăл шăппăн çеç тăкăннине.
Эпир – атьсем – таçта васканăн
хăпаратпăр ту çине.

Ялçум çырман çыранĕ чăнкă.
Уйăх тухсассăн касхине –
сахал ўкетĕн. Тухмасассăн –
чикеленетĕн пуçхĕрлех.

Тăман çăвать. Пытанчĕ уйăх
шур мамăк пĕлĕчĕ хыçне.
Эпир те килелле васкатпăр
юмахçă асанне патне.

*1952.*

## Çĕрле

Лавçи чармарĕ. Йытă сикрĕ
хыçран чупаканни çине.
Хăрушă кĕрешӳ пуçланчĕ.
Кампур тататъ тукмак пырне.

Çуна вĕçет, лаши тарланă...
Çатма пек такăр çулпала
çич çухрăма канмасăр тухнă.
Ак час вăрман хĕрри пулатъ.

Уйăх пăхатъ. Тем чухлĕ çăлтăр.
Хура вăрман хыçра юлатъ.
Авă умра, çут хунар евĕр,
пĕр хăйçути хитрен кулатъ.

*1952.*

# Авăр

Тĕттĕм авăр тĕпĕнче
çăткăн çăрттансем çӳреççĕ.
Çӳллĕ çирĕк умĕнче
çӳçесем çӳçне чӳхеççĕ.

Çирĕк, çĕмĕрт, хурама
авăра йăлт хупăрланă.
Хурăн темшĕн хурланать, –
пĕр-пĕччен сăрта хăпарнă.

Вату лапсăркка çăка
пĕлĕте çити кармашнă.
Ун пекки кунта çуках –
кăнтăрлах çултан аташнă.

Шăллăма калап: «Итле,
авăрта тем чул тухатмăш.
Ун патне ан кай çĕрле –
вутăш ачисем тухаççĕ».

*1953.*

## *Çумăр çăвать*

Чăштăр-чăштăр çумăр çăвать,
çумăр çăвать тупата!
Улми ташлать, çулçи çупать –
сада тухас-ха, сада.

Чăштăр çумăр, сиплĕ çумăр,
çумăрсăр епле ÿсен?
Килĕр пурте. Çунă-çунă
сутăрах пĕр сехетсем.

Садри сукмак – чăпăр-чăпăр!
Ма хăрас çак ăшăра,
тухăр та хăюллăн чупăр,
тухăр, тухăр çаруран.

Çумăр çурĕ, çурĕ, çурĕ.
Тав туса пуç тай ăна.
Кĕр-кĕрлет васан шыв-шурĕ,
çуркунне пек туйăнать.

*1953.*

# *Тулли уйăх*

Савкка йăмри çине пăхатăп.
Ун хыçĕнчен, хĕп-хĕрлĕ, çаврака,
тем пысăкăш пÿске тухать ав.
Элле кайса тытар-ши Çумккапа?

Шет, ытама та кĕмĕ, шутсăр мăнă.
Кĕрсессĕн – пĕçертмест-ши алсене?
Çумкка та асăрханă, тухнă тăнă.
Çук, чухлайман илмешкĕн алсине.

Чупса çитсе вăр-вар! çеç хăпаратпăр.
Йăмри те йăмра мар, ытла аял.
Турачĕ ярăнать, алла тăсма хăратпăр.
Пÿски вара, пÿски... çÿлтен-çÿле каять.

*1953.*

## ЧЕЕ ЫРАШПĂТРИ

Ырашпăтри тытаççĕ
Аркашпа Мĕтри.
Атьсем – чее.
Чее – ырашпăтри.

Пулла хыт улталасшăн
шыври ик-виç вăлта:
вăлтасшăн, пит вăлтасшăн.
Ырашпăтри – вăлтать.

Хывать те ăманне,
хыпмасть çав вăлтине.
Килни те ахалех-мĕн
мăн Çарăмсан çине.

Шыв çийĕн хĕвелте
çара вăлта – йăл-ял!
Кӳлленчĕк мар иккен вăл
çак Çарăмсан, ай-яй.

Шӳпке тытасчĕ сирĕн,
Аркашпала Мĕтри.
Çăрттан, çăрттан тытасчĕ:
мĕскер – ырашпăтри!

*1953.*

## КУШАК АÇИ

– Тытăр-ха çав шуйттана –
çинĕ янă шăрттана!
Тытăр-ха! – тесе анне
шырать кушак аçине.
Кушак аçи тăмпуç мар,
тăмпуç пулма тивĕç мар:
«Тытăр, тытăр!» – тенĕрен
тухрĕ тарчĕ тĕнĕрен.

Эп юратап «шуйттана».
Çапла суйрăм аннене:
– Кушак тивмен шăрттана,
тытсассăн та ан хĕне.
– Кушак мар-тăк татăка
хăвах çисе янă эс!
Юри тартрăн кушака,
апла халь сана хĕнес!

Анне çапла тенĕрен
тухрăм тартăм тĕнĕрен.

*1953.*

## Паттăр

«Пăрăн!» – терĕ.
Епле паттăр, айторах!
«Çĕмĕреп!» – тет,
ах, чăнах та, çĕмĕрет.
«Халь мар», – терĕ,
тепринче тет. Кайтăрах.
Тепринче те: «Халь мар», – терĕ...
Чĕмере.

*1953.*

## Çавра çил

Чимĕр! Çил хускалчĕ,
тусана тустарчĕ,
ак чупса пырса çĕклет
ват хуралçă çĕлĕкне.

Тăкăрлăкри вĕренешĕн
ун çилли пулмарĕ темшĕн.
Калитке умне çитсен,
çапрĕ-çке ташша сиксех...

Çил хире тухса кайсассăн,
ял шăпланчĕ.
Пĕтрĕ сасă.

*1953.*

## КУККУК САССИЛЛĔ ВĂХĂТСЕМ

Асту-ха, тусăм, иккĕн марччĕ,
асту та урăх ан тавлаш,
çÿреттĕмĕр эпир виç тантăш.
Куккук – тăваттăмĕш юлташ.

Чăн юлташах ĕнтĕ, мĕн калăн.
Шутлаттăмăр эпир çула.
Тата мĕн чухлĕ чăмнă, сикнĕ
таса та кăн-кăвак шыва!

Асту-ха, тусăм, туслăха
сутса кам пăрăнчĕ пиртен?
Вут пек чĕремçĕм, юнăмçăм,
мĕн курмăн эсĕ ĕмĕрте.

*1953.*

## *Пĕлĕтсем*

Шур пĕлĕт куписем юхаççĕ
тархасласа та чарăнми.
Вăхăчĕпе çитсе тухаççĕ
кăвак тӳпе те палăрми.

Вĕсен çулне йĕрлетĕп эпĕ
куç йăмăхса ыратиччен,
хавaслăх, пурăнăç тĕрекĕ
пĕр çухалса таврăниччен.

Ачалăхра ача пулмасăр
ӳсни килмест-ши йывăра?
Халех çапла салху кулсассăн,
кайран мĕн курăп-ши вара?

Уйран тин кайрĕ-ха акаçă,
тин тĕвĕленчĕ панулми...
Шур пĕлĕт куписем тухаççĕ
кăвак тӳпе те палăрми.

Тахçан-и-ха вăрман ем-ешĕл
тум тăхăнчĕ, туйса ăшша.
Ытах ан хуйхăр çул иртнишĕн,
пĕртен-пĕр тусăм Кĕришша.
Çук, вĕренер-ха тăрăшса.

*1954.*

# ÇУРХИ КАÇ ВĂРМАНТА

Вăрман уçланки...
Çутă уйăх вĕçĕ-хĕррисĕр кăн-кăвак океана
шуса тухнă.
Унăн пайăркисем çурхи çĕнĕ тумлă
вăрманăн уçланкине янк çутатаççĕ!
Шурă çĕмĕрт каçхине те кĕмĕл тĕслех
курăнса ларать.
Сывлăш уçă.
Уçланкă чечекĕсем çинче пĕрчĕн-пĕрчĕн
сывлăм тумламĕсем йăлтăртатаççĕ.
Вăрманăн ырă юрăçи çемçе, тӳлек юррине
шăрататать.
Вăл – саркайăк.
Çакна тăнласа е пăхса тăракан кашнинчех
ăшшăн йăл кулĕ.
Ырă кăмăл, ырă ĕмĕт пулĕ унăн.
Чĕринче йывăр, хурланчăк шухăшсем
капланса тăнă пулсан, çурхи вăрманăн
ырăлăхĕпе тӳлеклĕхĕ вăл шухăшсене сирсе
ярĕç.
Нумай вăхăта пулмин те, пĕр вăхăта...

*1954, январь.*

## КАÇХИНЕ

Ваштăр вĕрчĕ çурхи çилĕ
уйăх тухнă чух.
Ваштăр вĕрчĕ те лăпланчĕ,
таçта кайрĕ – çук...

Улăхра хĕрсем тăсаççĕ
ик хитре саспа
çуркунне çинчен ыр юрă
тулли кăмăлпа.

Йывăççем тăраççĕ шăппăн –
чĕмсĕр мĕлкесем.
Сывлăм шăрçисем ялтраççĕ –
ахах пĕрчисем.

Çĕмĕртсем çеçкине çурнă,
çĕмĕртсем – лаштра.
Вĕсене те курчĕ уйăх,
курчĕ аякран.

*1954, январь.*

## Шухăшласа кăларнă тинĕс

Шурă-шурă чарлансем анаççĕ,
явăнаççĕ тинĕс çиййĕпе.
Хумсем темĕн каласа чупаççĕ.
Тинĕс тулнă ырă кĕвĕпе.

Аслă тинĕс хумĕсем умрах-çке!
Ярăнаççĕ уç çил вĕрнипе.
Пĕртен-пĕр йăпанăвăм та çак-çке:
сăвăлатăп тинĕс кĕввипе.

*1954, январь.*

## Юрату юрри

Епле ырă, тӳлек те хаваслă
çакă çут тĕнчере пурăнма.
Юрату юрри хĕрӳ, хăватлă,
пуçласассăн йывăр чарăнма.

Çунакан чĕре çинчен юрлатăн,
савăнăçпа тулнă çамрăклăх çинчен,
иртсе кайнисене асăнатăн,
пуласси пирки хыпса çунатăн,
шухăшлатăн куççуль тухиччен...

*1954, январь.*

# Тăвăл

Мария! Нумай ан мухтанăр,
пысăка ан хурăр хăвăра ялан,
йӳç сăмахпа мана ан хурлантарăр.
Нимех те мар... Манпа халь –
Немо капитан.

Тӳпере çумăр пĕлĕчĕсем чупаççĕ.
Ялтра çиçĕм çĕр çурса каять.
Улăп-йывăççем çĕр çумне тайăлаççĕ.
Урса кайнă тăвăл ахăрать.

Тинĕс, тинĕс... хăруш та хăватлă.
Хумсене халь ним те чараймасть.
Тинĕс тăхлан пек, тинĕс усал чунлă,
çапах Немо тăвăла парăнмасть.

Хурлану вăрман кĕрлевĕ пек капланчĕ,
хупăрларĕ аçтахха-тинĕс пек.
Мана Немо капитан лăплантарчĕ.
Хурланмастăп ĕнтĕ эпĕ тек!

*1954, январь.*

* * *

*Шавлать, кашлать сём вăрман...*

Ан шавла, вăрман, мĕн-ма шавлатăн?
Шухăшлакана ан чăрмантар.
Çук, шавлатăн эсĕ, чарăнмастăн.
Вăрманта тискер, вăрман варри хаяр.

Ах, шавлах эппин, хускал, хăрат эс,
шухăшлакана чăрмантарах.
Пĕр хумхан, чун тинĕсĕ, хăватлăн.
Ма чарас, кĕрлетĕр тăвăл хытăрах...

*1954, январь.*

* * *

Эс камччĕ çак, эс – юрăсти?
Элле поэт-и пĕр енчен?
Мухтавлă, чаплă пуринчен?
Е эс пит ирсĕр йăпăлти?

Веç йăнăш ку! тесе ан тулхăр,
мухтан юхха савнисемпе.
Çĕмреп! Хĕнеп! тесе ан çухăр
патрак та ирсĕр чĕлхӳпе.

Мĕн ĕмĕр сан шăршу упраннă.
Нихçан пĕтмеççĕ ирсĕрсем.
Эс çеç ал çĕклеме пултарнă
талант çине... пăспа хĕрсе.

*1954, март.*

* *
*

Мана макăртма шухăшларăн
юрату çисçнĕ вăхăтра.
Кала, кала-ха, мĕн павраpăн? –
хуть сассăм янрĕ сăвăра.

Ку – мăшкăл. Ку йĕрсем час каймĕç.
Ытла та хурлăхлă вĕсем.
Хаяр кулăллă çав йĕрсем
тĕтре пек сирĕлсе саланмĕç.

*1954, март.*

* *
*

Эсĕ вĕçĕмсĕр хурлăхраччĕ.
Çилĕллĕн усаттăн эс пуçна.
Ун чухне кăмăлу аванрахчĕ, –
темĕн те шанаттăнччĕ мана.

Вăл вăхăт ĕнтĕ халь инçе,
халь хурлăх тăвĕ – ман çинче.

Анчах та çав таса тăва
хура пылчăкпала варлаймăн,
тискер элек айне тăваймăн,
хуплаймăн ман юратăва!

*1954, март.*

## *Экзаменсем*

Çурхи кунсемпе килсе çитрĕç
экзамен тытмалли кунсем.
Никам хăраса хумханмарĕ.
Пурте – çирĕп пĕлӳллĕскерсем.

Ăнлантарнă чух тăнлăн итленĕ,
дисциплинăллă пулнă вĕсем,
хăйсемех кружоксем йĕркеленĕ,
унта тунă ялан сăнавсем.

Çирĕп сывлăх вĕренмешкĕн кирлĕ.
Чупнă, сикнĕ... пачах ӳркенмен, –
пул хастарлă, хăюллă, кĕрнеклĕ,
хурçă пекех пиçсе тĕреклен.

Çут хĕвел хытăрах ăшăтать ав,
тăрăшать çĕн вăйпа йăл кулма,
хастар чĕрене вăй хушать вăл,
вăй хушать вăл экзамен тытма.

*1954.*

## Этюд

Сывлăм тăрăх çарран
эп тухатăп çула.
Уйăх çутинче хыçăмран
курăк çине йĕр юлать.

Шăппăн анатăп çулпа
аната, çырмана.
Ĕнтĕ, ак, каçмапа чупап
çаплипех, çарранах.

Варрине çитеспе чарăнса,
йĕм пĕççи тавăрма пĕшкĕнетĕп.
Урана каçмаран усса,
лĕп шыва пăлхатап, сирпĕтетĕп.

Шыв сирпĕнет – ахах, мерчен.
Уйăх çути – чалтăркка.
Ларăттăм çапла ирччен,
вĕçĕттĕм шухăшпа аякка.

*1954.*

## *ПĔЧЧЕН ЙĂМРА*

Ах, йăмра... шыв ҫине
эс пăхан кунĕн-ҫĕрĕн.
Кам ÿкерчĕ ĕнер каҫхине
шыв тĕпне кĕмĕл ҫĕрĕ?

Кĕмĕл ҫĕрĕ унта
нумайччен йăлтăртатрĕ.
Эп шырарăм чунтан.
Ĕмĕте юшкăн татрĕ.

Юшкăн татрĕ умри ĕмĕте.
Шăплăхра темле сас ахăлтатрĕ...
Хĕрринчех ҫакăн чул йĕпетет,
шаларах – тĕпсĕр-тĕр, сакăлта-тăр.

Эп кĕместĕп хура авăра,
сиккипе вĕҫтереп ялалла.
Эс каймастăн килне, эс юлан,
ват йăмра...

*1954.*

## Ёне ҫитерме

Каҫ пулттипе, Кĕркури,
айта ёне ҫитерме.
Пырăп терĕ Кĕтерне.
Пытăр эппин. Пытăр-и?

Ытти хĕрачасем пек,
пирĕнтен вăл ютшăнмасть.
Хамăрла вăл пĕтĕмпех –
курнăҫланмасть, аптратмасть.

Ашшĕпе те мухтанмасть,
амăшпе те мухтанмасть,
юлашки чĕл ҫăкăрне
ҫурмалла тума хавас.

Айта ёне ҫитерме,
кĕл улмиййĕ пĕҫерме,
савăк юрă итлеме.
Эх, юрлать те Кĕтерне!

*1954.*

# Тĕтре

Пĕве çинчи çăра тĕтре
нихçан та сирĕлмĕ тетре:
чупса анмастăр вăштăр-ваштăр –
пŷртрен пуçа та кăлармастăр.

Шухăшăмра сире чĕнсе,
пĕччен тăрап çыран çинче.
Ирхи тĕтре çаплах çăра.
Хампа эп хам – калаçура.

Сăвăласа эп калаçатăп.
Чупса килменшĕн вăштăр-ваштăр,
пŷртрен пуçа та кăларманшăн
сире, туссем, эп каçаратăп.

Тен, тĕлĕнетĕр ятлаçса?
Çук, чарăнăр, çитет кулса.
Чĕрешĕн тунсăх сехетре
элле тĕтре хĕвел тетре?

*1954.*

## *Хур чĕппи*

Шимп-шимп чухнех хуса çӳреттĕм
сире ялан çырма хĕрне.
Утатăр сывă, ретĕн-ретĕн, –
анчах мĕн пулчĕ-ха пĕрне?
Сасси çинçе, çуначĕ усăк,
ларать вăл пахчара пĕччен.
Çисем, ак çăкăр, шыв ĕç, тусăм,
тен, ешĕл курăк астивен?
Апап тесе калан йăвашшăн –
апап пуль çав, апап пуль çав.
Мĕскер тăвам-ши сыватасшăн? –
пĕлменлĕх кăмăла хуçать.

*1954.*

## *Икĕ селĕп*

Икĕ селĕп – ик шăхличĕ –
тупнă тем савăнмалли.
Пусмапа пĕри хăпарнă,
хăвăл ăшĕнче алли.

Эх, пуплеççĕ икĕ тус:
– Михаха, теп, Михаха,
çеçи чĕппи иçе па-ха-ха.
– Çеçи чĕппи çаха-ха...

*1954.*

## Йӑмӑк

Вĕр-çĕнĕ тумĕ йӑмӑх ун,
çипуçĕ тап-таса.
Çӳрет ман пĕчĕк йӑмӑкӑм
тӑваттӑмĕш класа.

Паян çут кулӑ, савӑнăç
ача сӑн-питĕнче:
паян шкула хыт савнӑшӑн
ырларĕç класĕнче.

Чӑнах та, тӑрӑшуллӑ çав
ĕçре, вĕренӳре.
Маттур та ӑслӑ пулнӑшӑн
çĕршыв ырлать пире.

Вĕр-çĕнĕ тумĕ йӑмӑх ун,
çипуçĕ тап-таса.
Çӳрет ман пĕчĕк йӑмӑкӑм
тӑваттӑмĕш класа.

*1954.*

# Ёнесем

Ёнесем тухаççĕ, авă,
кĕтÿпе уй хапхинчен.
Пăрахут сассин янравĕ
илтĕнет мĕкĕрнинче.

Çур пине те яхăн пур-тăр.
Сахал мар ку халлĕхе.
Пăлан пек патвар, çап-çутă,
хÿрисем – çĕре лекет.

Курăнаççĕ пит маттуррăн
аслă улăх хăнисем.
Çиллисем таса та шурă –
çуллă сĕт хутаççисем.

Куç тулли нумай ёнешĕн
чунăм хытă савăнать.
Эх, пĕлесчĕ, хăшсене-ши
Кĕтерук аппа сăвать?

*1954.*

## Йĕтем çинче

Зернопульт – йĕтем фонтанĕ –
вĕççĕр «çумăр çутарать».
Ылтăн! Ылтăн! тетĕп эпĕ
сарăлса выртан тырра.

Транспортер-кĕпер пит хăвăрт
ăсатать машшинсене.
Тасатан-типĕтекенĕн
васкама текех тивет.

Йăлтăр-ялтăр электрица
хуса ячĕ тĕттĕме.
Нимле çумăр йĕпетеймĕ
шифер витнĕ йĕтеме.

Эй, юлташ, ĕçлер-ха харсăр,
пулăшма хастарлăх пур.
Пултаратпăр, тăрăшатпăр...
Савăнса кулать аппу.

*1954.*

## Çул çинче

Моторта вăрманăн
сасси илтĕнет.
Мотоцикл ларнă
Кĕркури çине.

Кĕркурийĕ çĕнĕ,
çил пек ыткăнать.
Мотоцикл темĕн
чăл-чал пăхкалать.

Куçĕсем, ак, тухрĕç
пĕр кĕпер умне.
Кĕркури пуç ухрĕ
тур лаша енне.

Тилхепийĕ тытнă
Сăрнай Ванине.
Сăрнай Вани хыттăн
текех кĕçенет.

*1954.*

## Çул çинчен

Кĕрхи хум-хумлă тӳпере
хĕвел кулать вĕт çумăр витĕр.
Чуста пек пылчăка, пĕрех,
çăрса утап, хам ырнă питĕ.

Çич çухрăм юлчĕ хыçала.
Чипер юл, станци, «Шуçчумăнĕ».
Çитсе пыратăп ялалла.
Умма кĕç тухрĕ çил арманĕ.

Тем чухлĕн шурă хурĕсем
ял вĕçĕнчи кӳлле иленнĕ.
Чуспа пĕркеннĕ çĕн пӳртсем
шуса тухаççĕ пит илемлĕн.

Килте – мунча пăс кăларать,
хăна чĕнме сĕтел те витнĕ,
тăван килйыш кĕтсе тăрать,
анне кулать куççулĕ витĕр.

*1954.*

## Малтанхи юр

Ир-ирех юр ҫурӗ, ҫурӗ,
таврана шап-шурӑ турӗ.
Чарӑнман-ха халӗ те.
Каҫсӑр чарӑнмасть те пулӗ.

Кӑмӑл юр пекех ҫуталчӗ.
Юр чӗнет, юр илӗртет.
Паянах тухса чупасчӗ
йӑлтӑр-ялтӑр йӗлтӗрпе.

Йӗрӗм ӳкӗ тӳрӗ-тӳрӗ.
Уй сӑн-пичӗ шурӑ-шурӑ.
Йӗр хупланӗ юр айне,
хуплансан та кӑмӑл тулӗ.

Пурҫӑн тетчӗ ял урамӗ
ешӗл хурӑн кӑтрине, –
хӗлӗпех асра упранӗ,
юр хуплаймӗ асрине.

*1954.*

## ХАВАСЛĂ ПЕРЕМЕНА

Епле кăна урокĕ пĕтрĕ, –
шăлт-шалт! та кĕррĕс! турĕ алăк,
кисренчĕ мĕскĕн, чĕриклетрĕ.
Унтан-и, куртăмăр мĕн акă:

тăр-тăр! чĕтрет умри шыв бакĕ;
лере тата мĕскер амакĕ?
Коридорта пуш витресем
лараççĕ хытă силленсе.

Федотов, манăн çывăх тусăм,
çĕн йышши бокс вĕрентет,
ĕнсе чиккинчен лектерет,
хĕсет чӳрече çумне пусăм:
Трофимов хыттăн ахлатать,
чĕлхине тăснă, сывлаймасть.

Шкулти хаваслă перемена!
Аннеçĕм шкул, каçар пире.
Ывăлусем çине кӳренмĕн,
чунтан ыйтатпăр: ан кӳрен.

Пуçтахланни те пулчĕ пулĕ,
юлхавланни те пулчĕ пуль.
Кăçал юлашки çул, ял шкулĕ,
эпир кунта, юлашки çул...

*1955, апрель.*

# Ашкăнчăксен юрри

Эс каçар пире, директор,
хаклă Елисей Мурзич,
ир-çке касакра çӳретпĕр,
кĕнĕ мар-и хĕр шăрши.

Эс каçар татах, директор,
пултарсассăн каçарма,
çăпата ахаль çĕтетпĕр –
вĕренетпĕр уçă мар.

Ан ятла пире, директор,
пирĕнсĕр шкулта кичем.
Шкул сăнне илем кӳретпĕр
эпĕр – савăк ачасем.

*1955.*

## Çурхи фантази

Ман умран вĕçсе иртеççĕ
шурă-шурă акăшсем,
питĕме тивсе лăпкаççĕ
çунатпа варкăшнисем.

Аллăма тăсатăп эпĕ:
парăрсам пĕр тĕкĕре.
Тăкăнать тĕнче илемĕ –
сарă уйăх – тӳперен.

Акăшсем вĕçсе иртеççĕ,
пăрахмаççĕ шур тĕкне.
Кăмăлăм çаплах туймасть-ха
акăшпа юр пĕрехне.

Эс каларăн: «Çилĕ ăшă,
çӳçенетĕп эп çапах».
Эпĕ хирĕç йăл кулатăп,
йăпшăнатăп çумнарах.

*1955.*

## КАЧЧĂСЕМ

Кулать, макрать, сывлать тĕнче!
Сасартăк мăкăртатрĕç, ак,
хаваслă ăшă çил çинче
темле сассем. Мĕнле амак
çур каçĕн тĕттĕмлĕхĕнче?

Палларăм: Коля – çырă çӳç;
Лява; вăл купăсçă, илемлĕ.
Унтах пулас тата Çеруш –
аван ача, маттур, тирпейлĕ.
Пурте пĕрле – «çап-çамрăк пуç».

Çӳреççĕ мар-и каçсерен
çурхи урам тăрăх иртсе
чунра тӳлеклĕх çĕтнĕрен.
Ĕнтĕркесе те йĕпенсе
çӳреççĕ мар-и каçсерен.

Курсан сăмах хушатчĕç-ха,
шкулта-мĕнре асăрхасан.
Халь хăпартланнă. Юрĕ. Халь
ан хушчăр. Кăшт тунсăхласан,
пурĕпĕрех юмахлĕç-ха.

*1955, апрель.*

# Çур касĕн ыр тĕттĕмлĕхĕ

Çур касĕн ыр тĕттĕмлĕхĕ
тăрать ĕнтĕ нумайранпа.
Çын сасси çук, тавра шăпах.
Хуллен, пăртакçă, хăратать
çур касĕн ыр тĕттĕмлĕхĕ.

Лутра кăна çатан карта...
Лява сиксе касать вĕлт! çеç.
Хура куççем йăл-ял! çиçеç.
Тата карта курнать малта –
Лява сиксе касать вĕлт! çеç.

Эпир – тăваттăн-пиллĕкĕн.
Епле хÿхĕм çамрăк пуççем!
Çатан карти – Тамуççасен.
Хастарлăхпа тулнă çынсем –
эпир тăваттăн-пиллĕкĕн.

– Ĕнтĕркетĕн-им çĕрĕпе?
Тепĕр тесессĕн, мĕн ĕç пур.
Çурхи илемĕн кĕввипе
юрату чĕртĕр...
– Эсĕр ма
ĕнтĕркеместĕр çĕрĕпе?

*1955, апрель.*

## Урамра

Каç. Ирĕк çил улать, улать
çуртсем çийĕпеле иртсе.
Пĕр шăхăрса та пĕр йĕрсе,
у-у, каш-кашшăн! кашласа,
алхаснă çил улать, улать.

Шывпа кӳлленнĕ урамра
тăраççĕ иккĕн типĕре –
пăлханакан тĕттĕмлĕхре.
Епле хитре иккен тăма
шывпа кӳлленнĕ урамра!

Çӳçпуç чарусăр варкăшать.
Сисетĕп: каччă чун-чĕри
нихçанхинчен паян вĕри.
Çур касĕн чăрсăр çилĕпе
çӳç хĕрачин те варкăшать.

*1955, апрель.*

## АН ВАСКА

1.

Йăлтах куратăп: çиллентерĕ
çыру. Пуçларăм, ак, çырма.
Халь эп пĕлетĕп: санăн ирĕк –
мана темтепĕр калама.

Шăпам çинчен шутлас килмерĕ,
нумай лармарăм шутласа,
тултартăм пĕр листа çырса,
васкарăм, чарăна пĕлмерĕм.

Лăпланнă, чарăннă пулсассăн,
санра кăшт шанчăк та туйсассăн,
вăтанăç-именĕвĕме
пултараймастăнччĕ пĕлме.

Венера – юрату турри –
йĕмешкĕн пуçласассăнах,
хăватлă юрату юрри
тапрантăр хытă-хытăрах.

Эс çăмăлах ăнланаканччĕ
ахаль чĕнмен сăмахсене,
çĕкленнĕ чунăн çулăмне
сумлаттăнччĕ. Епле аванччĕ.

Çыратăп та чĕрсе тăкатăп,
пуш-пушă сăмах çеç тесе;
листа хыççăн листа çуратăп,
чипер çырайманне пĕлсе.

Ачалăх, яшлăх çыхăнтарчĕ.
Мĕн усалли çак туслăхра?
Сана çак сăвă тарăхтарчĕ,
мана лăпкарĕ шăплăхра.

Юрату вутлă хĕç пек çиçĕм,
юрату вутлă ураган.
Мана унран пĕр хура вилĕм
пултарĕ уйăрма, ăнлан.

2.

Чăнах калатăп, тусăм Маша,
сана курсан, чунри хăват
сăвăлама хушать. Эс маншăн
чипер те ырă çывăх ят.

Мишша пуçтах, Мишша хатарлă
тесе те шутлĕ хăшпĕри.
Чăн та ухмах-ши? Мĕн аташнă?
Анчах – мĕн тăвăн? Юн вĕри!

Çулăмланса çунса çыратăп
юлташ тесе эп сан пата,
хавхаланса сывлăх сунатăп,
хĕрӳн яратăп салам та.

Эп пуррине ялан туйса тăр,
халех вилместĕп-ха, васка.
Хурав çырма, епле пулсан та,
тăрăшса пăх та, ан васка.

*1955, апрель.*

## Асăнмалăх

Епле асран тухми хаваслăх
кĕске те ырă вăхăтра...
Каять, шуса иртет ачалăх.
Çĕн палламан кунсем умра.

Илемсĕр сăввăмшăн каçарăр,
текех ан хăрăр та манран.
Эпир ытла та çамрăкран
ку пулчĕ пуль? Çук, тек ан хăрăр.

Пĕр пăлханмасăр тытса вулăр
ыр кăмăллă çын пулнăран.
Асăнмалли пекки çак юлтăр
пĕрле вĕреннĕ юлташран.

*1955, апрель.*

## Мал енче

Мал енне пăхрăм-пăхрăм та –
ик кĕлетке... çумлах иккен.
Йăмра хыçне пытантăм та,
кĕтетĕп эп. Чăнах иккĕн,
лайăхрах пăхрăм-пăхрăм та.

Ак – кӳл. Чарăнчĕç çакăнта.
Хамăн çывăх тус-юлташпа
класри хĕрех. Тĕксĕм шыв та
çуталчĕ шурă уйăхпа.
Ак – кӳл. Чарăнчĕç çакăнта.

Кӳлĕ хĕрнех сукмак анать,
çемçе курăклă пĕр сукмак.
Марье пырать, чечек татать,
вара сирень çеçки хуçать.
Сукмак кӳлĕ хĕрнех анать.

Каллĕ-маллĕ, сукмак тăрăх
кайрĕç темиçе хут иртсе.
Пĕр уйăх, уйăх çеç тăлăх,
унтан – эпĕ. Кайрĕç иртсе
каллĕ-маллĕ, сукмак тăрăх.

Шыв çийĕн уйăх çутатать.
Пăхса тăратăп эп нумай.
Саркайăк юрă шăратать.
Çӳл тӳперен пĕрмай-пĕрмай
шыв çийĕн уйăх çутатать...

*1955, апрель.*

## САВНĂ ТУС

Ассăн сывлать вăл, хуйхăрать.
Пĕр йĕркине пуçлать те кăшт
кĕç чарăнать, çĕнрен пуçлать.
Çӳçне вăшт! ывăтать те, хăш!
сывлать каллех вăл, хуйхăрать:

«Ĕлĕксенче нумай сăнанă,
аванччĕ сирĕн кăмăлăр.
Халь ма çиллентĕр-ши? Хурланă
телейсĕр çын эп... Çăмăллăн
хама калаймăп «пуç ан ус».

Мана пăрахнă савнă тус,
урăххине юратнă вăл, –
çапла шутлать ман шухă пуç.
Телейлĕ пул та, ятлă пул,
тусна пăрахнă савнă тус...»

*1955, апрель.*

## Çывăр, шăллăм

Çывăр, шăллăм, паппа ту.
Эпĕр çиччĕн пĕртăван,
çичĕ ывăл, çич тăван.
Çывăр, шăллăм, паппа ту.

Кунĕпех ĕçлет анне:
уй-хире те ĕлкĕрет.
кил-çурта та ĕлкĕрет.
Кун каçа ырать анне.

Вăл пире пит юрататъ.
Алăра миçе пӳрне,
ыратать – çырт хуть хăшне.
Эс – качи, хыт «ыратан».

Çывăр, шăллăм, çывăрсам.
Ентĕ тĕлĕрет анне,
тĕлĕкпе кулать анне.
Çывăр, шăллăм, çывăрсам.

Çырма леш енчи хирте
хускатса, ав, шăплăха,
çĕрĕпе тăвать суха
тимĕр лашипе атте.

Вăл та хытă юратать
хăйĕн çичĕ ывăлне.
Сана, шăллăм, Кĕçтукне,
хытăрах вăл юратать,
шăпăртрах пулма хушать,
кантăр, тет, аньни кăштах...

Шăллăм, пысăк уйăх та
сана çывăрма хушать.

*1955.*

## ЭСĔ ПУР ЧУХ

Эсĕ пур чух, йăш çунтармăш савниçĕм,
купăс-баянăм ачашшăн юрлать.
Эс пуртанах эп ĕçре те вут-çиçĕм,
эс юратни çутатать кунçула.

Кăмăл аван пĕрмаях, йăсăм урă,
уçă чунпа калаçап çынсемпе.
Çак сăввăма та эп саншăнах çутрăм
яш чĕрере амаланнă хĕмпе.

*1955.*

## Тăвăлсем

Шторм? Тен, тамăк кĕрлесе тăрать?
Шторм. Хумсем çӳл палуба таран.
Тăхăр баллă тăвăл çĕкленсен,
карапсем тăмаççĕ бухтăра,
карапсем тухаççĕ тинĕсе.

Çăлнăç – ирĕк уçлăхра кăна:
çапăнмастăн чул сăртсем çумне,
хăрамастăн вилĕмрен, кулан,
парăнмастăн эс ăна, çĕнен.

Шторм... Анчах та вăйлă тăвăлсем
тинĕсре кăна-и çут тĕнчен?!
Пур таçта та, тĕрлĕ йышшисем.
Этемсен хаяр чĕрисенче
капланаççĕ вутлă тăвăлсем.
Вутлисем хăрушă пуринчен.

Ĕççынни! Хăрушлăх çук чухнех
эсĕ пĕл ăна çĕнессине.
Унсăрăн – ватаймăн тăшмана.
Пурăнăç – кĕрешӳре кăна.

Тĕп пулать – кам хӳтлĕхе тарать.
Ахаль мар пуль, тăвăл кĕрлесен,
карапсем тăмаççĕ бухтăра,
карапсем тухаççĕ... тинĕсе.

*1955.*

## ВĔÇЕВÇĔ ГОЛЛАНДЕЦ

*Баллада*

Эп – Вĕçевçĕ Голландец, хаяр капитан;
хум касать, урнă пек ыткăнать манăн
бриг;
варкăшать анлă плащ, хăлхара – çил
юрри;
нихăçан пусăрăнми хуйхă – яш кăкăрта.

Тухатланă мана. Эп пин çул тинĕсре.
Çырансем, бухтăсем, гавăньсем маншăн
мар.
Тухнă эп пăчăхма, выçăхма та шăнма;
вилĕмçуклăх салхун палăрать сăн-питре.

Эп çитсе чарăнатăп – çанталăк йĕрет,
шăхăрать те улать, кисренет те чĕтрет.
Эп кĕретĕп – хăпать пĕтĕм çыннăн сехре.
Эп усал-тĕселтен хăрушрах пур çĕрте.

Ăнланми вăрттăнлăх бриг çинчи
матроссен.
Çурăлас пек хивре карăннă парăссем.
Эй, ылханлă шăпа, вĕçĕмсĕр тинĕссем!
Эй, унта путса пĕтнĕ карап мĕлкисем!

... Шултăрканă. Кивелнĕ. Мĕскер вăл
шырать?
Мĕншĕн халь те карапăм путмасть?
Ту пекех çÿллĕ хумлă тăварлă шывра
хама хам путармашкăн епле май тупас?

*1956.*

## Шух çил улать

Шух çил улать, шилет, макрать.
Яш çеç ача çулпа пырать.

Çилсем усал çав çур килсен.
Чуна касать сасси çилсен.

Улатăр çил. Инçе-ха кил.
Кĕскелтĕр çул, юрлар эппин.

Хаваслине, мухтавлине,
салхуллине, хуйхăллине:

«Шăпамçăм ман, çут çăлтăр ман,
мĕн-ма хальччен эс йăнăçман?»

Кулса ярать... Çил çеç улать...
Çав яш ача вăл эп пулать.

«Çĕршыв илемлĕ, сарлака.
Хăçан-ши кайăп салтака?»

Шух çил улать, йĕрет, макрать.
Яш çеç ача юрлать, юрлать...

*1956, март.*

## Ыраш пусси

Хум хăвалать ыраш пусси.
Вĕçĕ-хĕррисĕр симĕс тинĕс
тăрасшăн мар ирпе те тикĕс.
Тăпах тăрсан мĕскер пур-ши?

Ыраш ларасшăн шăркана.
Тен, çавăнпа вăл пăлханать-тĕр.
Хумсем куçа та, хăлхана та
хуплаççĕ тунсăхпа кăна.

Çак пĕтĕм тинĕс – тунсăх, тунсăх.
Анчах çав тунсăх мĕскертен?
Ма юлтăм эпĕ лăпкă кунсăр
вунпиллĕкри яш ĕмĕрте?

Инçет йăсăрланать кăваккăн.
Кĕреп сукмак çине кĕçех.
Сукмакĕ ансăр, кукăр-макăр,
кашни кукрийĕ – шур чечек.

Пĕр ывăç туллиех татам-и,
çумне хушам утмăлтурат.
Класра ыр хĕрача пур – Таня, –
çитсессĕнех чечек парап.

*1956.*

## ПУЛĂÇ

Ĕнер мар, виçĕмкун
экзаменĕ çăмăл ун
пулнă.
Тепри те çăмăлран
вăл тытать çырмара
пулă.
Халиччен çÿресе
пĕрехмай шапасем
лекнĕ.
Пулли вĕтĕрех,
атми çĕтĕкрех,
тет-мĕн.

*1956.*

## ЮМОРЕСКА

Чĕнтерчĕçĕ хăлхасăра правленине.
Калаççĕ: «Ма, Петров, чармастăн ĕнÿне?»
Шалт тĕлĕнет Петров тени:
– Мĕн йĕннине? Мĕскер йĕнни?
– «Йĕннине» мар, ĕне, ĕне!
Петров пушшех те кÿренет:
– Çук, çук, ав ыйтăр хĕрĕмрен,
ухмах-и арăм хĕнеме.

*1956.*

# Ҫумăр

Ҫăвать ăш ҫумăр тĕттĕмре.
Тăратăп пӳрт кĕтессинче.
Тавралăх лăпкăн тĕлĕрет
чăштăртату асамĕнче.

Такам ларать пекех лере
шухăшласа, анасласа.
Мансан-мансан, темре пĕрре,
илет пек ассăн сывласа.

Ку – кӳршĕ пахчара ҫӳҫенчĕк
шур хурăн лăстăр! силленет.
Ман ҫӳҫ те, ҫурăм та йĕпенчĕ.
Чармасть-ха август ҫумăрне.

Ытла та шăпăрт ял урамĕ...
Туятăп пĕтĕм ӳт-пӳпе –
гитарăн ăнсăртран вăраннă
аккорчĕсем янраҫҫĕ пек.

Урамăн шăплăхне вулатăп
тăватă, пилĕк, улт сехет.
Чун каннипе, лăштах пулатăп.
Ҫăвать ăш ҫумăр ҫĕрĕпех.

*1956.*

## ТАМАРА

Тамара вунултта çеç кайнă.
Тамара ырă та чипер.
Ăна курсан, атьсем аптранăн
тăраççĕ – унăн куллипе.

Тата куçĕсенчен хăраççĕ.
Çут çăлтăр унăн куçĕсем.
Усал çынсем элек сараççĕ
Тамарăн чыслăх çук тесе.

Пĕрре, хирпе утса пыруçăн,
çулла, каникулра чухне,
кĕтмен çĕртен чĕри яр-уççăн
каларĕ хăйĕн сисĕмне.

Çунать хĕр. Пĕлтерес темест.
Ĕçре те, вăййăра та ун
ытла та сăнĕ халь салху.
Хуйхăллăскер пĕр ним чĕнмест.

Тамара, эс кама-ха саврăн,
эс камшăн çав тери çунан?
Ялан-çке шухăш шухăшлатăн,
йăлтах çухатрăн куллуна?

*1956, сентябрь.*

## Хӗр ташӑҫ

Аксу Уланови, сан ташшуна,
сан грацине мухтав юрри юрлатӑп.
Ма вӗренме каймастӑн, ма пурнатӑн
ҫак Аксура? Мӗн ашкӑнан?

Хальччен хӑв талантна туйса илмен-и,
е урӑххи пӳлет сан ӗмӗтне?
Ӑҫтан эс ҫакӑн пек искусствӑна
вӗреннӗ?
Ӑҫта пӑхса ӳстернӗ пӳ-сине?

Кашни хусканӑвнах хӗрӳллӗн юрататӑп.
Курса тӑранаймастӑп чӑрсӑр илемне.
Яту калаҫура та, юрӑра та
пӗр пек маттур, хӑюллӑ илтӗнет.

*1956.*

## БРИГАДИР

Эрех мӗнне пӗлетни эсӗ,
ҫавна ыйтасшӑн эп санран.
Вӑл пыл-и? Ҫу-и? Ма чӗнместӗн?
Сиплет-и йывӑр сурантан?

Эрех тени сана пит савнӑ,
ху та юратнӑ эс ӑна.
Сана мӗн чухлӗ вӑл «хӑтарнӑ»
тырпул пухас хӗрӳ кунран.

Хирте колхозниксем кӗтеҫҫӗ:
«Ӑҫта-ши пирӗн бригадир?»
Эс пур йӑваннӑ та пӗлместӗн:
те каҫ ҫут тӗнчере, те ир.

*1956, сентябрь.*

## ЭХ, ЭНТРИ, СУХАÇĂ...

Эх, Энтри, сухаçă, намăс мар-и? –
трактăру каллех хуçасăр çĕрĕпех.
Чирлĕрен-и? Ӳсĕртен каймарăн
хаклă вăхăта ниме хумасăр. Эх...

Сакăр ял пĕрлешнĕ – мăн хуçалăх,
анлăран та анлă уйĕ-хирĕсем.
Машинсем çине шанать халь халăх,
вăл тăрать сана та ĕненсе.

Ир çерçийĕ – тутă, ваттисем
каларăш.
Пукравччен кăна кĕрхи çĕртме паха.
«Анкала» ачи, инкек кăлармăш,
эс мĕнле питпе ялйыш çине пăхан?

*1956.*

## ЧИРЛĔСКЕР

Кусне уçать кăна Çтаппан,
ярса тытать тулли стакан.
Пелкет хăй: «Чирлĕ, грипла эпĕ,
спиртпа анчах ăна сиплетĕп».

Çимесĕр-мĕнсĕр ĕçнĕрен
Çтаппанăн пуç хытах хĕрет.
Тăсса ярать хуткупăсне:
«Савни, манаймăп сан тĕсне!»

Пуçлать кулма та шавлама.
Сăмси çунать – писев кăшман.
Ĕçет, выртать, тăрса ларать,
каллех ĕçет, татах выртать.

Тăранчĕ? Çук! Каçпа каллех
сĕтел çапсах ыйтать эрех.
Йĕрте-йĕрте чĕлĕхсене
тухса сĕнккет лавкка енне.

Пелкет хăй: «Чирлĕ, грипла эп,
спиртпа кăна мура сиплеп».
Сысна вăл, тет кашни çынах.
Çапла. Çтаппан – сысна. Чăнах!

*1956.*

## НАÇТАПА НАТТЯ

Наçта тĕл пулчĕ Наттяна,
хăртса пĕтерчĕ йăлт ăна:
– Кĕççепит, путсĕр, якăлти,
карма çăвар, пăлтти-палтти,
тĕнче кахалĕ, йытă чунĕ.
Ванюк ман, имĕш, унăн кумĕ.
Тата ĕçтер, ĕçтер, сăйла,
калаç, суйлан, пĕлтер яла,
Наçта хĕнет, те, Ванюка
чăкăлташса пура-çука!

Хăртать Наçта, хăртать кăна,
питрен сурать вăл Наттяна.
Наття, калас пулать, сурмарĕ.
Наття вăл лăпкăрах хĕрарăм.
Куçран тĕллерĕ Наçтана.
Наçта сасартăк чарăнать,
чĕнме ниçтан сăмах тупмасть.
Татса хурать Наття-кума:
– Эх, çын эс... Ав аран-аран
Ванюку тухрĕ лавккаран.
Кăшт путлĕрех пулсассăн ху,
тумлам ĕçес çук упăшку.

*1956.*

## Авланас тесе çӳрет

Авланас тесе çӳрет Санькка,
хĕр шырать, ялтан-яла танккать.
Авланмашкăн çăмăл теççĕ те,
йывăр-çке Саньккашăн питĕ те.

Ак дояркăна вăл ал сĕнет.
– Эс, Санькка, услап, – хĕр хирĕçлет,–
путек пек кăтра пулсассăн та,
юратма май çук сана чунтан.

Пĕр кахал та мăнтăркка пике
чуптуманшăн Санькана тиркет.
Куç хывать вĕреннĕ хĕр çине:
«Авланатăп пулĕ халь, тинех».

Леш вара учительре ĕçлет.
– Вăхăт çук качча тухмашкăн, – тет.
Авланас тесе супса çӳрет Санькка,
хĕр шырать, ялтан-яла танккать.

Таврашпех пĕлеççĕ лӳппере.
Нихăш ял парасшăн мар хĕре.
Ăнланса илсенччĕ вăл çакна:
кам хĕр патăр ĕнтĕ наяна.

*1956.*

## *ВĂРМАНТА*

Пит селĕмскер, тыткалама ункайлă,
йĕлме рычак, каятăп, сывă пул.
Юлашки кун тытать ман алă
сана паян, юлашки кун.

Эп йăтрăм ĕхлетсе, ансат çĕнесшĕн,
хăлаç çитми кўпшек пĕренене.
Тумарĕ лў! те, мур илесшĕ,
сурса çеç хучĕ вăй çине.

Эс çавăн чух мана айăкăмран тĕртейрĕн,
тара шăла-шăла канма ларсан.
Çĕкленчĕ пĕрене, мĕн тейĕн,
çĕн тусăмпа харăсласан.

Сыв пул, рычак. Сентябрь вĕренме чĕнет, ав.
Рычак, класа кĕртмеççĕ çав сана,
сайра-хутра кăна сĕнеççĕ,
шкулта ĕçсем пулсан кăна.

Эп кайнипе пĕртте кулянмăн, тетĕп.
Шарт! хуçăлсан рычак Мĕтри пиччен,
паллах, эс Мĕтрипе тĕртетĕн.
Мĕн тутăр-ха Мĕтри пĕччен?

*1956.*

## Ҫĕрлехи хирте

Ҫӳлте кĕрлерĕ аслати.
Хаяррăн пĕлĕтсем шăвать.
Асса ҫӳрерĕ ҫил ачи,
пушшех вăйлатрĕ шăв-шава.

Хум-хумăн пĕлĕтсем иртсен,
вăтанчăк ҫăлтăрсем курнать.
Хирпе пыратăп вĕҫтерсе.
Малта пĕр хăйҫути ҫунать.

*1956, сентябрь.*

## Шухăш

*Асап килсен, хĕн килсен,*
*шухăшласа ларатăп...*

Пĕлĕт уйăха хупларĕ,
ҫил пуҫларĕ выляма.
Тем сасартăк тыткăнларĕ
йывăр шухăш пуҫăма:

«Ма ытла та ир ылханчĕ
пурнăҫ, – тетĕп, – аннеме?
Ма халех чир-чĕр ҫыхланчĕ?
Тен, халех ҫĕре кĕртме?»

Тĕттĕмре пĕччен тăруҫăн,
сасă-чĕвĕ ҫук пирки,
пуҫăма ҫурать чарусăр
тĕксĕм шухăшсен тĕрки.

*1956, октябрь.*

## НИ УНТА, НИ КУНТА

Вĕренес килмест юлхавăн, –
икĕ уйăх вĕренсе
миçе «иккĕ» илчĕ авă,
йăлăхтарчĕ шкул тесе.

Янтă çăкăр урăх çимĕ,
намăс, тет, ăна çиме.
Ĕç патне туртать чун имĕш –
тухрĕ кайрĕ ĕçлеме.

Амăшне те пăхăнмарĕ,
пăхмĕ шкул енне ача,
хĕрттерсех ĕçле пуçларĕ,
хуйхă çук халь ун пачах.

Миçе кун ĕçе çӳрерĕ –
пĕлме çук. Пуçне усать
çак «ĕçчен». «Ĕç тармĕ, – терĕ, –
вĕренмешкĕн чун туртать».

*1956, октябрь.*

## ПУДИХИН ПЕТĔР

Хитре сăн-питлĕ,
яштака пӳ-силлĕ,
юратмалла этем, кăшт вĕçкĕнрех,
сăвва – тăшман,
юрра – юрлать каç-ирĕн,
çунать хĕрсемшĕн витĕрех.

*1956, октябрь.*

## ШУРККАНА

Ĕçе çын майлă ăнланмастăн,
пĕретĕн анлă çамкуна.
Кăвак, хаяр ху, кăшкăратăн,
йĕркешĕн темĕн пит çунан.

Йăпăлтатас йăлу пур санăн.
Юлташ юлхавшăн тарăхан.
Ху пек «тĕп-тĕрĕс» каласассăн,
эс ху та мачча суран.

*1956, октябрь.*

## ЛЕНА

Çынна хисеплемест, ачаш.
Ун кăмăлĕ çавтер начар,
киревсĕр. Мăн кăмăллă тек,
вăл – хăмпă, супăнь хăмпи пек.
Шуралă. Ĕçлемен нихçан.
Тумлам пĕлмест вăл пурнăçа.

*1956, октябрь.*

## АЛЬФИЯ

Альфия эс, çамрăк Аля,
чип-чипер тутар пики,
каласамччĕ, мĕншĕн халĕ
урăхлантăн, мĕн пирки?

Сăвăç тенипе... мĕн эсĕ...
Ма йăлтах ыйтса пĕлен:
«Начар паллăсем илмест-и?
Вырăс чĕлхипе мĕнле?»

Мĕншĕн çав тери сăнатăн?
Ма сăнатăн ман сăна?
Эпĕ куртăм... эп ăнлантăм...
Куçусем вутла çунаç.

*1956.*

## ПАРТА АЙЁНЧЕ ÇУРАЛНĂ САВĂ

Эй, парта айёнче çуралнă сăввăм,
ан кăшкăрсам, ан илттĕр пĕр никам.
Илтсессĕн юлаймастăн сывă,
кĕрсе ÿкетĕн хурлăха.

Сана чăр-чар! чĕрсе лап-лап! таптаççĕ.
Куратăн-и, мĕн чухлĕ сан тăшман.
Малта – Цыфаркин, икс тупаканçă
кирек епле таса япаларан.

Санра та шырĕ икс, игрек, зет.
Мана лектерĕ уравнени капкăнне,
лектерĕ те кăларĕ тинкене.
Ах, пĕтрĕмĕр! Ах, çитрĕ, хирĕçет...

Ытти тăшман вăл пирĕн – пĕтĕм
класс.
Кунта пире ытла та шăрăх, тăвăр.
Ан кăшкăрсам, ан хирĕç, ан калаç,
о, парта айёнче çуралнă паттăр
сăввăм!

*1956.*

* *
*

Чӑнах-ши вӑл, ача чухне
эпир ҫӑлкуҫ пек таса чунлӑ,
уйӑраймастпӑр ниепле:
кам чӑн-чӑн ҫын, кам хура юнлӑ.
Чӑнах-ши вӑл, нумай-нумаӑ
ун чух тӗнчен ыр тӗлӗнтермӗш.
Ачалӑх, ҫутӑ сан пӗлтерӗш.
Хӗрхен мана: ан кай, ан кай.

Юлсам, ачалӑхӑм, манра
унчченхиллех, ним улшӑнмасӑр.
Ахаллӗн эп кашни ҫынра
начар енне ҫеҫ курӑп сансӑр.
Ҫунсам, ҫулсем васканӑ май,
каҫхи пӗртен-пӗр ҫӑлтӑр евӗр.
Е пул чарусӑр ҫил кӗрлевӗ,
пурӗпӗрех: ан кай, ан кай.

Ҫынна эп юратмастӑп мар,
анчах тишкӗререх пӑхатӑп,
турра хумастӑп эп ӑна.
Кам мӗнлине таҫтан туятӑп.
Эп йӑнӑшатӑп пуль самай,
ытлашшипех пуль... Чунӑм манӑн
иккӗленӳллӗ ҫулӑмланнӑ.
Ачалӑхӑм, ан кай, ан кай!

*1957.*

## Туртаççĕ

– Сăвăратăн?
– Сăвăрап.
– Мĕн ку: «Спорт» е «Север»?
Пар-ха хăвăртрах, туртап,
кăшт чĕрем сиплентĕр.
Пар халь шăрпăк.
Чим, пул шăпăрт...

Урисене явса ларса,
ик «çамрăк» ĕмрĕç пируса.
Пĕри, тен, пур-тăр вуннăра,
тепри унтан кăшт аслăрах.
– Ăçтан эс илтĕн пирусна? –
асли ыйтать туртсассăн.
– Ăçтан илетĕп ăраснах?
Атте парать «сыпсассăн».

*1956, ноябрь.*

# ВĂРМАН

Хумханса ларать патваррăн –
пусĕ хытă хĕрнĕ.
Юр юрлас текен чарусăр
шухăш пынă кĕнĕ.
Ан кашлаччĕ, сĕм вăрманăм,
ан шавла, тăванăм,
эп юрра инçе хăварнă,
пĕтĕмпех хăварнă.
Тĕттĕмре хăруш ахлатрĕ,
тарăхрĕ-кĕрлерĕ,
итлемерĕ, ăнланмарĕ,
чарăнас темерĕ.
Вăйлă çумăр чăшăр-чашăр!
чашласа çӳрерĕ.
Сассипе чун сӳ! сӳлетрĕ,
сивĕнчĕ чĕремĕм.
Çумăрлă сукмак – çап-çутă.
Кăмăл тĕксĕмленчĕ.
Çывăхрах кисренчĕ-ӳкрĕ
темĕн эсремечĕ.
Малалла ярасшăн мар-и,
ахăрать хăватлăн...

Лăплансамччĕ, сĕм вăрманăм,
ан шавла, тăванăм.
Юрă ман кунтах-мĕн пулнă,
ачалăхăм – юлнă.
Çаврăнчĕ, çуталчĕ кăмăл,
чĕререх-мĕн юррăм.

*1957.*

## О, ПОЛОНЕЗ, ОГИНСКИЙ ПОЛОНЕЗĔ...

Хĕрӳллĕ пархатарлă меланхоли,
çап-çамрăк хĕрача сăмахĕ,
аманнă революци, çăткăн тăшмансем,
тăван пейзаж, аннеçĕм Польша,
хуçăк кăмăл хуйăха парăнманни...
О, полонез, сывпуллашу кĕвви!

*1957.*

## МАНĂН ТЫМАР

Чулпалăкçи – ял çумĕнчи хĕвеллĕ çурутрав.
Çак çĕр лаптăкĕнче пăлхар-асаттесем
канаççĕ.
Чул палăксем кунта чăнах та пит
нумайччĕ.
Ача-пăча – килеттĕмĕр тавра чупмашкăн
çаруран.

Чупсан-чупсан, тантăшсенчен инçе кайса,
лараттăм çырана, путаттăм шухăша.
Куçа кăштах хупсан, чуна йӳле ярсан,
вуншар хăрушă юланут иртетчĕ шăхăрса.

Вăрмансенче кĕрлетчĕ юнлă вăрçă,
тутар-монгол хуплатчĕ пĕлĕт пек.
Пĕр йĕкĕте вунпиллĕкĕн хăваççĕ.
Тен, йĕкĕт – ман тымар, мăн асатте?

Халь юлнă пĕр чул çеç. Ыттисене салатнă
килкартисем сарма, тумашкăн мунча чуль.
Пăлхар асаттесен çĕршер çулсем сăваплă
упраннă шур масарĕ халĕ çук.

Тен, тăлăх чул мăн асаттен тăпри?
Хăй пĕтнĕ чух, тен, инçетре мана вăл
курнă?
Паллах, ман асатте! – хастар та чухăн
пулнă,
çут ирĕклĕх ун пулнă пур тупри.

Таса чулсемлĕ çурутрав çеремĕ
пурнать чĕресенче ачалăхпа пĕрле.
Ачалăха нихçан нимскер те сӳнтереймĕ.
Апла тума мана хама сӳнтермелле.

*1957.*



# *Шкул вальсё*



## *АЧА ЧУНĔ*

*Ача пек ирĕклĕ пуласчĕ.*
*БАЙРОН.*

Ун чух шур лĕпĕше курсан та
кăртах сикетчĕ ман чĕре.
Çырма та, хырлăх та, çаран та
ачалăхра илемлĕрех.

Хĕвел кулсан, кулса яраттăм.
Хĕвел ансан вăрман хыçне,
самантлăха сулхăнланаттăм,
сăнаттăм уйăх тухнине.

Хĕп-хĕрлĕскер тухса çитсессĕн,
каллех пуçлаттăм савăнма.
Киле кĕрсен, яшка çисессĕн,
çитетчĕ вăхăт çывăрма.

Епле халь пурăнăç хавассăр.
Ача чухне вăл туйăнман.
Эп пĕчĕкчĕ, эп ăнланмастăм.
Тепре ача пуласчĕ ман.

*1957.*

## ИДЕАЛ ШЫРАСА

«Нумая хапсӑнса юлатӑн-ха пӗрресӗр»,–
витӗмлӗн хӑратрӗ кӳршӗ хӗрачи.
Эй, Валя, ҫын чӗрине пӗлмесӗр
ҫав терех шеллевсӗр хӑртаҫҫи.
Хӗрсенче эп, санра мар, каҫар, тархасшӑн,
идеал шыратӑп пикенсех.
Сӑнӗпе хӑйсем чӑн пикесем,
чунӗпе – айван, ҫапах чике тӑршшех
лартасшӑн.
Кашнинех вулатӑп сӑвӑсем.
Хуть пӗри, пӗри хуть ӑслӑн итлесенччӗ!
Пӗр каяп вӗриленсе, пӗр сивӗнсе.
Сӑввисем-ҫке чи лайӑххисемччӗ.
Шухӑш-ӗмӗт иксӗлмесӗр эп пӑрахмӑп
шырама вӑл каттӑршнӑй идеала.
Пулмаллах. Пурах вӑл. Ыр-сывах-тӑр.
Тупӑнмасть кӑна. Ак япала!

*1957.*

## *Кăмăл*

Уйăх карталаннă.
Пĕлĕтсем кăтра.
Эп, Анюта-Анна,
тăлăх сан патра.

Эп кунтан каясшăн.
Ан ыйтсам: «Ăçта?»
Эп çултан аташнă,
килнĕ йăнăшпа.

Мĕншĕнне пĕлместĕп,
пĕтрĕ кăмăл ман.
Шутласассăн, эс те
суйнă, юратман.

Эс те тăлăх, Анна,
çакă вăхăтра –
уйăх карталаннă,
пĕлĕтсем кăтра...

*1957.*

## АННЕ ПАТНЕ

Çилсем юрлаççĕ пралуксем çинче.
Тулта куç-пуç уçмалла мар тăман.
«Ай-яй, хуплать. Лăпланмĕ кĕçĕрех.
Епле çитсе килес-ши леш вĕçе?
Аванччĕ те... хыпар пĕлсе тăма».

Çак самантра ачу килсе кĕрет.
Пăхсан – паллаймăн, чисти шур упа.
– Эх, ачăпчу! – тен эсĕ. – Чим,
шаккан.
Каллех пĕччен пуль-ха? Мĕн нушупа
памастăн канăç ешĕл шăмшакна?

Хывса хуратăп йĕп-йĕпе тума:
– Аннесĕр пĕлейместĕп пурăнма.
Ху леш вĕçе тата мĕскер тума,
мĕн нушупа, пуçтарăннă кайма?

...Мĕнех калайăн, тĕрĕс ку, чăнах:
анне патне магнит пекех туртать
вунтăхăр çухрăмри вăтам шкулта
юлашки çул вĕренекен çынна.

*1957.*

*ВИÇĔ САВĂ*

* *
*

Çиçсе иртсессĕн
çут тĕлĕк пек ачалăх
йăлл! çиçĕм евĕр,
мĕнех курайăн-ши эс,
мĕн ыррине курайăн?

* *
*

Санра, Тамара,
эп яланах тупатăп
çĕнрен-çĕн савăнăç.
Сана пĕлмен пулсан, эп
салхулăхра вилеттĕм.

* *
*

Чун-чĕререн эп
куштансене шеллетĕп
айван пулнишĕн:
пĕртен-пĕр кунçулне те
çын пек пурна пĕлмеççĕ.

*1957.*

## КĔТЕТ Е КĔТМЕСТ?

Уйăх кичем пăхать мана.
Йĕпе юр çыпăçать пите.
Каяп ялтан эп Заряна.
Пĕччен эп, тăлăх эп хирте.
Уйăх кичем пăхать мана.

Часрах, часрах çитес тесе
васкатăп эп, çунатăп эп,
таттисĕр шухăш вĕçтерсе,
вăрçса юра та «тĕттĕме»,
часрах, часрах çитес тесе.

Сайра юр витĕр ан пăх эс
кичеммĕн ман çине, шур уйăх.
Кĕтет Тамара е кĕтмест?
... Эс, уйăх, эс тăкатăн хуйăх.
Сайра юр витĕр ан пăх эс.

*1957, январь.*

## Алăкăртан пăхрăм

Алăкăртан пăхрăм –
аллă çын.
Ан пăрах-ха, Маруç,
эп те çын.
Катăк пуртă та кирлех
хăш чух.
Тен, çĕнрен эп пулăп
сан тусу?
Тен, тарçу? Тен, мăшăру?
Вара
çумăнтан хăвма та
пултаран,
урăхпа сикме те
пултаран,
утланса ларма та
пултаран.

*1957.*

## Амур хумёсем

«Амур хумёсем» баянист юхтарать.
Анюк Кришшаран пăрăнать ташăра.
Кĕвĕ юхни тухатать чĕрене.
Хĕр хулĕпе стенаран тĕренет.
Кĕвĕ... Ытла та сулăмлă кĕвĕ,
çепĕç, мухтавлă, тунсăхлă кĕвĕ,
кĕвĕ-кĕрлев.
Кунтан аякра, Тухăçри тайгара,
Амур-шыв çинче яш Ванюк матросра.
Чĕлĕх сасси çупăрлать чĕрене,
мусăк пулса хускатать чĕрене.
Кĕвĕ тĕрлет
курăнми тĕрĕ.
Ăшшăн калать хĕре çав тĕрĕ:
«Чăт, час килет».

*1957.*

## Урçа-каччă

Шав ташлать, йăл-йăл кулать
урçа-каччă Микула
каçсерен клубра çĕрле
çамрăк-кĕрĕмпе пĕрле.

Чалăш лартнă çĕлĕкне,
хывнă çапнă кĕрĕкне,
кирза аттăн кунчине
тавăрнă вăл çуррине.

Урçа-каччă Микула
ĕçнĕ сарă «анкала».

Микула авланнă иккĕ.
Микула çунать халь чиксĕр
авланас тесе тепре
çитес çывăх çимĕкре.

Шав ташлать, йăл-йăл кулать
урçа-каччă Микула...
Эй, асту, свинарка Нина,
Микула сана куç хывнă.

*1957, январь.*

## КĔМĔЛ СЕРЕНАДА

Эп шик! шăхăратăп
çут кĕмĕл саспа.
Çухамăм шуралчĕ
сип-сивĕ паспа.

Пĕлетĕн-ши эсĕ
кам шăхăрнине?
Сисетĕн-ши, тусăм,
тусу кĕтнине?

Унтах эп, çав вăрттăн
юман патĕнчех.
Тавра – лăпкă, тăнăç
çут кĕмĕл тĕнче.

Çут кĕмĕл саспа эп
йыхрав шăхăрап.
Шăнмашкăн шăнман та,
санпа – ăшăрах.

*1957.*

## Тамарăна

Хальччен сире усал тумарăм.
Каçарăрсам мана, Тамара.
Тен, эп сире хыт çиллентернĕ?
Тен, эп текех юлташ та мар?
Анчах эсир мана мĕн терĕр?
Эсир шантартăр тĕл пулма.
Сире çавтер эп йăлăхтарнă.
Çав териех начар-шим эпĕ?
Сире ахаль эп чăрмантарнă.
Калаçăр тетĕп-çке, тивместĕп.
Тĕл пулăр, курăшăр, калаçăр.
Тамара, эпĕ кӳлешместĕп.
Чĕрем кăна çав чарăнаймĕ
сире курсассăн хĕмленмешкĕн.
Лява маттур, Лява йĕркеллĕ,
Ляван мĕнпурĕ килĕшет.
Епле-ха музыка итлемĕр.
Мĕскер пăхас пӳ çӳллĕшне.
Татман, тет, пĕлĕт вăрăм çын та.
Мĕн лутрине пăхса тăрас –
илемлĕн кăкри çине ывтăн.
Сăнран хитре вĕт, сăтăра...
Тамара, тен, эп йăнăшатăп?
Сире, тен, хуйхă пуснă пулĕ?
Шанма та çук пур шухăша та.
Каçарăрсамччĕ, сывă пулăр.

*1957, январь.*

## Çил ачи

Кантăкран шаккарĕ, шик! шăхăрчĕ,
пăхрăм – çук никам.
Тăхтаса та тăтăм юриех пĕр ăстрăм –
çук никам.
Пиншака уртса пусма çине те тухрăм,
чăрмантарнăшăн вăрçса та тăкрăм –
çук никам.

Тĕлĕнсе те аптраса уттартăм урама,
урамра та телефон юпи çеç, çук никам.
Шикленсе эп кайрăм, эп пуçларăм
хăрама.
Кантăкран каллех шаккарĕç. Çук никам.

*1957.*

## ШКУЛ ВАЛЬСĚ

Иртеççĕ ырă вăхăтсем.
Çулсем пит хăвăрт-çке шăваççĕ.
Чуна хурлантарать шкул вальсĕ.
Кĕçех тухатпăр вĕренсе.
Иртеççĕ ырă вăхăтсем.

Çулсем пит хăвăрт-çке шăваççĕ.
Тĕллевĕм халь те уçă мар.
Мĕскер кĕтет-ши пуçăма?
Мĕнле-ши пулĕ ман шăпаçăм?
Çулсем пит хăвăрт-çке шăваççĕ.

Чуна хурлантарать шкул вальсĕ.
Ăна итлетĕн хăраса
эс те, çут куçлă хĕрача.
Тен, ыттисем те кăшт хăраççĕ?
Чуна хурлантарать шкул вальсĕ.

Кĕçех тухатпăр вĕренсе.
Ятлас тесессĕн те ятлаймăр,
мухтас тесессĕн те мухтаймăр,
курас килсессĕн те кураймăр
текех пире, учительсем.
Кĕçех тухатпăр вĕренсе.

Иртеҫҫӗ ырӑ вӑхӑтсем.
Вальс ҫеҫ иртмест, иртмест шкул
вальсӗ.
Кӗрлет ачаш, маттур, хаваслӑ!
Мӗн виличчен чӗресенчен
ҫухалмӗҫ ҫакӑ вӑхӑтсем.

*1957, март.*

* * *

Чӗреҫӗм, канӑҫсӑр чӗре,
санра ялан чӑн юрату ҫӳрет,
анчах хӑртать те типӗтет туссен
бойкочӗ.
Йӗреп, йӗретӗп эпӗ, пӗлтерместӗп
ҫынсене.
Аксу мана тӑшман вӑл пулса тӑчӗ.
Ӗнер кӑна-ха сӑввӑмсем маттурччӗ,
паян – выртать сӑмах купи.
Ах, муза, ку – тупик, тупик...

*1957, март.*

## МАРТРИ ХĔВЕЛЛĔ ХИР

Çын умĕнче пулас темесĕр
чун тăвăрланнă вăхăтра
ăçта тухса чупатăр эсĕр?
Ăçта сывлатăр лайăхрах?
Уя тухса уйпа сулланăр
хĕвеллĕ, çиллĕ кунхине.
Çултан тухса хавас пускалăр
шак хытă хытнă юр çине.
Тӳррен ашса сукмак тупсассăн,
кайса пĕрмай вăрман енне,
курса йăпанăр юр тусанĕ
епле хир тăрăх юхнине.
Юхать вăл çырмана, яла...
Хир варрине пырса çитсессĕн,
вăрман патнех ан кайăр эсĕр.
Çаврăнмалла анăçалла.
Унта – юрпа хĕвел çути.
Унта, çӳлте, кăшт сăртарах,
ытла çап-çутах мар фонра,
силленчĕк хурăнсен утти!
Çак лăпкă, ырă сăнлăхпа
эсир тăванлăх пуçаруçăн,
тăрса юлатăр куça-куçăн
куç виçейми тасалăхпа...

*1957.*

## УЙРĂМЛĂХ

Сентименталлĕ ача мар,
лирикăлла ача,
кăмăлăма лăплантарма
санпа эп калаçап.

Жорж Санд та Сент-Экзюпери,
Теодор Драйзер та Ремарк.
Аван, аван... хăшĕ-пĕри.
Мĕнех вара, эп хирĕç мар.

Хемингуэй, Джек Лондон... Шеплĕ.
Анчах «Шекспир» теместĕн-çке,
анчах эс Лорка, Байрон, Шелли
таврашĕнчен çавтер инçе.

Çав чаплă уйрăм прозăра та,
чăн кирлине йăлт хуратса,
кирлĕ мара кăна куратăн –
сентименталлĕ хĕрача.

*1957.*

## Тусăм, тусăм

Эп санран тӳпене вĕçсе кайрăм,
эпĕ – савăнăç юрри.
Эс мана тӳперен хăваларăн
те чăнах, те юри.

Эс манран кăн-кăвак тинĕсе
туртса илтĕн,
эпĕ – парăслă кимĕ.
Кулянуллă ялан сăнăм-питĕм,
савăнăçне эсĕ илнĕ.

Эс манран каçсене туртса илтĕн,
эпĕ – уйăх.
Халь чĕресĕр тăвасшăн эс питĕ,
манăн вăл – вутлă туйăм.

Унсăр эпĕ мĕскер?
Ху шутла.
Тусăм, тусăм,
эс мĕншĕн капла?

*1957.*

## КАРМЕН

Эп йӑнӑшнӑ: эсӗ иккен Кармен.
Эп ҫуннӑ, эп ӗненнӗ, эп пӗлмен.
Эс ҫавӑ тутапах мана та, урӑхне те
кӑваррӑн чуптумашкӑн ҫӳҫенмен.

Анчах эп Хозе мар. Калатӑп эп:
«Сан ирӗк».
Эп хурах мар, пуҫкасан мар. Поэт.
Поэт юратура чарусӑр ҫирӗп –
тӗнче пӗлменнине пӗлет.

Куҫать ҫав сӑлтавпа асамӑҫа вӑл.
Вӑл тухатсан – Кармен пӗтет, вилет.
Ун вырӑнне ҫурхи чечек пек ҫамрӑк Джульетта
поэта кӗтсе илет.

*1957.*

## Çупкă

Çапла. Эп – вĕççĕр çăмăлттай,
мана çав кăлтăк чыс кўмест,
балра сана çупни, чăн та,
этем картнех ларса пĕтмест.

Ыйтмашкăн пĕчĕк каçару
эп хатĕр пулĕ, тен, халех те.
Тен, сан чĕрў, сан çăвару,
чăнах та, чаракне пĕлет-тĕр.

Ай, чаплă çупрăм-çке сана!
Янтравлăн, çуттăн, тап-тасан.
Эс ăнлансамччĕ, эс курсам,
епле ман пуçăм усăнать.

Сана çупни
хама çупни вăл, ĕненсем.
Çынна кăшт тăн кĕрет, тет,
хĕнесен...

*1957.*

# ХĂНАРА

Сĕтел çине сарнă сĕтел çитти.
Мĕнле хапăрăкра тĕртнĕ-ши?
Çак ыр çынсемпеле ĕçсе-çиме
мĕнле турă ларса çырнă-ши?

Сĕтелех те тулли яшка-çăкăр.
Сĕтел ури епле чăтать-ши?
Эх, ĕçетпĕр ĕçкĕ, ĕçетпĕр.
Пуçăмăрсем епле чăтать-ши?

Ĕçрĕм кăна, ĕçрĕм, ÿсĕр пултăм.
Ĕçкĕçĕ иккен эс, манăн пуç.
Выртрăм кăна, выртрăм, сывăраймарăм.
Шухăшлă иккен эс, манăн пуç.

Илĕп эпĕ алла сĕрме купăс,
тухăп кайăп аслă урама.
Сĕрме купăс хĕлĕхĕ ылтăн мар.
Ĕмĕр пĕрре пирĕн, иккĕ мар...

*1957.*

## СУМЕЛ ЙĂВАНĔ

Ял тени Йăвансăр мар,
тĕрлĕрен Йăванлă.
Пирĕн пур Йăван Сăрнай.
Ĕçекен Йăван вăл.
Хуплу Йăванĕ те пур.
Ку шӳтпе ят тупнă:
туй вăхăтĕнче хуплу
хĕвне чикнĕ тухнă.
Виççĕмĕшĕ – чи чапли,
тилĕлле чее чунли.
Вăл – Сумел Йăванĕ.
Вăл ĕçсе йăванмĕ,
ятлаçса ят тăвас çук,
чисти флюгер майлă:
е сарçу, е пăрăç, вут.
Пысăка халь кайнă –
кĕнĕ ларнă пуçлăха,
сăнне улăштарнă.
Çарататъ вăл халăха
тӳррĕн мар, ытарлăн.
Ик ялта ун пĕрер çурт.
Пур «Москвич» та унăн.
Мĕн кăна, мĕн кăна çук
çакă çăткăн чунăн.

– Бухгалтер кăна та, мел
ун пуйма ăçтан çитет?
– Ан шарла. Сумел. Сумел.
Тем кăтартĕ. Хăй килет.
Арăмĕпе пĕртăван
аптрамасăр вăл аптрамĕ,
хут çинчи Лукин Иван,
халăхри Сумел Йăванĕ.

*1957.*

## ПОЭТ МАР САВАÇ

Алăк хуппи шăлтăрт! турĕ, тусăм, тус,
поэт килет терĕн-им?
Ун чухне Парнас мĕн курĕ, тусăм, тус,
кун пекки унта пĕр виççĕ иленин?

Поэт мар-çке, турра шĕкĕр, сăвăç çеç.
Ёмĕр тăршшĕпе – çӳретчĕ, халь – вĕçет!
Хăпартмаççĕ-çке ăна çавах çӳле.
Эсĕ, теççĕ, аялтах ĕçсе çӳре.
Эсĕ, теççĕ, лапамрах такмак кала,
гонораршăн урлă-пирлĕ пăхкала.

Çӳçĕ те чăлтах шуралнă та, пĕрех
такмаклать хастар – ачи пакартамас:
пуç усмасть вăл çамрăк чухнехи пекех,
хырăмне тытсассăн тутă – аптрамасть!

*1957.*

## Пĕр хăйшĕн çеç

Пĕр хăйшĕн çеç пурăнакан çынна,
эй, пурнăç, тыттарсамччĕ катăк пуртă.
Юратура та хăйшĕн çеç çунать,
хăй сыв пулсан, савнийĕ хуть мĕн куртăр.

Чĕререн мар сире ыр кун сунни,
çунмасăр çеç юрлать вăл юррине те.
Нимех те çук ун чунĕнче чăнни.
Шанмастăп кулнине те, йĕрнине те –
калаçма мар, пăхма та йĕрĕнетĕп.

*1957.*

## Пĕр редактора

Хазĕр, терĕн, вăхăт çуккă манăн.
Тепĕр кун кĕместĕнччĕ-ши, жьанăм,
çавă ул, çук вăхăт, как ни странно...
Эп, ыран кĕме пулса, çапла шутларăм:

«Син, малай, чăн чăвашла не знаешь.
Тутарла та темех мар, товарищ.
Вырăсла – Çитăркка пек суяешь,
итлесессĕн, ăнланать сахалăш.

Должность хушнипе тытатăн сăвăсем те.
Сăвăран эс, сăвăс пек, юнне ĕçен те
хаçатра çапан. Мĕн-ма чунна çиетĕн?
Лучше ан кăлар ăна совсем те...»

*1957.*

## ТĔРЛĔ ÇĔРТИ ÇЫРУСЕМ

## ДОСКАН ХЫÇАЛ ЕНĔ

Чăнах калап: çĕркаç Раман
директор хĕрĕпе ларман.

Шуркка+Таруç=
мĕскер ку? Пĕтрĕ пуç...

Тангенспа котангенĕс
экзаменра кутран хĕнĕç.

Ку, галстукли, шĕлепкелли,
Лаврентьев, Илемпи Кули.
Ак ку, çумран пыраканни,
савнийĕ, Чурнухха Анни.

– Ăш хыпнă химикăн, ау!
Часрах парсамăр ашдвао.
– Ма ашдвао? Мухмăра кирлĕ
шÿрпе тата спиритус вини.

Ĕнертенпех: «Вир алле зинд да бай!» –
тесе çÿрет «хÿреллĕ» Минтăпай.

## ДОСКАН МАЛ ЕНЁ

Хроника

Учком членне Ефимова
ирпе туланӑ, тет, махха.

Пӗлтерӳ

Паян каҫпа лавкка пенче – дуэль.
Класри Печорин (Е.Мишша)
тата Грушницкий (Носов (Чӑвашъел)
пайлаҫҫӗ Мэри-Натюша.

## ПАРТА ҪИНЕ ҪЫРСА ХУНӐ

Кӑранташпа

... Елена, ма хуравламастӑн:
ма ёмӗрне качча каймастӑн?

Чернилпа

$(а+в)^2$. Тухмасть...
Ых, шуйттан, кӳпшек Караҫ.

Пурӑпа

Иван – пӑван.

## ХӲМЕ ҪИНЕ – КӐМРӐКПА

Киномеханик Вӑлача,
хырӑмунта улт ача.

Предколхоз,
тула тухса хӑс!

## ҪЫРМАРА, ЮР ҪИНЧЕ

Пӑлюк, Верук.
Ку – амӑшӗсем.
Лява, Мишша.
Ылтӑнӗсем.
Килне кайма хӑраҫ вӗсем:
шарт! хуҫӑлнӑ йӗлтӗрӗсем.
*1957.*

## УРАМСЕНЧЕ

Урамсенче пĕччен çÿретĕп.
Çырма енчен уç çил вĕрет.
Манмасть таçта чĕнме пĕрре те
шур уйăх янкăр тÿпере.

Юнра вĕрет çĕн туртăм, сисĕм.
Çут тăкăнать вĕçĕ-хĕррисĕр
çав сисĕм-туртăмăм çине,
чунпа чĕремĕн варрине.

Васансенче шывсем шавлаççĕ.
Кĕреп, çÿрерĕм самаях.
Сая каять, сая каять
çурхи мăнтарăн лăпкă каçĕ!

Мĕскер шур уйăх, çил, васан,
юлташăм, эсĕ пулмасан?

*1957.*

* *
*

Çусам, çусам, ăш çумăр, çу,
мĕн ирччене çусам вăраххăн.
Çук чĕрере усал сăмахăм,
çул каясси те манăн çук.

Хурал тăрать киле-çурта
виç шурă хурăн хускалмасăр.
Çусам, çу, çумăр,васкамасăр,
сĕм шăплăхра эс шăпăртат.

Эпир сан вăрăм юмахна
ăша хывма епле юратнă...
Юлташ мана кĕтме пăрахнă,
эп хам та маннă халь ăна.

Çук хирĕçӳ, çук çураçу.
Çук чĕрере вут пек сăмахăм.
Инçе, инçе – хитре юмахăм...
Çу, çумăр, çу, таттисĕр çу.

*1957.*

## Юлташăм

Эс уксах Тамерлан пек хаяр.
Пулă юнĕ пек сан сивĕ юн.
Эс лăпкăлăхпа – Наполеон.
Мĕншĕн эс ун пек? Урăхла мар?

Мĕн сана çапла пулма хушать?
Мĕншĕн ачаллах эс мăн арçын?
Ӳкрĕ пуç çине мĕнле нуша?
Е тӳрккес этемччĕ-и аçу?

Астăватăн-и, нумай-и-ха,
вăрманта çӳрерĕмĕр пĕрле,
леçсе ятăмăр хурăнлăха
пĕлтĕр тупнă шăпчăк чĕппине?

Хурчăка амантнă кайăка,
Тамерлан, йĕре-йĕре сиплерĕн,
юсансассăн та çавах шеллерĕн.
Халĕ – шăпчăк вĕçнĕ аякка...

*1957.*

* * *

Ирсерен шкулалла
утнă чух шоссепе
сывлăш уçă янках,
çутçанталăк чипер.

Тӳпери ăш саламлă
хĕвел чун уçать,
манăн савăнăç çуттăн
çиçет, йăлкăшать.

Шăхăратăп эп юрă,
сăнап таврана,
нихăçан хуйхăрмастăп,
кунçулăм ăнать.

Ирсерен шкулалла
утнă чух шоссепе
эпĕ хам та маттур,
эпĕ хам та чипер...

*1957, май.*

* *
*

Каç пулсассăн, уйăх
çутатать сада.
Сукмакпа салхуллăн
хĕрача утать.

Курнă-ши хальччен эп
çав хĕрачана?
Шăппăн çеç çӳрет вăл,
уйăха сăнать.

Уйăха сăнать те
юрăсем юрлать,
юрласа пĕтсессĕн,
тарăннăн сывлать.

Пытанса итлетĕп,
шухăша каяп.
Шкул ачи эп, çамрăк,
а чĕрем... туять.

*1957, май.*

## ЮРĂ

Хĕрачасем юрлаççĕ юрă
савни инçе пулни çинчен.
Савнийĕсем çумрах-мĕн, курăр,
сĕнксе лараççĕ темĕнччен.

Ӳпкелесе куçран пăхмаççĕ,
шанаççĕ хăйсене вĕсем.
Хĕрачисем савсах савмаççĕ,
çакна туймаççĕ каччисем.

Пĕри те юрлама пĕлмест-ши,
элле пĕлсен те юрламасть?
Ялан çӳреççĕ кӳлешесшĕн,
каç-каç тухсассăн урама.

Тен, çавăнпа юрлаççĕ юрă
хĕрачасем ялан пĕччен
ĕмĕтсенчи таçти йăлт урăх
хастар чипер ача çинчен.

*1957.*

## *ПОЭТСЕМ*

Данте, Назон.
Ют ҫĕрте тилмĕрсе типсе хăрнă.
Байрон ютра пуҫне хунă.
Шелли ютра тинĕсе путса юлнă.
Гейне.
Ҫăкри хĕсĕкрен ĕмĕрне выҫă сăнлă.
Грибоедов.
Кăна Перҫсинче ҫурса ывăтнă.
Пушкина дуэльте «ĕретленĕ».
Лермонтов.
Кунăн тусĕ тус мар, ирсĕр йытă:
поэта пĕр ним ҫукшăн пĕтернĕ.
Рылеева
ҫакнă.
Ҫеҫпĕл
ҫакăннă.
Есенин
ҫакăннă.
Маяковский
перĕннĕ.
Лоркăна
пенĕ.

Куба чысĕ Марти, ун мухтавĕ,
юнлă ҫапăҫуран тухайман-мĕн.

Моабит тĕрминчен тухайман
Джалиль.
Çав хĕнпех пуçне çирĕ Митта,
вилчĕ ир...

*1957.*

## Юлташ йăмăкĕ

И Шур Атăл, Шур Атăл,
Шурă Атăл кăпăкĕ.
Шурă Атăл кăпăкĕ пек –
ман юлташăн йăмăкĕ.

Чĕкеç евĕр чĕвĕл-чĕвĕл
тĕл пулсассăн калаçать.
Килĕшӳллĕ ӳчĕ-пĕвĕ,
куçĕ йăл-йăл вылянать.

Пултарать вăл ĕçлеме те,
савăнма та пултарать,
вăрттăн ман çине пăхать те,
чуна вут пек çунтарать.

*1957, май.*

## Ултă эпитафи

1.

Ачасем вĕрентрĕн вăтăр çул.
Пĕтĕм ял сан патăнта вĕреннĕ.
Эс ялан ял хушшинче çӳренĕ.
Сансăр тăлăх юлчĕ ял, илемĕ çук.
Пурнасси пурнаттăн-ха нумай.
Ывăл çын хурри пулни хавшатрĕ.
Самайлантăн – тепĕр хуйăх çапрĕ.
Куртăн эс çĕр тĕрлĕ самана.
Яков Федорыч, Якку мучей,
ырă çын, яту – чĕресенче.

2.

Кунта канать ял пуçлăхĕ Емкке.
Çӳретчĕ кивĕ кительпе, кив
галифе-йĕмпе.
Пĕрре те ырă кун курман,
çынна та ырă кăтартман.

3.

Ку тăпра çине килсессĕн, хӳхлĕрсем:
каччă вилчĕ кăмака çинчен ӳксе.

4.

Çак хĕрĕн чунĕ çăлкуç пек таса –
ăна çук тунă тусĕ чуптуса.

5.

Левентее леш тĕнчере
бухгалтера ан лартăр.
Эрех ĕҫсе кӳпĕнесрен
ҫак сыхлĕ мĕскĕне. Ăнланăр...

6.

Сыв пул, тăван, юратнă Кĕпитун,
сана тĕп турĕ сарă сăмакун.

*1957.*

* *
*

Каҫ пулсассăнах кĕретĕп
лăпкă уйăх ҫутине.
Саврăм эп, юратрăм эпĕ
шурă ҫĕмĕрт ҫеҫкине.

Шурă ҫĕмĕрт сывлăм сыпнă,
йăлтăр-йăлтăр чӳхенет.
Эп ҫӳретĕп шăппăн-шăппăн
урамра ҫур ҫĕрчченех.

Пӳрт ҫине пăхса иртетĕп,
кĕмĕл ҫĕмĕрт леш енне.
Саврăм эп, юратрăм эпĕ
кӳршĕ класс хĕрачине.

*1957.*

## *Çурхи кас*

Çăлтăрсем илемлĕ
тĕлĕксем тĕлленнĕ.
Шурĕ шăппăн уйăх –
çутă-çутă хуйăх.

Васансем чĕнмеççĕ,
васансем çывраççĕ.
Ылтăн пек çур касĕ.
Вăрансам, чĕкеçĕм.

Вăрансам, чĕкеçĕм,
курма тух, пĕччен эп:
айлăма кўпченĕ
çăлтăрсем ўкеççĕ.

Юлнисем илемлĕ
тĕлĕксем тĕлленнĕ.
Анчĕ ĕнтĕ уйăх.
Тĕксĕмленчĕ улăх.

*1957.*

## ÇУРХИ СЕРЕНАДА

Ах, уйăхлă каçĕ...
Урамра – çуркунне.
Никам та курмасть
эп кунта тăнине.

Кĕрлет чаплă шăпчăк,
чĕнмест сирĕн çурт.
Пĕлеп: çук сан канăç;
пĕлеп: ыйăх çук.

Кĕмен-ха хĕрсем,
шăхăрас йĕкĕтсем.
Сада сиксе ан та,
эп илĕп кĕтсе.

Ăçтан çыврас килтĕр:
тулта – çуркунне.
Ахаль-и эп татрăм
сирень çеçкине.

Лере каçса кайăпăр,
пар аллуна,
çырма леш енне –
çап-çут айлăма...

*1957.*

## СЕРЕНАДА

Итле-ха, тух-халĕ,
тухсам хăвăртрах.
Шăп – Çирĕклĕ ялĕ,
тӳлек ыйхăра.

Çӳлте çутă питлĕ
арпус шăвăнать.
Вут пек вĕçсе çитрĕм,
кĕтеп тахçанах.

Ак кантăк та сӳнчĕ.
Эс çук. Çук та çук.
Мĕн-ма пурнăç йӳçĕ
аçу килте чух?

Вăл çыврăнă ĕнтĕ.
Итле, кантăк уç.
Саднах эпĕ кĕтĕм.
Тухсам, тух, Тамуç...

*1957.*

## *Танго*

Хурăнсен çулçисем – çатăл-çатăл
музыка çеммипе.
Тулли уйăх çӳлте çутă-çутă
вылянать çĕрĕпе.

Эс манпа ăш сăмах калаçасшăн
шăппăн, ĕлĕкхилле:
хăрпăксем çĕкленеççĕ ачашшăн,
çĕкленеççĕ хуллен.

Эпĕ те пĕлейместĕп-ха, эс те
малашри çулсене.
Куçпа куç тĕл пулать те, чĕнместĕн,
темĕншĕн именен.

Сан кăтру, çыр çӳçӳ, илĕртӳллĕн
сĕртĕнет питĕме.
Эсĕ çеç чи сăпайлă, хитре, йăрăс пӳллĕ,
эсĕ çеç – чăн телей.

*1957.*

* *
*

Уйăхлă çурхи вырсарникаçчĕ.
Чарăнтăм эп санăн умăнта:
«Халĕ çеç çап-çутă çăлтăр анчĕ,
анчĕ пулĕ, тетĕп, çакăнта».

Эсĕ пăрăнса кĕрсе каймарăн
шашулкккаллă пĕчĕк алăкран.
Йăл кулса чеен каларăн: «Авă
юр юрлать Тамара анатра.

Çавăнта ӳксе саланчĕ мар-и
санăн çутă-çутă çăлтăру?
Мĕншĕн-ха авантарах пăхмарăн?
Тен, унта та йĕрĕ çук-тăр ун?»

Эп каларăм: «Кансĕрлерĕ шăпчăк,
антăхса итлеттĕм кĕввине,
эсĕччен йăлтраканни ним çукчĕ,
çутă çăлтăр – эсĕ, Каринэ».

*1957.*

* *
*

Сан йӑл куллун пайӑркисем
чуна хавассӑн кӑтӑкларӗҫ.
Унта ачалӑх кунӗсен
поэмине ман куҫ палларӗ.
Анчах эп тивӗҫ тӗлӗнме:
вӗҫне темме ҫырмашкӑн маннӑ –
ҫӳҫне эс темшӗн ҫитлемен,
мелке пуҫпах шкула тапраннӑ.

«Поэмӑн» вӗҫӗ те хитре:
ик шурӑ роза – ҫивӗтре.

*1957.*

* *
*

Итлесемччӗ шӑпчӑк сассине.
Мӗншӗн вӑл салхуллӑ илтӗнет?
Сӑнасамччӗ ҫӑлтӑр ҫуннине,
ҫӑлтӑр тӗксӗмлетнӗ ҫутине.

Ӑсатсамччӗ уйӑх куллине,
уйӑх кӗнӗ пӗлӗт хӗррине,
ылтӑн тытнӑ сылтӑм аллине,
кӗмӗл тытнӑ сулахаййине.

Пӑрахсамччӗ сивӗ ҫӳреме.
Ан ыйтсамччӗ кӗмӗл ҫӗррӳне.
Ӑнлансамччӗ манӑн чӗрене,
йышӑнсам чӗремӗн ӑшшине.

*1957.*

## Тунсăх пур

Пулăпинччĕ эпĕ çутă уйăх
тĕксĕмленнĕ çӳллĕ тӳпере,
курăттăнччĕ, курмасассăн – туйăн:
тунсăх пур хаваслă сăн-питре.

Пулăпинччĕ эпĕ çутă çăлтăр,
çӳрĕттĕм таттисĕр йăр! та яр!
Çăлтăртан канăçсăрри ним çук-тăр,
канăçсăр, анчах тăрлавсăр мар.

Пулăпинччĕ эпĕ çепĕç шăпчăк
çуркуннешĕн хытă савăнма.
Шăпчăкчен чуну сан кĕрхи шăнччĕ,
халĕ путрĕ вутлă çулăма...

*1957.*

## *Сăмахсăр юрă*

Мĕншĕн эп кунта? Пĕлетĕр.
Ах, епле аван-çке касĕ...
Хушăран лĕп çил килет те –
çулçăсем шăпăлтатаççĕ.

Эпĕр нимĕн пуплеместпĕр.
Пуплемесĕрех вăл паллă:
эп сире хама йăлт панă,
эсĕр... юратмастăр эсĕр.

Манăн чунăм хурланасшăн.
Çивĕч каччă пулаймарăм.
Туйăмсен хĕрӳ кăварĕ
ахалех çулăмланать çав.

Шăплăха пăсма хăранăн,
темĕн итлесе ларатпăр.
Ытлашши куляннăран-тăр,
кăмăл питĕ хуçăк манăн.

Калаçмастăр-çке пĕрре те!
Тĕршĕнетĕр, анаслатăр,
йăпшăнса ачаш кулатăр,
лăпкă-лăпкă тĕлĕретĕр...

*1957.*

# ЧЕЧЕК, ХИРТИ ЧЕЧЕКĔМ

Чечек, хирти чечекĕм,
сана ăнланма çук:
çилпе пăшăлтататăн,
юман çинче куçу.

Чун-чĕрӳне кашнийĕ
хăйне тĕрлĕ аван.
Хăшне, хитре чечекĕм,
суйлатăн кăмăлтан?

Пĕлеп, çил икĕпитлĕ:
хăш чух йăпăлтатать,
тепрехинче – йăлт урăх –
хаяррăн харкашать.

Çĕре тымар яман вăл.
Чечек, эс çĕр ачи.
Шутлатăн-ши, чиперĕм,
ултавçă мар-ши çил?

*1957.*

## ЫРĂ ЮРĂ

Хĕрачасем юрлаççĕ юрă,
эп юрататăп итлеме.
Хăш чух хавас, хăш чух салхуллă
пулса каять чун-чĕреме.

Хура куçли ытла та çепĕç,
ытла та тунсăхлă юрлать.
Юрланине итленĕçемĕн
асра ĕмĕрлĕхе юлать.

Вăл – юрăç мар, вăл хăй ыр юрă:
хăш чух йĕрет вăл, макăрать.
Хăш чух хавас, хăш чух салхуллă,
хăш чух хастарлă та кăра.

Ăна илтсессĕн ман мăнтарăн
кўреннĕ чун та çĕкленет.
Хам уншăн юрă пулаймарăм,
хускатаймарăм чĕрине.

*1957.*

## *Йĕкĕт юрри*

Уттарам-ши утçăма,
чуптарам-ши,
элле чарăнсан та юрĕ-ши?
Юр юрлам-ши эпĕ,
сăв калам-ши,
элле шăп пырсан та юрĕ-ши?

Чарăнмарăм эпĕ,
уттармарăм, –
кăлкан тĕпĕсене хускатрăм,
никам итлемин те, юр юрларăм,
шăннă туйăмсене шăратрăм.

Уйăхран инçе мар
пĕр çăлтăр пур,
çав çутатать уйăх çутине.
Хамăртан инçе мар
сарă хĕр пур,
çав çунтарать çамрăк чĕрене.

*1957.*

## Уйрăлу юрри

Пухăннă чух, туссем, пухăнтăмăр
пĕр савăта сунă сĕт пекех.
Уйрăлнă чух, туссем, уйрăлнă чух
татăлатпăр çинçе çип пекех.

Хуракăшсем вĕçрĕç, куртăр-и?
Тур утăра утланса тăтăр-и?
Çамрăк ĕмĕр иртрĕ, сисрĕр-и?
Элле сисмесĕрех юлтăр-и?

Кĕмĕлех те çĕрĕ, çыру куç.
Тăхăнăр-ха çыру пĕтиччен.
Эпирех те кунтан уйрăлсан,
асăнăр-ха асăр пĕтиччен.

*1957.*

## Ăсату юрри

Ăсатсамччĕ ăсатан пулсан,
тасатсам пусму çине шăлса.

Тасатсам пусму çине шăлса,
хир хапхинчен тухиччен ăсат.

Хир хапхинчен тухиччен ăсат,
куçран çухаличчен пăхса юл.

Куçран çухаличчен пăхса юл,
куçран çухалсассăн, ална сул.

*1957.*

## МУНЧАРА

Атте, сăпайлă та ĕҫчен чăваш,
хутла-мĕнле темех мĕн мар.
Ман ҫурăма мунчалапа ҫăва-ҫăва:
– «Демонстративлă тарнă» мĕн сăмах? –
тесе ыйтать йăвашшăн мунчара.
Калап чăнне, вĕрентнĕн ачаран:
– Ҫын умĕнчех, ним пытанмасăр
кайни пулать, выҫса ҫитсе.
Атте, эс килнĕ ăнланмасăр,
шутлан эп айăплă тесе.
Яра куна акса та, чĕптĕм
ҫăкăр тавраш ăша яман.
Хампа тусăмсене те чĕнтĕм.
Апла ăҫтан-ха акаян?
– Ҫапли ҫапла, анчах та, ывăлăм,
шкула кĕртесшĕн мар сана.
Епле малла эс пурнăн, сывлăн,
вĕт... пĕтĕм пурнăҫ тусăнать?..

*1957.*

# ПĔЧĔК АКĂШСЕН ТАШШИ

Çĕтрĕ, тĕлĕк пек çухалчĕ,
зал, çынсем, çынсен хушши.
Умăма тухса çуталчĕ
пĕчĕк акăшсен ташши.
Ыткăнать сулмаклă кĕвĕ
пĕр юхса, пĕр çĕкленсе,
йăлтăрать ун шурă хĕмĕ
çĕнелсе те çĕнтерсе.
Пĕчĕк акăшсем ташлаççĕ,
çатлатаççĕ çунатсем,
çамрăкрах пулма хушаççĕ,
ачашлаç, чуна тивсе.
Карталанчĕç... Ах, юлатăп,
хатĕрскер таçти çула –
эпĕ хам кунта ларатăп,
кăмăл манăн,
чунçăм манăн
шурă акăшла
вĕçрĕ малалла,
вĕçрĕ малалла.

*1957.*

# КУИНДЖИ

«Ирхи Днепр» – ун тӳпи. Вăл иксĕлчĕ.
Ун вучĕн
кăварĕ çук. Палитра та, мелке те
тек ĕнтĕ уншăн савăнăç мар пĕрре те.
Çапла вăл çирĕм тăхăр çул йăвашшăн
çунчĕ.

Картинисем халь выставкăшăн мар.
Унта текех ура та ярса пусмĕ.
Аманмасăр кăйкăр çунат усмĕ,
сас çĕтмесĕр чарăнмĕ вăл кăшкăрма...

Пĕр никам пĕлмест çунат хуçăккине, –
çĕнĕ «Ирхи Днепрсем» ыйтать унран
тус-йышĕ.
«Куинджи эп. Çавна пĕлесчĕ сирĕн», –
тет Куинджи,
салхуллăн тинкерсе тусĕсене.

*1957.*

## МОЦАРТПА САЛЬЕРИ

Моцартсем талант кивçен илмеççĕ,
хăйсемех хĕвеллĕн кĕвĕлеççĕ.
Шухă çын, куштан, элекçĕ е ултавçă
тăнласан, именерех утаççĕ.

Нихăш те кĕвве ÿпкелемерĕ.
Кăмăллать ăна кĕвĕç Сальери.
Моцартпа Сальери çывăх туслă.
Туслăхĕ Сальерин виçĕ puслăх.
Вăрттăн чаврĕ шăтăк, – нÿрĕ, тарăн, –
ĕнтĕ миçе Моцарт анса кайрĕ...

Ÿркенмесĕр, тивĕçе манмасăр,
саманамăр сассине итлер-и:
çут тĕнче тăмасть талант памасăр,
Моцартсем пулсан, пурах Сальери.

*1957.*

# ЫВӐННӐ КАРАП

Артӳр Рембо, эс генилле каланӑ
вунултттӑрах ху мӗн калассине.
Вара поэзин ывӑннӑ карапӗ
кайса ҫухалнӑ ют тинӗссене.

Унта вӑл ывӑнми ҫӳрет. Инҫе эс ху та:
шыратӑн ылтӑн – шӑрӑх ҫӗрсенче.
Тем тӗрлӗ тертленӳ те, тарӑху та
сана сивӗтеймест пуяссинчен.

Ҫав вӑхӑтра Париж каллех йӗксӗксемпе
тулать,
Офелия ҫаплах юхать, шывра путса;
ҫакса вӗлернисем пуҫтарӑннӑ бала,
ташлаҫҫӗ шӑмӑ шакӑртаттарса.

*1957.*

# ЕСЕНИН

Хальхи эпир вулан томĕсенче
пуçланнă çеç Есенинăн таланчĕ.
Апла та чунĕ ыратнин хăвачĕ
çуталĕ ĕмĕрсен ĕмĕрĕнче.

Ун чунĕ ыратни юратнипе пĕр шайлă.
Ма ӳкĕнет, ма кулянать çапах?
Хăй пурнăçне вăл пурăннă çул майăн,
утса ĕмĕтсенчи таçти çулпа.

Çынсемпеле татулăх тупаймасăр
шавланă, ашкăннă, ĕçсе эрех,
авланнă, уйрăлнă, ташланă харсăр.

Ăçта кăна çитсен те тĕнчере,
вăл – питĕ чăрсăр, тытса чарма
кансĕр,
анчах пиртен пин хут илемлĕрех.

*1957.*

## Тĕллев патне

*Ты Джиоконда, которую надо украсть.*

*Вл. Маяковский.*

Туйăмсем чунра çӳреççĕ
тинĕсри хумсем пекех.
Эсĕ, ывăнми чĕреçĕм,
çав хумсем çинче текех.

Иш те иш, хастар чĕреçĕм,
Чăн поэзи патнелле.
Туйăмсем пĕр çĕкленеççĕ,
пĕр путаççĕ тĕпнелле.

Никама та итлемесĕр
эп васкатăп çĕннелле...
Тинĕс аслă, çул пĕлместĕп,
пĕлмесен те çитмеллех.

*1957.*

## Терцинсем

Ĕмĕтĕмсем сӳнес пек туйăнни
паян мана уйрăммăнах пăлхатрĕ.
Эп çыртăм çĕрĕпех чарăнайми.

Мĕн-ма сӳнеççĕ? Тен, талант çукрах-тăр,
хыпса çунни йăваш-тăр чĕремре?
Мĕскер шыратăп эп? Мĕскер çухатрăм?

Çухатрăм эпĕ шăп вунçиччĕре
хастарлăха. Ăçта, епле? Пĕлместĕп.
Пуçа, шăмă-шакка тем çĕмĕрет.

Эп çавăнпа хевтесĕр те илемсĕр.
Халь-халь татăлас пек янраççĕ нервăсем,
тăрлавсăр реквиемсем кĕвĕлеççĕ.

Çĕр варринче, теме аса илсе,
сĕм кантăкран пăхатăп хăпăл-хапăл.
Çут уйăх çук, пăч-тĕттĕм – пур тĕнче.

Пăшăрханса тула чупса тухатăп.
Капан пек пĕлĕт... Пĕлĕт хыçĕнче,
лупас енче, çут уйăха куратăп.

Эй, уйăх, уйăх, тух, кармаш инçе,
сан пек хавассăн йăл кулас килет ман,
çĕр варринче теме аса илсе.

Эй, уйăх, уйăх, тух хĕвелленсе...

*1957.*

## *Çурхи уйăхлă сад*

Шурă уйăхлă садăм,
садри яштака хурăнсем,
мĕн тери эп сире юрататтăм,
пĕр çынна чĕререн ĕненсе.

Аллея тӳлек те капăр.
Тĕлĕрет çутă-тĕттĕм тĕнче.
Калаçмасăр хуллен çеç утатпăр.
Халĕ çав ыр каççем ай... инçе.

Халĕ çавă çынна эп мансан та,
чĕререх юмах пек вăхăтсем –
çурхи уйăхлă садăм,
садри яштака хурăнсем.

*1957.*

## СĂВĂ ÇУРАЛНИ

Пĕччен юлатăп пÿлĕме. Унта та
лăпланăç çук. Чун кÿтнĕ. Пĕчченех,
Бетховен пек, тухса утатăп
çаран çине, вăрмансене.

Никам илтме пултарайман кĕвве
илтесшĕн
тăнлатăп чĕреме. Чĕре майпен пуçлать.
Эп чĕрĕлетĕп çуркунне пек ешĕл.
Тем тĕрлĕ шухăш таврăнать пуçа.

Çитсе тухатăп утнăçем уя та.
Куçпа виçеймĕн унăн анлăшне.
Эп ĕнтĕ туййăмсен шавне туятăп,
пĕлмешкĕн вĕренеп пĕлтерĕшне.

Эп туййăма шухăшпала пĕрлештерсессĕн,
ятсем парсан, кĕвĕлесе ярсан,
мана курма çил пек тапранăр эсĕр,
мĕн ĕмĕрне манаймăттăр, курсан.

*1957.*

# Сирень турачĕ

Сирень турачĕ шурă та кăвакчĕ –
ытарайми асаилӳ хăварчĕ.
Ăна именчĕклĕн эп тăсрăм каçхине,
ыр хĕрача Тамара, сан енне.
Телейччĕ маншăн парнелӳ саманчĕ.

Эп хăрамарăм, туйăмсен хăвачĕ
мантарчĕ эс савниллĕ пулнине,
лексессĕн те кайран ун аллине
сирень турачĕ.

Курмассерен тусу манран кулатчĕ.
Парасшăнччĕ вăл «авăрлă кулачă».
Ни кĕркунне, ни çутă çуркунне
чĕркуçленмерĕм эпĕ ун умне.
Çĕнеттĕм эпĕ. Асăмран тухмастчĕ
сирень турачĕ...

*1957.*

# Юлашки шăнкăрав

Ахаль чухне вăл янраман чан çапнăн,
паян чан çапнăн хурлă илтĕнет,
шкул вĕçленсе шкулпа пĕрле ачалăх
пире ал сĕлтнине вăл пĕлтерет.
Пуçтарăнчĕ, шăпланчĕ пĕтĕм класс.
Коридорта темле, лăпчăнарах, тăратпăр,
чи юлашки шăнкăрава тăнлатпăр.
Чун кулянать, туссемĕр, мĕн тăвас.

Капла сасартăк илтессе кĕтмен.
Епле хӳтлевсĕр, тăлăххăн курнатпăр.
Иртет-çке вăхăт... Ĕнтĕ уйрăлатпăр...
Хăçан тĕл пулăпăр-ши ӳлĕмрен?
Ăçта, хăш çĕрсене çул выртĕ пирĕн?
Епле эп сирĕнсĕр пурăнайăп, тусăмсем?
Кама юлташ тесе, кампа-ши каçăн-ирĕн
чуна пусарăп ăшшăн пуплесе?

Кама парнелĕп вутлă сăвăсем?
Чĕре вăрттăнлăхне, ун кăварне хĕрӳллĕн
кама шанса, кама-ши парăп ӳлĕм,
маттур класри маттур хĕрачасем?
Пĕртăван пек сире эп хисеплеттĕм
хусамăр та мана юп курнăран.

Ахальтен мар – куççуль, ахальтен мар,
пĕлетĕп, –
шăнкрав, чан çапнăн, мĕскĕн янăрать.

Тен, шăнкăрав малта ку çеç те мар?
Тен, институт енне кунçул илсе çитерĕ?
Анчах çак юлашки кирек хăшне
çĕнтерĕ,
урăххисем кун пек янравлă мар.
Чĕресенче вăл хуйхă пулса кĕрлĕ,
вăл кĕрлĕ чăн-чăн пысăк савнăç пек.
Ман пурнăç тăршшĕпе вăл юрă пулĕ,
вилме те вилĕп унăн кĕввипех.

*1957.*

## ШУХӐШСЕМ АПТРАТСАН

Шухӑшсем аптратсан, ҫӑмӑл мар
шухӑшсем,
тӑрӑшатӑп ялан эп санпа тӗл пулма.
Эс ларатӑн мана кӑмӑлтан итлесе,
унӑн-кун пӑхнине нихӑҫан та курман.

Пирвайхи юрату – чыс пекех хаклӑскер.
Манӑнне ӑмсанса вараларӗҫ хаяр.
«Кив тӗнче мӗлкисем, – терӗн лӑпкӑн,
кӗскен, –
йӗксӗксен элекне мур тӗпне туса яр...»

Шухӑшсем, шухӑшсем, купипе шухӑшсем.
Эп васкатӑп, юлташӑм, санпа тӗл пулма.
Лӑпланаҫҫӗ чунсем, кӑмӑлтан пуплесен, –
сан ӑшра та вут-тӑвӑл алхаснӑ нумай.

Чун-чӗре пӑр марри пурнӑҫра – чӑн илем:
ырӑ ӗмӗт, хастарлӑх килет те вутлать.
Эй, мӑнтарӑн, эй, ҫамрӑклӑх, яш
вӑхӑтсем...
Хуйхӑ мар, йӑл ҫутти ҫӗр хут, пин хут
ытла!

*1957.*

## Калас тени

Сан ёмӗтне куратӑп витӗр.
Ҫав ёмӗт – лӑпкӑ упӑшка,
чус витнӗ ҫурт. Вара эс питӗ
телейлӗ. Эсӗ – ҫавнашкал.

Халех эс ватӑ – утмӑлра.
Ҫирӗмсенче – ҫӗре те ҫитӗн.
Чунна-юнна куратӑп витӗр:
ҫур грамм поэзи ҫук санра.

Йӑваш пӑру эп пулаймарӑм.
Эп – канӑҫсӑр поэт-ухмах.
Шухӑшупа эс арӑм. Арӑм.
Тен, чӑннипех те арӑмах.

*1957.*

## ШӲТЛЕ САВӐ

Каласма мар, патна пыма та хăяймастăп,
курса тăранас çук мĕн ĕмĕрне.
Ман пеккине эс ху та çывăха ямастăн,
асăрхамастăн эс ман пеккине.

Сана эп çавăрма пултарас çук.
Тĕл пулсанах чĕлхем çĕтет, ай-яй.
Вилмех вилместĕп те, анчах чут чĕрĕ, чут.
Кăшт сĕртĕнес те пур, çунсах каяп.

Паттăрлану та, ашкăну та – манăçра.
Арçын ача-и эпĕ? Эпĕ – чӳпĕк.
Эс бриллиант, эс хаклă чул, эп – çӳпĕ.
Ман чунăм çук эс, чул, çухаласран.

Хама ĕмĕтпеле чылай йăпатрăм,
анчах çиçмест малта пĕр çутă та.
Вара çырлахрăм: эсĕ – Клеопатра,
эп мĕскĕн чун – чура – сан умăнта.

*1957.*

## ЮЛАШКИ КАÇ

*Однообразный и безумный,*
*как вихорь жизни молодой,*
*кружится вальса вихорь шумный...*
*А.С.Пушкин.*

Çитет... Ах, цинандали пуçа кайрĕ.
Каçарăрсам, ĕçместĕп «çуттине».
Элле тăрса пĕрре ташла пуçлар-и? –
паллана вальс-фантази илтĕнет.

Мухтавлă Глинка Вакхăн жрецĕ пулнă,
çапах та генишĕн эрех хăрушлăх мар.
Ачаранпах ун музыки – вăй-хал,
хăюллăх
чун-чĕреме, шухăшăма.

Мĕскер-ши, Люци Павловна, шутлатăр,
тĕсĕмренех мана йăлт, витĕр, ăнланса?
Пирвайхи хут эп сирĕнпе ташлатăп
сасартăках арçын пек мăнланса.

Тен, кам пĕлет, юлашки хут...Ан кулăр.
Тархасшăн ан çилленĕр айвана.
Калас-тăк тӳррипе, эсир ман пĕтĕм
шкулăм,
чи çывăх çыннăм пĕр эсир кăна.

Пăшăрханап шăпа расна килнишĕн.
Эп, ешĕлкке хунав, шăтса нумай кайран

куҫа шартаракан юмах пек розăран,
пăхатăп ун ҫине хăюсăр, нишлĕн!

Анчах ҫук мар пĕрпеклĕх те пирте:
пире пăлхантарать вальсри пĕр тема,
вутлантарать васкавлă каҫ илемĕ.
Ҫак каҫ пекех кунҫул вĕҫсе иртет.

Вĕҫсе иртет яш ĕмĕр – чун ÿпкевĕ,
ĕрĕхтерсе ачалăх иртнĕ пек.
Тăрса юлать ҫут тема – вальс
кĕрлевĕ,
ҫак каҫшăн лартнă ҫÿллĕ палăк пек.

*1957.*

## Элегия

Вăхăт çитрĕ – эпир салантăмăр.
Тăтăм юлтăм акă пĕчченех.
Эп çурални нумаях мар, сахал та мар.
Пурнăç нуши ӳкрĕ пуç çине.

Мĕнле йĕрпе кайсан тĕрĕсрех-ши?
Кукри миçе, йӳппи, çулĕсен?
Ан та тăрăш çулна ыр вĕçлесшĕн
пуçĕнченех йăнăш çӳресен.

Тĕрлĕ этем тĕрлĕ канаш сĕнет,
темĕншĕн-çке кăмăла килмест.
Çула тухас умĕн канасшăн эп,
мĕншĕн васкататăн, пурнăç, эс?

Шухăшăма тĕплĕн шутламасăр
нихăçан хускатмăп калаçу.
Çутă çăлтăр пулса ялкăшмасăр
эпĕ пурпĕр çĕре кĕрес çук.

*1957.*

## Сивĕ улăх

Çуркуннепе хитре юрлаççĕ
лĕп-ăшă каççенче хĕрсем.
Хурлантарни кăна çур каçĕн,
чĕнсен мана вăл илĕртсе.

Чунне уçса кĕвве ярать те
сад пахчинчи çунатлă тус –
шур уйăх пек айван туятăп
хама, тем асилсе ун чух.

Пĕррехинче çапах каларăм:
«Чăх çеç кулать ку хурлăхран».
Вара чĕре утне тăлларăм
илсе тухса сив улăхран.

Сив улăхĕ вăл – савнă хĕрччĕ, –
кайса çухалчĕ хулана.
Каппайчăк шухăш унăн хĕрчĕ:
«Сысна пăхса ма хăтланас».

*1957.*

## Çыру

Юратнах, савман мар ĕнтĕ эс те.
Пĕр пулмарĕ çапах пирĕн çул.
Кӳренместĕп сана, кӳренместĕп.
Кăмăла пасарта илме çук.

Пĕрмаях хулана йыхăраттăн:
«Хулара – чăн культура, аван».
Эп пымарăм. Аван ялăмра та
пăр пек сив пулмасан чун-хавал.

Çĕнтерӳ ĕçре турĕ бригада, –
канăç тупнă пек пулчĕ чĕрем.
Туссемпе пĕрлешсе юрра ятăм.
Самантран канăç çĕтрĕ çĕнрен.

Канăçа çухатсан, чун хĕмленчĕ:
ырă ĕç кĕввине мĕн çитет!
Çакăнта вăл этемĕн тивлечĕ,
çакăнта чăн телей, çак тĕлте.

Çĕршыва ăнланма йывăр мар-мĕн:
çамрăксем халь ялта кирлĕрех.
Эс çукран Саврăшпуçĕн урамĕ
мансăрах вăй вылять тĕрлĕрен.

Кӳренет (эпӗ çеç кӳренместӗп)
çӗн клубри радиола, баян.
Эп систӗп: çунатӑн вӗт эс те!
Килсе çит, хуть ыран, хуть паян.

*1957.*

## Сӳрӗк кӑмӑл

Калаçатӑн – хыттӑн.
Куçу – сарӑ-симӗс.
Кӑмӑлу та... япӑх пулмалла.
Мӗншӗн эп шут тытрӑм,
мӗншӗн эпӗ тивӗç,
мӗншӗн эп сана юратмалла?
Урӑххи ман пурччӗ,
уйрӑлса ал сулчӗ,
кайрӗ, таврӑнмарӗ каялла.
Чун-чӗре пушанчӗ.
Иксӗлчӗ-шим вучӗ?
Малалла мӗнле пурӑнмалла?

*1957.*

## ПАЛЛАМАН ХĔРАЧА

Кам ку кӳршĕсен хĕрачипе?
Çуркунне пек çамрăк та чипер.
Калаçма-кулмашкăн та пĕлет
инçетри савниййĕм евĕрлех.

Вăйă салансассăн, юлташа
вĕсемпе эп кайрăм юнашар.
Тепĕр хут тĕл пултăм ир çинче, –
çул выртать-мĕн хĕрĕн пит инçе.

Хальхинче каймарăм юлташа,
ăсатма утмарăм юнашар,
пăхса юлтăм ăшшăн кулянса,
савние пĕр вĕççĕр асăнса.

*1957.*

## ВĂРÇĂ

Нихçан манаймĕ вăл: ăсатрĕ
хитре ирпе ик ывăлне,
кăштран – вĕсенĕн ашшĕне.
Вăрçма, çĕнме йĕрсе ăсатрĕ
хĕрĕх пĕрремĕш çулхине, –
чечен сăн-питлĕ лăпкă амăш,
чунтан юратнă ырă амăш.

Тамăкри пек вут-тăвăл урчĕ...
Шыв, йывăç... йăлт çунатчĕ çав.
Çухалчĕ ашшĕ хăй. Пуç хучĕç
ывăлĕсем-çуначĕсем.

Тăшман арканчĕ. Ăшшăн кулчĕ
Çĕршыв-анне: ун сачĕсем,
уй-хирĕсем, вăрманĕсем...
Анчах та паттăр ачисен
ытла та йывăр ыйăх çав,
нихçан вăранмĕç, нихăçан.
Çаплах кĕтеççĕ амăшсем,
çаплах... Шур çÿçлĕ аннесем.

*1957.*

## *Ашшĕсĕр юлнисем*

«Çарпуçĕ», малтикас ухмахĕ,
килетчĕ кĕрлесе хаяр.
Камсем аттеллĕ тытăçма-и,
атя, пуç сывă чух тарар.

Пĕрмĕш «етрех» мана лекетчĕ.
Атте, фронтран килсен, текех
хут пек шурса, чăлах çӳретчĕ.
Пурĕпĕрех: атте – аттех.

Эп çĕмрĕк сăмсапа кĕреттĕм
куççуль çăтса анне патне.
Анне те манпала йĕретчĕ,
анчах та мана мар шеллетчĕ,
шеллетчĕ... леш ачасене.

Аттесĕрри епле нумайччĕ,
усалччĕ аттесĕррисем.
Халь эпĕр ӳснĕ ĕнтĕ, каччă,
вăрçмастпăр «юнлă вăрçăсем».

*1957.*

## Пурнăç улми

Çĕрулми шутласа тупаканĕ, тупса
пĕлекенĕ
ĕмĕр-ĕмĕр мухтавлă.
Тиесе, карапа океан урлă кӳнĕ
Колумбпа унăн йышĕ – мухтавлă.

Çĕрулми ларттарса халăха тарăхтарнă
ăслăсем те мухтавлă.
Тĕлсĕр кутăнлашса пăлханмашкăн
çĕкленнĕ
пур айван та ылханлă.

Çĕрулми пулмасан, эп пулмастăм,
выçăпа шыçăнса каçăхаттăм.
Эсĕ те касăхаттăн, ялйышăм,
е пĕтеттĕн вилсе, пурнаймастăн.

Ленин, парти, юратнă çĕршывăм
вилĕмсĕр те мухтавлă.
Гитлер, ун йыттисем, вĕсен юнĕ
витĕр ылханлă.

Çăмарта, çăкăр, аш вырăнне эсĕ пултăн,
çĕрулми, кăрахмалăм...
Пĕтĕмпе çĕрулми эп: ӳт-пӳ те, ăстăн та.
Кам çакна ăнланать – мухтавлă.

*1957.*

## Хěвел

Тухнă ирех, çěрěпе каннă хыççăн,
ту урлă каçасшăн.
Чи юлхав вăкăрне утланса
тăвалла вăл хăпарнă.
Çулě начар-ши, вăкри вăйсăртан-и,
халь тин çӳле çитнě.
Чăн тӳперен аяла савăнса,
çунтараслăн пăхать вăл.
«Ай, вěри, апапай! пěçертет-çке хěвел»,–
ачасем тěлěнеççě.
Сулхăна пытанать пур чěрчун;
тӳсме çук шăрăх, пăчă...
Ту çинчен аннă чух, кăшт пырсан,
вăкăрне хуса ячě.
Йăлăхрě сěтěрěнсе,
шур куян утланса хăлхинчен çатăрларě.
Анчě вăл сиккипе, –
ывăннă, ыйхă килнě, килте те кěтеççě.
Этемсем салхуланчěç:
«Тата тепěр кун иртсе кайрě».
Çěр çинчи йывăç-курăк, měнпур чěрě чун
шăппăн çеç ыйха путрě.

*1957.*

## ПУШАР

Çӳллĕ каланчча енчен,
кăнтăрла-и е çĕрле,
тимĕр сассине илтсен,
кăрт! сиксе илет чĕре.

Ку – чунран шаккать сăнавçă,
асăрханă та вута.
Васкăр! Вут асать! Çунаççĕ!
Хăвăртрах! Мĕскер тата!

Вĕçрĕ-мĕкĕрчĕ машшинĕ –
иртрĕç хурçă шлемлисем.
Тухрĕ чупрĕ ытти çынĕ.
Ёрĕхтерчĕç лашисем.

Васкаварлăн сӳнтереççĕ.
Хурçă шлем вута кĕрет.
Шыв сапаççĕ е сӳтеççĕ
çулăмĕ сӳнмесĕрех.

Хăрăм, тар питре. Хуралнă,
çуннă, ĕннĕ тумтирсем.
Хăшĕн ал-ури суранлă.
Çӳçĕ çуннă теприсен.

Çĕнчĕç ак: пушар лăпланчĕ,
юлашки сÿнет хĕлхем.
Сÿнчĕ вут. Хурал хăварчĕç
çухатмасăр тимлĕхе.

... Çавăн евĕр халăх эпĕр –
вут хыпсан тăван çĕре,
кар тăратпăр, сÿнтеретпĕр,
çĕнтеретпĕр ĕмĕрех.

*1957, июль.*

## ÇУСА ÇАКНĂ КĔПЕ-ЙĔМ

Ватрĕç шăмшака, шывра шÿтерчĕç,
сивĕ çил лăскать пире хаяррăн.
Кантраран тытса вĕçетпĕр кунĕпе,
кунĕпе пĕр вырăнта вĕçетпĕр.

Куççульсем те типнĕ ĕнтĕ пирĕн,
ĕнтĕ унсăрах сиксе йĕретпĕр.
Пĕр çеккунт та канăç çук, минут та.
Мĕн парса ку инкекрен тухар-ши?

Пĕр хутчен çапла типсе хăрсассăн,
утюгпа тепре чуна илеççĕ.
Мĕншĕн çакă нушана куратпăр?
Çын пĕлет, эпир анчах пĕлместпĕр.

*1957.*

## Пыл хурчӗсем

Пахчара хурт сӗрлет.
Мӗкӗте тӗлӗрет.
Ҫывӑрать ҫакӑнта
кашни кун сулхӑнта.
Ах! Мӗскер? Мӗкӗте
ҫухӑрса ячӗ те
йӑпӑр-япӑр тарать
урама пахчаран.
Ҫапкаланчӗ пӗрех,
кайрӗ ӳкрӗ ҫӗре,
макӑрать, ҫухӑрать:
– Ай-ай-ай! Хурт сӑхать!
Сӗр-сӗрлеҫҫӗ хуртсем
кахала йӗплесе.
«Пӗрехмай ҫывӑран,
ӗҫлемесӗр пурнан,
пахчара тек ан пул,
сӑрӑ хурт!» – теҫҫӗ пуль.

*1957, август.*

# АВГУСТ КАÇĔСЕМ

Кун иртрĕ. Хĕп-хĕрлĕ «çатмашăн»
чупмастăп вăрмансем хыçне, –
сарри çĕкленчĕ сăнамашкăн
каçхи çĕр пичĕн пурнăçне.

Клуба, вăййа васкатăп эпĕ
çимесĕрех, ĕçмесĕрех.
Ан тив, ыйха нумайăш путчăр,
эп ыйхăсăр çÿрем пĕрех.

Киле ялан тухса утатпăр
шур çивĕтсемлĕ Машшукпа.
Тĕлне çитсессĕн, хăвăрт, ма-тăр,
калинккине уçать шур бант.

Кĕрсе тарать те уямасăр
пуçтах кăна çав хĕрача,
тирексенчен инçе каймасăр
çулçа итлетĕп çĕр каçах.

Мăнаçлă тинĕс пек уя та
сăнатăп, ылтăн пулнăран...
Çанталăкĕ капла уяр та,
час пăсăлма та пултарать.

*1957.*

## Шкул умĕпе

Тӳпе сăн-пичĕ уçă, çут-кăвак.
Паян тĕнче уйрăммăнах хитре.
Атьсем хавхаланса, кула-кула,
шкула килеççĕ сакăр сехетрех.

Пит-куççенче вĕсен хĕвел вылять.
Тумсем – çĕнни, алра – чĕр чечексем.
Илтетĕп ушкăнра эп çывăх ят,
юлатăп кулянса, пуçа чиксе.

Хăйне курас тесессĕн, инçе каймалла.
Пыраймӑп эпĕ – аннем чирлĕ-çке...
Аван пĕлсех те, тусăм, кăмăла,
эс хирĕçрĕн, çырмастăн нимĕскер.

Эп шкулăм умĕпе иртсе каяп.
Ырă сунса ват тополь ал сĕлтет.
Мăнаç пике, çав тополе паян
асна хуть ил эс çав инçе çĕрте.

Эп шкул умĕпеле юри каяп.
Нумай-и-ха, кунта чупаттăм эпĕ те.
Халь çак йăлтах тăрса юлать кая,
ват тополь чарăнмасăр ал сĕлтет.

*1957.*

## *Çуралнă кун*

Ташлать сив çумăр чăрсăр ташă
е алхасать чарусăр çил.
Апла пулсассăн та, юлташăм,
кĕрхи çак вăхăт – чун уççи.

Çĕн саманан çуралнă кунĕ
вăл пирĕншĕн – чи савăк кун...
Халăхăма чăн пурнăç кÿнĕ
Октябрь, ÿсет мухтавлăху.

Сан хыççăн кайнисем пит йышлă,
телей туптаççĕ пур çĕрте.
Тивлетлĕ саманамăр, йышăн
чи чыслă парнесем пиртен.

Ĕçе пули-пулми тумашкăн
эпир тĕллевсĕр-мĕнсĕр мар.
Пин-пинĕн,
пысăккăн,
хавассăн
утатпăр коммунизма.

*1957.*

## Икĕ хурăн

Ача чух лартсаттăмăр та хурăн,
асăнмалăх, иккĕ юнашар,
эс каларăн: «Туслăх, ĕмĕр пурăн».
Эп чĕнмерĕм, кайрăм шухăша.

«Туслăх, ĕмĕр пурăн». Шеп. Илемлĕ.
Пуçăмран тухмарĕ тахçанччен.
Ун чухнех эп шухăшпа тертленнĕ
кăмăл лăпкă мар самантсенче.

Унтанпа – миçе хутчен çаралчĕ,
çĕнĕ тум туянчĕ миçе хут
икĕ хурăн? Пĕлĕтсем çăралчĕç,
хăврĕ юханшыв мĕн чухлĕ хум?

Инçетре тĕл пултăмăр, сисмесĕр,
ĕçсемпе пырсан, мăн хулара.
Палламарăн... Çук, палларăн: «Эсĕ,
кажется, Мишша?» – тесе тăран.

«Туслăх, ĕмĕр пурăн» – шеп, илемлĕ.
Пуçăмран тухман вăл халиччен.
Ĕмĕрех эп шухăшпа тертленнĕ
чунăм тăвăлнă самантсенче.

«Туслăх...» Шеп! Ахаль виç утăм турăм
хыпăнса ÿксе эп сан енне.
Кун çинчен пĕлмеççĕ икĕ хурăн,
туслă пурăнаççĕ ĕмĕрне.

*1957.*

## КИЛТЕН КАЯС УМĔН

«Малти кустăрмасем хăш еннелле кусаççĕ,
хыçалтисем те çав йĕрпех чупаççĕ.
Çапла çав... Урăхла мĕнле тата?» –
пуплет аннеçĕм, ыйăхне татать
ларса ман пуç вĕçне, тенкел çине,
эпĕ килтен тухса каяс чухне.

Йăвашшăн хăйă сунать –
аннемĕн ăш сунать.
«Çÿрен çĕрте çын пек çÿре, ачам, –
тесе мана
вăл систерет, – ятна ан яр,
сан хыççăн кайĕç шăллусем, ăнлан...»
Аннеçĕм, ăнланап.

*1957.*

## *НОВЕЛЛА*

Манпа юратура ӑмӑртакан
нар питлӗ ӑслӑ Александр,
ҫула кӑштах пӳлет пулсан та,
ачи сӑпай, маттур, аван.

Тӳр кӑмӑлӗшӗн хисеплетӗп
ҫап-ҫамрӑк лӑпкӑ ачана.
Вӑййа манран малтан ҫитет те,
эп пӑрӑнатӑп – курсанах.

Унпа юлатӑр эсӗр иксӗр
ҫурхи тӗнче ытамӗнче.
Каятӑп эп, каятӑп ирӗксӗр,
чун хытарса ҫын умӗнче.

Пӗлетӗп: эсӗр тупа тунӑ
мӗн ӗмӗрне сивӗнмессе.
Тен, уйӑрсан уйӑрайӗ тупӑк,
пӳрнӗрсенче пур ҫӗррӗрсем.

Пӗр шанчӑк та кӗтместӗп эпӗ.
Киле утатӑп улӑхпа.
Савнийӳнтен иртесчӗ, тетӗп,
ӑсхакӑлпа, маттурлӑхпа.

Çирĕплĕхпе хавхалану та,
сăпайлăх, чунăм ырату
унăннинчен çӳлте ман пултăр.
Ан сӳнтĕр ĕмĕр – юрату.

Мана эс ик сăмах хушни те
савăнтарса вăйран ярать.
Эп сансăр питĕ тăлăх, питĕ –
юр-пăр хуплать сăвва-юрра...

Анчах ку мĕн? Килсе тухатăн
мăн хуларан... упăшкапа.
Хай эп тата леш Александр
сикетпĕр тĕлĕнсе шартах!

*1957.*

## Ăнланаймастăп

Шкул садĕнчи кервен çуртра
хăйçути çук. Алкумĕнчи
ыйхăлакан хунар çеç, тин
курса мана, чĕнет ятран:

«Мишша, эккей, хальччен ăçта
çӳрен пулать-ха? Çут тĕнче
хăçантанпа – тĕлĕксенче.
Тахçан çыврать пуль Тамуç та».

Вăранчĕ шăрчăк кĕтесре.
Сывах-и-ха, сывах-и, шăрчăк...
Кунтахчĕ-çке, кунтахчĕ шăрпăк.
Çутса пăхасчĕ, ӳкесрен.

Тĕлне тупса, шаккатăп алăк.
Пĕр-иккĕ-виççĕ шаккасан,
илтетĕп лăпкă сасă: «Кам?»
Чĕнеп. Хуллен. Сас уйăрмалăх.

Тамара, çарапуç, çарран,
тухать те уртăнать мăйран.
Шап-шур кĕпи – йӳле кĕпе.
Пăхап та: çын юмахри пек.

Çур сехетрен вăл ăсатать.
Каятăп эп инçе-инçе.
Шур хурăнсен хӳтлĕхĕнче
ыйтать: «Хăçан килен тата?»

... Çĕр хут, пин хут çакна куратăп,
ăнланаймастăп ниепле:
епле майпа, çапла пулса та,
мана вăл сутрĕ-ха, епле?

*1957.*

## МАНМĂП САНА

Ĕнтĕ вăхăт иртет, вăхăт иртет,
юрламасть тăри те уй-хирте.
Манмăп сана, çутă сăнна,
тусăм, санăн ăшă кăмăлна.

Кайăк хурсем вĕçрĕç кайри мала.
Ĕнтĕ уйрăлатпăр, каймалла.
Манмăп сана, çутă сăнна,
тусăм, санăн ăшă кăмăлна.

Сад пахчи виç хутчен çеçке таксан,
сар хĕвел пек килĕп çаврăнса.
Манмăп сана, çутă сăнна,
тусăм, санăн ăшă кăмăлна.

*1957.*

## ИНÇЕТРЕН

Вăрçа мар, атте пек,
стройкăна эпĕ кайнă.
Пурпĕрех сăнунта
пысăк тунсăх тăрать палăрса,
лăплансамччĕ, аннеçĕм,
малашпа савăнасчĕ халь санăн,
хуйхă-суйхăсене
манăçа хăварса.

Йăвунтан çамрăклах
вĕçсе кайнă пулсан та,
йăнăшмасть-ха чĕппӳ,
ан кулян,
ан хăра.
Сăнару кăтартать ырă çул,
тĕрĕс çул хуть хăçан та,
сăнару çăлтăрла çуталать асăмра.

*1957.*

## Шанчăклăх

Çулталăк çурă çак портра
кĕтсе илет те ăсатать
юлташăма пĕр Атăл хĕрĕ.
Сахал-и тĕнчере кăтра?
Кăвак-кăвак куçсем тата?
Чечен пӳ-си? Çĕршер, пиншерĕн.
Портсем те йышлă Атăл çийĕн.
Никам чармасть: çĕнрен туп, сивĕн...
Анчах ун пек çын мар юлташ,
хам пек вунçиччĕри чăваш.
Çулталăк çурă çак портра
кĕтсе илет те ăсатать
юлташăма сар вырăс хĕрĕ.
Рейс тăршшĕпе тус – ман патра,
сăввисемпе шалт аптратать.
Тек тунсăхлать хăй, кунĕн-çĕрĕн.
Тунсăхлама тур чăтăм патăр! –
хирĕçлемест шӳт тунине...
Пăхса тăмашкăн юрататăп
вĕсем епле тĕл пулнине.

*1957.*

## Ҫĕнĕ ҫул юрри

Килет Ҫĕн ҫул, туять вăл,
хăй ҫĕннине туять.
Каять кив ҫул, каять вăл,
кивелнĕрен каять.

Килех, Ҫĕн ҫул, килех.
Ан юл, Ҫĕн ҫул, кая.
Кив ҫул, пĕлтĕрхилле
каях пиртен, каях.

Хĕл Мучине мухтар-и,
Юрпикене ырлар.
Алран-алла тытар-и,
Ҫĕн ҫул юрри юрлар.

Залра сип-симĕс чăрăш,
ҫап-ҫутă теттесем.
Паян, юлташăм, тăрăш
выляс-кулас тесе.

Ĕҫлетпĕр, вĕренетпĕр.
Хăюллă шав-шавах.
Татах ҫĕклесчĕ тетпĕр
юратнă ҫĕршыва.

*1957.*

## *Уйăх*

Тăратăп сывлама та хăраса
çӳл тӳпене çут уйăх хăпарсан.
Хаваслă эп, хаваслă
ёмĕрне манмаслăх, –
тăрап куçа чарса,
çут тĕнчене манса.
Ухх... мĕн тери мăнаçлăх,
мĕн тери мăнаçлăх,
мĕн чухлĕ вăрттăнлăх çӳрет унта!
Мĕн чул хăват унта пырса вырнаçнă!
Сăпай мăнаçлăх,
вилĕмсĕр мăнаçлăх,
эп хам та вилĕмсĕр сан умăнта,
эп – иксĕлми, эп çӳллĕ те инçе
çурхи тивлетлĕ уйăх çутинче!

*1957.*

* *
*

Кантăкран курăнать анлă Атăл,
çырантан пуçланать сĕм вăрман.
Пурнăçа Атăл пек эп куратăп,
анлă пултăрччĕ, вăрăм вăл ман.

Вăрманта аташма та час пулĕ,
çул тупасчĕ, утасчĕ инçе.
Çитĕ савнăç е хуплĕ куççулĕ –
пурпĕр савăк мана çут тĕнче...

*1957.*

# *Хĕр уйăрни*



## ЙĂВАН САЛТАК

*Юмах*

Çичĕ тинĕс леш енче
кивĕ пĕчĕк пӳртĕнче
карчăкпа старик тахçан
пурнăçланă пурнăçа.
Çитнĕ тăнă çитмĕле:
ĕнтĕ вăхăт – вилмелле.

Ватăсем кĕтмен пачах –
çуралать вĕсен ача.
Ачи – ывăл. Тем шутпа
ӳссе кайнă минутпа.
Ачи вăл ачах пулнă,
анчах ухмахрах кулнă.
Ухмахпала мĕн тăвăн:
вăйĕ пур та ăсĕ çук.
Старикпеле карчăкăн
кулянман самант та çук.

Ак ача васкавлăн ӳснĕ,
эрнерен пĕве те çитнĕ.
Арăш-пирĕш вăйлăран,
панă ят ăна: «Йăван».

Ашшĕн пулнă ылтăн çĕрĕ.
Хăйшĕн çеç ун тĕлĕ-йĕрĕ
паллă пулнă. Ачине
вăл калать чĕнсе пĕрре:

«Эсĕ унпала, ачамçăм,
усă та курма пĕлеймĕн.
Сана мар ăна пиллетĕп,
мăнука вăл пултăр, тетĕп.
Хĕн-инкек килсе тухсан,
тинĕсе эс çул тытан».

Пĕррехинче, ак, çĕрле
ĕç килсе тухать епле:
хура хăмăр ват кĕсре
хăм хăмларĕ витере.
Анчах çапрĕ чĕмере,
вилчĕ ирхине кĕсре.
Çав кунах темле чирпе
вилчĕ Йăван амăшĕ,
вилчĕ ырă ашшĕ те.
Вилес умĕн çĕррине
пачĕ хайхи ывăлне.

Йăвана салхулăх пусрĕ.
Ак качакине вăл пусрĕ.
Ватă ашшĕ-амăшне
тирпейлесе пытарчĕ.
Çу та иртрĕ унтанпа,
çитрĕ пĕр çулталăк та.
Çара кайма сасартăк
такам приказ тыттарчĕ.
Пуç усмарĕ çак Йăван,
шикленмерĕ приказран.
Ӳссе çитнĕ ăйăрне

утă-улăм çитерсен,
ылтăн куçлă çĕррине
хăйпеле пĕрле илсе,
тухса кайрĕ салтака
питĕ инçе, аякка.

Хапхаран вăл тухнăччĕ,
умĕнче çут тинĕсчĕ.
Çутă тинĕс хумханать.
Хумĕ темĕн çырăнать:
«Эх, Йăван, Йăван, Йăван...
нимĕнех те эс курман.
Хĕн килсессĕн, ан пытан,
çĕрĕ витĕр ши! тутар».
Йăван хытă тăнларĕ,
пĕр сăмах та манмарĕ,
утне чĕввĕн тăратрĕ,
çавра çил пек тустарчĕ.

Авал çарта чухăна
этем вырăнне хуман,
шарт! çеç çапнă янахран,
вут-хĕм вĕçнĕ куç-пуçран.
Çав вутра çуна-çуна
майĕпен çак Йăвана
кирлĕ таран ăс кĕрет.
Пуçĕнче шухăш çиçет:
«Ăçтан çакна тек чăтас?
Тăшмана хăйне çапас».
Анчах килте Йăвана

май килмерĕ йăпанма.
Ăна чĕрĕллех тытма
патша çарĕ ыткăнать.
Тинĕс юрлать, кăтăрать,
пӳрт пек хумсем кăларать.
Çарсем çитрĕç кăпăрах.
Йăван тинĕсе тарать.
Кĕсъе тĕпĕнчи çĕрри
сиккеленет, туртăнать,
чăрсăрланса, урнă пек
кимĕ тĕпне вăркăнать.
Йăван тинех астăвать,
çĕррине ярса тытать,
витĕр пĕррех шăхăрать.
Çав вăхăтрах, самантрах,
ӳрăм-сурăм шавласа,
тухрĕ шучĕ çук салтак.
Ушкăн-ушкăн кайăксем,
пурте – хурçă çунатсем,
çĕнтерӳллĕн кĕрлесе
вут тăкаççĕ тинĕсе.
Ак Йăванăн хурçă çарĕ
карапсем çинче васкарĕ,
тăшмана çапса тылларĕ,
тĕпĕ-йĕрĕпе вакларĕ.

Анчах ӳкрĕ хăй Йăван.
Унăн кăкăр сывă мар.
Авкаланать, йăванать,
питĕ йывăр Йăвана.

Пётём тёнче хурланать:
мён пулнă шур хурăна,
саркайăк ма макăрать?
Сём вăрман та каш-кашлать.
Аслă çар салют парать –
тупă сасси ян! каять.

Ӳкрё, вилчё хăй Йăван.
Ячё манăçа тухман.
Тёрёс ёçшён тёнчере
пуç хурсан та, çын чёрех.
Ăна халăх хӳтёлет.
Халăхшăн вилни – телей.
Шыраман вăл чап, мухтав.
Савнă халăхёшён шав
чăн-чăн паттăр пек кёрешнё,
ирсёр тăшмана çёнтернё.

*1952.*

## ПАТТĂР ÇИНЧЕН

*Юмах*

1.

Упăшкипе арăмĕ
пурăннă тет тĕнчере.
Пĕри ĕçке ярăннă,
тепри шăпах чарăннă.
Пурнăç тени, чĕмере,
пыман ытла чиперех,
уксахланă, тайăлнă,
калама та пайăрлăн
пулман уççи-хуппине...
Çакă çутă тĕнчене
килнĕ вĕсем ма? Кала.
Калăп. Итлĕр малалла.
Курнă нуша-парăм çеç
упăшкипе арăмĕ,
пурнăç пулнă сĕм вăрман –
çутă кун, хĕвел курман.

2.

Ылттăн хаклă теесçĕ
ылттăна сăвакансем.
Сывлăх хаклă теесçĕ
пурнăçа савакансем.
Ылттăнăн та хакĕ çук
ăраскалу пулмасан.
Сывлăхăн та хакĕ çук
пурăнăçу ăнмасан.

Пурнăç пур-и хĕвелсĕр?
Пурăнăç çук хĕвелсĕр.
Пурнăç çук-тăк, мул та çук,
çавна та-и пĕлместĕр?
Арăмĕпе упăшки
йăлтах çука парăннă.
Юра ернĕ, аптрашки, –
упăшкипе арăмĕ.

3.

Элле таçта аякра,
таçта-мурта, шуйттанра
арçын телей шыранă –
туллиленмен, шăраннă,
хухнă-пĕтнĕ, начарланнă,
хырăмĕ пĕрмай чăрланă.
Пурсуйĕсене ертсе
вăрман тăрăх, уй урлă
вăл çӳренĕ виркĕнсе –
çӳрени те кăлăх пулнă:
супнă, нимĕн тытайман;
пĕрре çакă çын, айван,
темĕскерпе çапăçнă:
пичĕ-куçĕ – чĕп-чĕр юн,
ватă шăм-шакки те ун
ваннă, хуçăлнă; çĕр каçнă,
тăн çухатнăскер, инçе –
сĕм вăрманăн варринче.

4.

Ватсем пурăннă, пурăннă.
Тинех ывăл тупăннă.
Ывăл пит патмар пулнă.
Тавăрасшăн вăл çуннă:
«Атте, атте, кала-ха,
ăçта пултăн, пĕлтер-ха?»
Ашшĕ ăна итлемест,
вилес умĕн пĕлтермест.
Ача татах та ыйтать,
тархаслать вăл питĕрех.
Юлашкинчен леш пайтах
вăрттăнлăхсем пĕлтерет:
«Çапăçрăм эп тискерпе –
икĕ пуçлă çĕленпе».

5.

Кун хыççăн кун, ак, иртет,
ача кашни кун ÿсет –
çăкăрпа тăвар çиет
тата тăрă шыв ĕçет.
Кун хыççăн кун, ак, иртет,
ача çын пулса çитет.
Ашшĕнчен вăл çÿллĕрех,
ăстарах та меллĕрех.
Ун ик çирĕп алăччĕ,
вăйлă та хăватлăччĕ,
хальхинпе шутласанччĕ –
çĕр пăтпала вылятчĕ.
Кунсерен вăл ĕçлетчĕ,

ёҫне лайăх пĕлетчĕ –
сухалатчĕ, акатчĕ
улăп евĕр ҫав каччă.
Ашшĕ те ун вилнĕччĕ,
амăшĕ те вилнĕччĕ.
Ҫӳлти турă аллинче
пурăнатчĕ тăр-пĕччен.

6.

Пĕрре халăха каларĕ,
хисеппе чĕнсе лăпкарĕ:
«Халăх тарĕ, юнĕ – ёҫ,
вăл туптатăр ҫивĕч хĕҫ.
Тавра хурлăх эп куратăп,
савăнăҫа эп курмастăп,
ҫавăнпа та пуль калатăп:
хуйхă, терт ялан ан астăр.
Эй, халăхăм, халăхăм,
ҫавă ҫĕлен-кайăкăн
мĕнпур пуху пĕркине,
мĕнпур пурнăҫ йĕркине
йăлтах ҫапса аркатма
турă ҫырнă-ши кама?»

7.

Халăх, халăх, халăх вăл,
хурҫă ҫирĕп стена вăл.
Ертсе пыра пĕлсессĕн,
хăй тăшманне сиссессĕн,
хăйĕн ёҫне тăвать вăл.

Турри те мар, ним те мар
(кун çинчен юптартăмăр),
хура халăх тăшманĕ
питĕ сăхă патша вăл –
икĕ пуçлă кайăк вăл.
Çунатне каркаласа,
çут хĕвеле хупласа,
хĕвел кăкăрне сăхса,
пирĕн пата чир ярса,
чике тăршшĕ ларттарса,
хĕвел çинче пурнать вăл.

8.

Тĕнчери пур пек халăх,
çак сăмахран курмалăх,
халăх юнне шăратса,
пĕр çивĕч хĕç туптаса,
паттăра çӳле çĕклерĕ.
Паттăр çиçĕм пек çӳрерĕ,
çĕлене çапса антарчĕ,
халăхăн ĕçне ăнтарчĕ,
çунтарса кĕлне вĕçтерчĕ,
тарçисене те пĕтерчĕ:
касрĕ, чикрĕ, йăлт вакларĕ –
çĕр çине ним хăвармарĕ.

9.

Пур йăх-яха пĕтерсен,
хуйха-суйха çĕтерсен,
хĕвеле те хăтарсан,
ырă пурнăç çуралсан,

турă патĕнчи рай пек –
саркайăк шăратĕ тек,
аслă халăх савăнĕ,
ташлĕ, юрлĕ... Çавăнпа:
«Пĕттĕр пусмăр!» – терĕмĕр.
Терĕмĕр – çĕнтертĕмĕр.
Акă тин ĕнтĕ мăнаçлăн
çĕнтерӳллĕн те хаваслăн
тытăнать пурнăç тумашкăн,
юхăннине юсамашкăн,
киввине йăлт çĕнетме,
çуккине йӳнеçтерме.
Чăн та, пурнăç чиперленчĕ,
çурхи сад пек чечекленчĕ.
Çут хĕвелĕн ăшшинче
савăнать тĕнче!
Эпĕ хам та унта пултăм,
Улăп паттăра та куртăм:
вутран çивĕчĕ хĕçне те,
ирĕк халăхăн ĕçне те...

*1952 çул,*
*Саврăшпуç.*

## *Хĕр уйăрни*

*Поэма*

1.

Ах, çав музыка... Ах, çав эрех...
Урăлсан та, шухăшсем пĕтмерĕç.
Лăплансан та, туйăмсен пĕлтерĕш
юлчĕ, çунатланчĕ çаплипех.

Ӳсĕр чух темле майпа пĕрре
чун çемçелчĕ те, поэма çыртăм.
Тем суйлантăм... куртăм тĕтрере
ангела та, шуйттана та ылтăнăн.

Уçăмланчĕ пĕр тискер сăнар:
эсĕ мар, тăванăм, чун ӳпкевĕ,
эс ху мар чысна çĕре ӳкернĕ,
Марьене те пăснă эсĕ мар.

Туйăмсен мĕлки! Çухал, çухал...
Ан мухтан-ха, ан мухтан, Мария,
эсĕ мар çапах тĕнче варрийĕ,
эсĕ ман чĕрешĕн халь сахал.

Çакăн пек шутлать çур пуç, çуррийĕ
хуран пек сиксе вĕрет: «Мария
Павăл-савăла пулмасть, пулмасть.
Эс, Мария... ман тĕнче варрийĕ!»

Тапранать пуҫра хӗрӳллӗн латсӑр
харкашу, чамасӑр кӳлешӳ.
Лявапа ларатпӑр та шутлатпӑр:
кӗҫӗр «савӑла» тӑватпӑр ҫук.

Ҫимӗк каҫӗ. Пуҫӑмра, ак, Вакх
астарса ярать леш синкере.
Павӑл... Сӑптӑрам-и-ха хамах.
Ҫук, Лява малтан пырса кӗрет.

Ҫапнӑ та ӳкернӗ Павӑла.
Павӑл шутламан та парӑнма:
мӗн тесен те, икӗ ҫул вӑл аслӑ,
юласах килмен ун парӑма.

Лявана ая персе чикет.
Эп, ҫакна курса, картах сикеп,
тӑп чарса лартатӑп баяна:
утӑръя, ҫӑлар-ха Лявана!

Тӑнн! тутартӑм, Павӑл ҫухӑрать.
Хай, ҫӑлса илетӗп ҫухаран,
пуҫпала паратӑп янахран.
Халӗ ӗнтӗ каччӑ ахӑрать.

Кам чарать пырса? Кай, кай, ан ҫакӑн,
шкул директорӗ Леņкка Куҫаркин,
элегантлӑ ҫамрӑк педагог.
Яр, ан пӑр алла, ан пӑр, хуҫатӑн.

Павăл тарчĕ. Иккĕн Лĕнькка́на
çавăрса çапатпăр лап! кăна.
Кĕтесри кӳлленчĕке çапатпăр –
нихăçан типмен лачакана.

Çиçĕм хăвăрт, теççĕ. Çиçĕм мар...
Ман кĕпе те пĕртте çурăлман.
Сан, Лява? Атя, кайса çывăратпăр...
Эп, Лява, телейшĕн çуралман...

Ир-ирех кĕрлерĕ педсовет.
Педсовет çиет, тире сĕвет.
Аттене ятлаççĕ: «Ху вĕрентнĕ.
Ху ĕçтернĕ... Тĕрмере çĕретĕн!

Хĕрĕхмĕш çулта çакланнă пек,
çĕнĕрен чикетпĕр. Пĕтрĕн эсĕ».
Хуравлать атте: «Ун чух – репресси.
Айăпсăр-качкисĕр... Çавăн пек».

«Вăрçăран та, – теççĕ, – килтĕн сывă».
Леш калать: «Ак, курăр аллăма.
Пуçăрта арпа-и сирĕн, хывăх?
Шĕшлĕшĕн илетĕр чунăма!»

Ахаль чух йăваш чăваш, тинех
сывă аллипе кăтартрĕ чышкă.
«Слышь-ка, – теççĕ хайхине, – ты,
слышь-ка,
чун туртать-им прокурор патнех?»

Сехетрен килсе кĕрет Пăлюк.
Лявине кăкарнă. «Çакăр, – терĕ, –
ашшĕ Гитлер вăрçинчен килмерĕ.
Хам – вилеп. Пăхмашкăн халăм çук».

Йăлтăр митальне çатлаттарать
педсоветăн сĕтелли çине.
Ман Лява йĕмест, кулать ярать,
курман мар вăл педсоветсене.

Педсовет кĕрлерĕ виçĕ кун.
Тек пымасть унта атте-анне.
Аçтаха Наçтаçĕ – йытă чунь –
завучра тăратчĕ ун чухне.

Хăрататчĕ – шкул чĕтре тăрать.
Хăрататчĕ пĕтĕм ялйыша.
Эпĕ пултăм тăхăр «допросра»,
йăлт каларăм хамăн шухăша...

Кунĕпе ислетрĕ – тур вăй патăр
ывăлне касмашкăн аттене.
Тепĕр кун çĕклентĕм сывă, паттăр,
чылайччен тăнларăм аннене.

Допросра каларăм: «Эсĕр кашкăр,
кашкăр çеç çапла усал тăвать.
Эс, Ленькка, шăпрах, ытла ан кăшкăр,
района ярап ку ыйтăва.

Пурсăра та шăпăрпа шăлаççĕ.
Пит кирлех-тĕк, инçе мар Хусан.
Халь текех элексене шанмаççĕ,
такамран та кăларас хуса.

Юлташран ыйтатпăр каçару,
Ленькkаран вилсессĕн те ыйтмастпăр,
тĕлсĕр пăхланма вăл хăй те маçтăр,
йĕксĕке кĕтет-ха тавăру.

Вĕренни пирки паратăр справка.
Пур предметшăн та «отлично» чух,
пурсăрăр çине те лач! суратăп.
Çакă шкулсăр урăх шкул-и çук?»

... Поведенипе «пĕрре» лартса,
çичĕ предметпа тыттарчĕç те экзамен,
шкул çине хăвартăм ал сулса.
Районти шкула кĕме ăсантăм.

Çич экзаменран пĕри – «тăваттă».
Аçтаха Настаçĕн ĕçĕ ку.
Аксура, хай, «объяснять тăватăп».
Çут тĕнчен ыр секретарь те пур.

Йышăнчĕ шкула шкул секретарĕ.
Штош, вĕрен, тет, сывлăху пулсан.
Пăт! пăт! пăт! куçран куççуль тумларĕ.
Хурланса-ши? Е – хыт савăнса?

Ураллах темле майпа пĕрре
чун çемçелчĕ те, поэма çыртăм.
Тарăху капланчĕ чĕрере –
тарăхсан та чун юрлать-им çыннăн?

2.

Ял кĕр-кĕрлет – туй пулмалла...
Çитсе тăратăп час киле те.
Çăпатана туяпала
шак-шак! шаккатăп та, кĕретĕп.

Атте-анне туяваскать.
Эп, çикелеп те, – урама.
Лява та тухрĕ купăспа.
Тайкаланать хăй, урă мар.

Кĕретпĕр Нинуксем патне.
Улах. Нинук тата Тамара.
Нини писев сĕрет питне.
Хура кăранташне тупмарĕ.

Приколкипе айкашнă май
ман çинелле пăхать хăй вăрттăн.
Пăхин. Ун пеккине нумай
тĕл пултăм, манăçа хăвартăм.

Куçа илмесĕр, сывламасăр
урăххине сăнатăп эп.

Чăн... Тунсăхлать... Хăранă пек –
ун куçĕ. Кулăсăр. Хавассăр.

Мĕн пулнă? Ма чĕнмест саламлăн?
Çапла вăл ларĕ хăçанччен?
Сĕтел çине хĕр чавсаланнă;
асап – ик пысăк куçĕнче.

Асап... вунпиллĕкрех...
– Тамара!
– А?
– Кайрăмăр-и çаксемпе?
Çăматă тăхăнам та мар эп,
ботинкăпах тухам сан пек?

Хуткупăсне Лява йĕртет.
Сасартăк алăк шăлтăрт! турĕ.
Ленькка-директор, Мĕкĕте,
Çеруш та Ĕрешит тете
кĕреççĕ... Пурте вилĕ «урă».

Тамарăна тытасшăн пулчĕç
«савни» тесе мăшкăлласа:
– Курнăçланать-ха, кишĕр пуçĕ,
епле çӳрет кут алласа.

– Сторово! – теççĕ Лявана. –
Сторово, хаклă пуçана.
Тухса ларар та çатана,
шăпах пулатпăр пĕр çуна.

– Сторово, куккасен Мишши! –
тесе ал пачĕ Ĕрешит.
Алне эп шатăр! чăмăртарăм,
чĕнмесĕрех ирттерĕп-ши?

Туртса çапатăп. Ялт! сикет
краççын ламппи. Çапап тепре.
Лява тăрать те кĕтесрен
шаплаттарать купăсĕпе.

Кĕрслетрĕ Ĕрешит. Каппут.
Тухса тарать Çеруш-улпут.
Ленькка-директор, Мĕкĕте –
таçта çухалнă. Тĕсĕ çук.

Ытла ахлатнипе, хĕрсем:
пуçне шăтарчĕç пулĕ терĕç.
Шыраççĕ бинт та йод хĕрсе,
анчах юлман-мĕн йăхĕ те.

Тарăхнипе сиксе чĕтретĕп.
Пĕррех илеп те çухаран,
тухса перетĕп алăкран.
«Чĕресĕр, – тет Нинук, – чĕресĕр».

«Чĕресĕр? Юрĕ. Сывă пулăр.
Ак таврăнĕç чĕреллисем.
Хĕрхенĕр, шеллĕр, выльăр-кулăр.
Эп уттарам, черет çитмен».

Тамара куçĕсем – йăл-ял!
Карт! туртăнчĕ, сăмахĕ çĕтрĕ...
Тулта – туй-çуй. Кĕрлет çур ял.
Туя каяс – сăхманăм çĕтĕк.

Туя каяс – унта Маруç,
тахçан эп хам тиркенĕ фея,
мана кӳрет халь «тавăру».
Халь çак хĕр – Павăлăн трофейĕ.

Çутăличчен чĕретĕп хут.
Ним çырăнмасть. Лап! сӳнчĕ лампа.
Сисместĕп хам та, сĕнк пулатăп...
Çук юрату, çук тарăху.

... Иртет эрне, иртет çур уйăх.
Çаплах чун сӳрĕк, пуш-пушах.
Пур унăн хуйăх, хуйăх, хуйăх;
ыр ĕмĕт, савăнăç – çукрах.

Эп шанчăка йăлтах çухатрăм.
Эп кĕтнĕ юрату – суя.
Вăл проститутка пек хĕрарăм, –
питрен сурсассăн та кулать.

Пăсăлнисем тултан хитре,
текен сăмах ахаль тухман-мĕн.
Улт-çич савниллĕ çав «хĕре»
пĕр эпĕ çеç тытса курман-мĕн.

Тулли ун çӳллӗ кӑкрисем.
Сӑпсанни пек çинçе ун пилӗк.
Вӑл ман умран тепре иртсен,
ӳт тунсӑхне путса эп вилӗп.

Çав пулӗ пӗтӗм юрату...
Миçемӗш эп пикен, миçемӗш?
Ку – ӳт тӑранманни-ши ун
е «дух» тенин шырав-вӗçевӗ?

Ҫама шырать? Мӗнле çынна?
Ӑс-кӑмӑл улӑпӗ, о, Лермонтов,
сан куç çак пикере çунать.
Умран ӑна нихçан çӗтермӗттӗм.

Тамара, хуйхӑллӑ Тамара,
эп – çӑмӑлттай, тӳрккес этем.
Тек юрату ыйтасшӑн мар эп.
Пӗлетӗп: урӑх çын кӗтен.

Ман пеккисем тивӗçтерейменӗç,
тивӗçтерейменӗç леш «туссем».
Чун ирӗк чух çӳлтен çӳле вӗç,
хӗвел патнех çитес тесе.

Анчах мӗн-ма каллех тапранчӗ
манра вут-тӑвӑл, çил-тӑман?
Мӗн-ма чун ыратнин хӑвачӗ
кӗрлет ӳкӗнӳпе пӗр тан?

3.

Ак Çирĕкле персе çитетĕп
инкогнито пĕр шăмат каç.
Кĕреп те хăвăрттăн иртетĕп,
залра пулаççĕ шăпăртах.

Лява чĕрçийĕнче – Тамара.
Ав Аçтаха Çерушĕ... Чун...
Ав Мĕкĕте... Никам тăмарĕ.
Чим... Ёрешит тете... Вăл – çук.

Зал варринчи улт-çичĕ мăшăр
тăп чарăнчĕ мана пăхса.
– Ухх, – терĕ баянист, – ухх... ăшă,
канма та маннă каласа.

Ларакансем çĕкленчĕç кăпăр.
Йăрст! тăчĕç капланса ума.
Лява кулса тухать, ăнман:
– Ну мĕн? Салам, салхуллă кăйкăр.

Тамара çĕрелле пăхатчĕ.
Картах çĕклерĕ те пуçне –
чуна касса каять вут хачă,
анчах эп çĕнтĕм хĕр куçне.

Зал варрине хĕрпе тухатăп.
Çăвар карса юлать Лява.

Баян калаканни, Туктаров,
вальсне кĕрлеттерсе ярать.

Усал кухвайккăма хыватăп.
Çап-çутă атă кунчине,
кăшт авăнса, кăрт-карт! туртатăп.
Пурте пăхаççĕ ман çине.

О, иксĕлми мухтавлă вальс,
яш пурнăçăн таса тивлечĕ.
Ах, урасем çĕре тивмеççĕ.
О, вальс...

«Тамара, пурнăçăм... Куççулĕм...
Нарспиçĕм... Аслă, çӳллĕ-çӳллĕ
ман чун. Эп – эсĕ халь. Эс – эп.
Мĕн виличчен çапла эп çӳрĕп.

Сан асапу вăл ман асап.
Сан ĕмĕтӳ вăл манăн ĕмĕт.
Пулар хăюллă та таса, –
кун-çул сунать пăлхавлă ĕмĕр».

Тамара çакă шухăша
куçран пĕрре пăхсах ăнланчĕ...
Тăхта! Кам йытă? Хăшĕ – анчăк?
Лява? Мĕскер вăл çухрашать?

Ах, çĕçĕпе... Кунта килесшĕн.
Туссем ямаççĕ. Питĕ шел.

Каятăп хам, шуйттан илесшĕ:
– Перчатки брошены! Дуэль.

Çат! çатлатать ик перчетке
залри вĕр-çĕнĕ урайне:
– Кам секундант? Ма çĕçĕпе?
Тен, чышкă, çĕçĕ вырăнне?

Лява мана питрен сурать, –
ал тутрипе майпен çеç шăлтăм.
Ярса илетĕп çухаран.
Çапмастăп. Юрĕ. Пур-ха чăтăм.

Кайран Тамара ăсатать
вăрман хĕрне çити мана.
Эп... Хамран хам эп ăс ыйтап,
тем каласа сĕм вăрмана.

Тамара тупсăмне пĕлесшĕн
чĕре те, пуç та пăтранать:
«Кампа çыхлантăм эп? Вăл мĕншĕн
вунпиллĕкри хĕр пек те мар?

Кампа çыхлантăм? Куçĕнче
мĕн-ма вĕçĕ-хĕррисĕр хуйăх?
Çапла эп ыйтăп хăçанччен,
хăш самантчен ухмахлăх туйăп?..»

Хуравлаймастăп Аксура та.
Çав хĕр магнит пек туртнине

сиссе илетĕп те, куратăп –
çаклантăм тигр аллине.

4.

Кунсем тăманлă та хавассăр.
Класра ларатăп – кăсăк мар.
Юлташ кĕрет – çыру хăварчĕ.
Вулатăп... Ырă мар хыпар:

«Эс кайсанах Тамарăпа
çӳре пуçларĕ Мĕкĕте.
Тамари те хыт юрататъ
хитре те çӳллĕ йĕкĕте».

Инкек! Суя-ши, чăн-ши? Ах!
Шăмат кунччен епле пурнас-ши?
Эппин асту, Майрук тавраш ĕ,
ытла хăлаçланан... Шăпрах.

... Çул йывăр. Çитрĕм тăххăра.
Каçхи урам. Туктаров курчĕ:
«Тамуç? Пĕччен кайма хăрать.
Халь Мĕкĕте ун ăсатуçă».

– Хăçантанпа?
«Ак, пĕр эрне».
– Чăнах-и илнĕ çĕррине
е хăй, Тамара, парнеленĕ?
«Паллах, Тамуç... Мĕн тĕлĕнен?»

Пĕр-пĕчченех Çирĕклелле
каллех çул тытрăм... Клубĕ хупă.
Сырма енче çĕмĕрттерет
«Подгорнăй» кĕввине хуткупăс.

Çирĕклĕхрен сукмакпала
çав купăс çинелле чупатăп.
Ак тамаша! Мĕн япала?
Миçен пĕр мĕлкене çупатăр?

Кама – кулач? Хĕр уйăратпăр?
Тамарăна? Миçе пая?
Тусна хăлха чикки паратпăр?
Тамуç пулать Минтăпая?

Кам? Минтăпай? Тавай, тавай.
Эй, Мĕкĕте, сывах-и, тусăм?
Çапла! Çапла!.. Тата пĕр пусăм...
Тепре! Хӳтте тăр, куçнă май!

Кăшт кан. Юнна шăлсам. Итле,
боксер. Çапла! Ан ӳк. Хыçа тăр.
Çирĕклĕсем, ай-яй хитре
ман тус-тăшманăма хыçатăр!

– А ну, сысна, ăçта кĕрен?
Сана мĕн тунă Мĕкĕте?
Мĕнпе çапатăн йĕкĕте?
Аха! Тутантăн? Ан кӳрен.

... Хашка-хашка вăрçа кĕретпĕр
Мĕкĕтепе, пĕр вăй пулса.
Туртса илеп те купăса,
купăссинех «парне кÿретĕп».

Шăп пулчĕ... ахлатса выртать.
Тăваттăнччĕ. Халь виççĕн юлчĕç.
– Тамарăна хăтар та, юх эс! –
тени кĕрлет ман çăварта.

Тараççĕ... Йывăр пĕччене.
Çĕнме пулмасть-тĕр. Самбо кирлĕ.
Минтăпайне çапатăп вирлĕн –
тĕлех лекет, сăмсинченех.

Чим, çĕçĕ кăларать. Тапатăп.
Пĕтĕрĕнсе ÿкет çĕре.
– Эхей, пытарăр çĕççĕре!
Çĕçĕсемпе пулсан – таратăп.

Аран тухатăп çăлăнса.
Вăрман енне пăлан пек кайрăм.
Чун тарăхсан, чупма ансат,
уйрăммăнах аван – çил майлă.

Çĕр çăтрĕ тейĕн, Мĕкĕтен
шăрши те çук. Мана кĕтмен.
Тамарăпа хальччен тăмасть-ши?
Пултарĕ те... ăнман этем.

Тулать те çиллĕм капланса,
хăрушлăха каяп манса.
Çирĕклĕхе калла килетĕп
разведчик пек асăрханса.

«Тăшманăмсем» инçех те мар –
çаплах шавлаççĕ. Умăмра,
сăртра, шкул çурчĕ палăрать.
Шăлать, улать тискер тăман.

Шкул çумĕнчи пӳрт чӳречи
йăлл! сутăлчĕ. Хура мĕлке
унта çывхарчĕ. Çил ачи
юрларĕ тĕрлĕрен меллпе...

Пытантăм ват юман хыçне.
Ха... карăнать. Каяс, паллас.
Шур çĕлĕк... Минтăпай пулас?
Çапла... Ярса тытать «хĕçне».

– Юрать, юрать, лăплан, ан хирĕл.
Çынсем çывраççĕ, пул шăпрах.
Чĕнсе кăлар, Тамара кирлĕ.
Эс мĕн, тăванăм, шап-шурах?

Харкашмăпăр. Сăмсу тӳрленĕ.
Эп килтĕм питĕ инçетрен.
Хам мар-çке, тарăхнă чĕрем
сана сăмсаранах тĕллерĕ.

Хĕре чĕнер-ха, хăйĕнчен
ыйтса пĕлер: кама хаклать вăл.
Эп мар, эс мар, вăл çеç хăватлă
çак кăткăс самантра, ĕнен.

... Çут сÿннĕ. Ахале сÿнмен-тĕр.
Тем шăлтăрт! турĕ хапхара.
Мăкăртатса, эпир сисмен те –
пике умра тăра парать:

«Мĕскер? Мĕн кирлĕ? Ой, Мишша...
Тăванăм...»
– Эпĕ кам, Тамара?
«Ах, Минтăпай? Бабай, ишшак.
Каларăм-çке сана, каларăм.

Мĕкĕтепе чухнех каларăм:
савма саватăп, чун туртмасть».
– Эс халĕ ман почти штă арăм.
Апла... ма патăн чуптума?

«Ах, кай-ха, сассуна илтсен те
йăш-чикĕм пăтранать, шăплан.
Эс те Мĕкĕтеллех кĕсел-тĕр,
ялан макран, ялан таран».

Лаштра юман – хура, патвар.
Эпир ун хÿттинче. Тамара
Минтăпая каллех ятларĕ:
«Сыв пул, сыв пул, тавай уттар.

Ман юрату ячĕпеле
эс Мишшана тăван пек йышăн.
Ахаль те ун çулне пÿлет
усал-тĕсел виçесĕр йышлăн.
Ун чух çеç пулăн чăн-чăн çын...»

Çапла ăс вĕрентсен Тамара,
яш каччă нумаях тăмарĕ.
Юлать тăман çеç – чун уççи.
Телей те пур-тăр тĕнчере,
телей кĕтсе чылай эп ыртăм.

... Вара темле майпа пĕрре
çĕклентĕм те поэма çыртăм.

*1957 çул,*
*Саврăшпуç – Аксу.*

# ПИРВАЙХИ ТĂВĂЛСЕМ

*Поэма*

## УМĔНХИ

Чун-чĕрен яшлăхри пирвайхи тăвăлĕсем...

«Пирвайхи тăвăлсем» поэма геройĕ Мишша çамрăклах хăйĕн малтанхи юратăвĕнчен мăшкăлласа кулнине, тӳсме çук хура элеке чăтса ирттерет, тӳссе пурăннăçемĕн пурнăçри хура вăйсене курайми те курайми пулса пырать. Шкул пĕтернĕ çĕре вăл çут тĕнчери çынлăхпа юрату тăшманĕсене витĕр курса тăрать ĕнтĕ, вĕсене хирĕç тан мар кĕрешĕве тухать...

1.

Хĕрача куллисем!
Чуна çуттăн кĕрсе
çутататăр эсир урама.
Çивĕтсем, çивĕтсем,
çеçке çурнăскерсем,
мухтăп-ха эп сире пĕрре мар.

Çивĕтсем, çивĕтсем,
юхĕ сирĕн сăвапăр
чаплă кĕвĕ пулса,
сăввăмпа килĕшсе,
çепĕç хуçăрсене чечеке çавăратăр
астра пек, мăкăнь пек, пион пек
тĕлкĕшсе.

Çĕр халь çеç сывпуллашрĕ-ха
юр-тумĕпе.
Ир-ха, ир ешерме,
вăрман-улăх çара.
Кĕленче савăтра шыв çăтса тăнипе
улмуççи хуллисем – çулçăра.

Юлташ амăшĕн ку.
Май уявĕ тĕлне
вĕсенчен чечексем тăвăп, тет.
Чечексем, чечексем!
Çуркунне, çуркунне!
Ват çынна та лăпкать, илĕртет.

Çуралать-и этем – чечексем ун ятне,
çитĕнет – чечексем,
юрату – чечексем,
паттăра-и тухать – чечексем, чечексем;
чечексем – ватăлсан,
вил тăпри – чечексем...

Чечекре эп туятăп
чĕре хăватне,
иксĕлми çамрăклăх
вĕресе тăнине.
Çавăнпа ĕмĕрех
сире мухтăп, хĕрсем, –
эп сире, çивĕтсем,
çеçке çурнăскерсем...

## 2.

Йывăçран пуян-çке
Аксу пахчисем.
Çулçă, ав, çураççĕ
шкулăн сачĕсем.

Пĕр çĕрте, садра ман
савнă вырăн пур.
Мĕншĕн вăл тĕле пит
эп юратрăм пуль?

Шăплăха-ши саврăм
е кичемлĕхе?
Çук, унта иленчĕ
пĕр çап-çамрăк хĕр.

Шăпчăк пек юрлать вăл
çурхи каçсенче
ман тĕлтех, асамлă
уйăх çутинче.

Пытанса итлетĕп
хĕр çывăхра чух.
Патнерех пымашкăн
чĕптĕм халăм çук.

3.

Вутла çунтар, Кармен илемĕ,
амант эс шухă чунсене.
Венера тыткăна илейрĕ,
хускатрĕ манăн чĕрене.

Çак вăхăтран çухалчĕ канăç:
чĕнместĕп нимĕн, сăнăм çук.
Кĕтеп: хăçан телейĕм анĕ?
Телейĕм ман вăл – курнăçу.

Венерăна, ав, Радда тесшĕн,
Кармен вăл, тет, тепри темме.
Венера кашнинех тиркесшĕн,
Венера юратас темест.

Вăл чаплă Асхата савмарĕ.
Нимскер те çавăрмасть пуçне.
Миçе чĕре хыпса çунмарĕ –
çунать-çунать те... лап! сӳнет.

... Çил пaçăр ăшшăн çеç вĕретчĕ.
Ак халь, вăйланчĕ те, туллать.
Тен, купăсçă та, леш, чĕтрет-тĕр
сив çил лăсканине пула.

«Шăнмарăн-и, Венера? – тетĕп. –
Ав уйăх тухрĕ... ав ишет».

Венерăн çӳçĕ варкăшать те,
мана çав питĕ килĕшет.

Пике хăй кил умне çитсессĕн,
ал патăм эпĕ уйрăлма.
Венера ним чĕне пĕлмесĕр
шур хут хăварчĕ аллăма.

Çил ачисем вĕçсе иртеççĕ...
Кĕсъе хунарĕн çутинче:
«Юлташăм, эсĕр сăвăç, теççĕ, –
вуларăм эпĕ хут çинче. –

Юлташăм, эсĕр сăвăç, теççĕ.
Ыйтатăп сăвă эп сиртен.
Ман сирĕн сăввăра илтесчĕ
çил-тăвăл ахăрнă çĕрте.

Эп ыйтнă сăвă кĕр-кĕрлетĕр –
пур тăвăлран хăватлăрах.
Унпа усал чунсем чĕтреччĕр
кив пӳрт чĕтренĕн тăвăлра».

4.

Венерăна, чăнах, Кармен
тесессĕн тĕрĕсрех пулать-тĕр.
Ачи эп ахаль чух пит паттăр,
халь, ак, хăрап сăмах чĕнме.

Чуна витет синкерлӗ куҫ.
Епле ҫиҫет, епле ҫунать вӑл.
Пӗрре туяп хама ҫунатлӑ,
тепре сисеп: ҫухалчӗ пуҫ.

Хулран тытасчӗ – халӑм ҫук.
Мӗн пытарас, эп ҫӗтӗк-ҫатӑк,
чӗлхе те тӑм ман, калаҫатӑп
начар – шӳт мар ҫав курнӑҫу.

Кӗпер ҫинче мана Асхат,
чи ҫывӑх тус, тутар малайӗ:
«Пӑрах, – тет вӑрттӑн, – ан хускат
чун-чӗрӳне, харама кайӗ.

Ҫут тӗнчере ун пек ухмах
курман. Калаҫ – тӳрех сисетӗн.
Виҫӗмкун каҫ миҫен сӳсе те
тӑрантайман. Ак эп... хамах...»

Юлташӑма куҫран пӑхатӑп,
чаратӑп тутарлах: «Рехмет,
шанмастӑп. Калаҫтарӑп хазӗр...»
«Кармен» ӗхӗлтетсе илет:

– Мӗнле чӗлхе ку? Браво, браво.
Эс, Михаил, чӑн-чӑн джигит...
Асхат хушса хурать: «Вӑл – Байрон.
Эс кам? Кармен. Чикан пики.

Каçар та, Мишеле сана
памастпăр – ачана пăсатăн.
Ӳсĕрпеле май çук хăсатăн.
Ха! Поэтах-çке хапсăнан?!»

... Чăнах та, Хусанта кăларчĕç
çапса пĕрремĕш сăввăма.
Туссем халь шӳтлесе кулаççĕ,
поэт, теç... Байрон... Ырă мар.

5.

Виç «блатарь» мана пĕррехинче –
Вася, Сеня та Асхат – куç хĕсрĕç:
«тутанса» пăхас килсен, енчен,
пыр – отказ памасть çав майра хĕрĕ.

Юрĕ, терĕç, Вася хыççăн пул.
Вăл, эсрелĕ, Сеня хыççăн пулчĕ.
Хырăм пăрахтарнă Сеня у.
Мĕн вăтанмалли сан, кишĕр пуçĕ!

Пулчĕ тепĕр каç уллах, уллах.
Вася кайрĕ уллахран чăлах.
Чим-ха кам çумне мана вырттарчĕç?
Эп те кайрăм... тем чуна уртарчĕ.

Кучĕпе пуçа çавăрнă май,
ман çинчен шутлать-и çакă аскăн:

тăранать те – Асхатах милай,
çĕнĕрен-çĕн каччăпа кусасшăн.

Васьăна хăлха чикки парса,
хĕрĕнкĕ «Кармен» çине выртмарăм.
Суккăр эпĕ! Çак усал хĕрарăм
идеал-и? Пĕттĕр вăл – ясар!

Асхата тинех ĕнентĕм, ак.
«Пăсăлнă» Асхат мана юнарĕ,
Васьăна амантнăшăн ятларĕ.
Уçрĕ куçăма эсрел. Тавах.

6.

Чĕреçĕм, канăçсăр чĕре,
санра ялан Чăн Юрату çӳрет,
анчах туссем курнăçланаççĕ латсăр.
Йĕреп. Йĕретĕп эп. Ним палăртмастăп.

Сивлеççĕ, çыхăну тытмаççĕ,
кулма кăна, кулма, кашнийĕ маçтăр.
Çапла, тек çырасси пулмасть.
Сыв пул, эй, муза. Çырăнмасть.

Эп Байрон-и? Çук, çук, туссем.
Эп гений мар, пуçларăм çеç эп.
Мăн кăмăллă? Куçсем çиçеççĕ?
Апла чăнах поэт пуль тем?

Чашлаççĕ, çĕлен пек, шăл витĕр,
часрах ята ярасшăн питĕ,
кашни усаллăн шăл йĕрет,
эп вăрă, тет, поэзире.

Чĕреçĕм, ăнăççăр чĕре,
санра ялан тус мăшкăлĕ çӳрет.
Савни те, сĕтрĕнчĕк,
кулать манран, калас-тăк.
Йĕреп, йĕретĕп эп,
анчах ним палăртмастăп.

7.

Курса тăранайми сăнатăп
аристократ пикесене.
Пырса чикмешкĕн сăмсана та
эп именеп – вĕсен класне.

Краснова – калăн, Иоланта,
куçран пăхать – сиплет чуна.
Юлташĕ, Зотова, унтан та
чĕнӳллĕрех; чĕре çунать.

Анчах ăна эп савни мар,
ыр йăмăк тăвăттăм, çут çăлтăр,
пĕрле çунма та савăнма.
Пулмасть пуль çав, пулмасть пуль,
çук-тăр.

Ах, Зотова, Валюша тусăм,
çав саккăрмĕш класран эс çеç
çумра утан хаваслăн, уççăн,
ман музăна хыт ĕненсе.

Вырсарни каç РДКра
ташлас ĕмĕтсене директор
приказ çыра-çырах чарать те, –
ташлакалатпăр, ху куран.

Ăçтан эс ман чуна иленнĕ,
ытла та ăслă-çке чуну.
Епле çав таранччен илемлĕ
туса çуратнă-ха аннӳ!

Çивĕтӳнти бантна юсам-ха,
пĕр шурă лĕпĕшне... тăхта.
Эс, Валя, чи хитре юмахăм,
тен, пулăн чаплă юррăм та...

Ягунина алхастарать
ӳт тунсăхне. Пӳ-сийĕ чăмăр,
тулли, яштак. Ăс-пуçĕ – çăмăл.
Утма та... ясарла утать.

Çапах Краснова çывăхрах.
Поэзи сăнлĕ пулнăран-ши,
куллен çунап ăна курасшăн?
Тен, çунтарать калас сăмах?

8.

Хальхинче шăнкăрав йăнăшман-ши,
шăнкăрав сасси мĕншĕн халь тин?
Çутă телей эсĕ, Линăçăм, маншăн,
маншăн эс пурнăç çути.

Пирĕн сăнсем тĕл пулаççĕ.
Сÿнчĕ куллу, ав, сан.
Тем систерсе куçусем йăлтăраççĕ –
вутлăн, чуна çунтарса.

Уроксем вĕçленсен те нумай вăхăт
темшĕн
уйрăлса каяймастăп шкултан.
Сан сассуна эп илтесшĕн,
чун ешерет – куллунтан.

9.

Ах, Лина, мĕн тăвам сана:
ху кураймастăн – тĕмсĕлсе пăхан.
Эп йăнăшрăм; кам ăмсанать
ман шăпана, çав çын айван.

Эс картманни чуна касать.
Яланлăх пулĕ ку асап.
Тăратăп эпĕ шалкăм çапнăн.
Мăн кăмăл çĕтрĕ. Эп çуралнă

сĕм вăрманта. Халь туйăм-капкăн
упан мĕкĕрттерет пĕр авкăм.

Сӳнет поэт чунри хавассăр.
Ятлан мана, каçараймасăр.
Пĕтерчĕ пуль йăлтах элек.
Малтан пурте эсир хисеплĕн
«поэт» та, «Байрон» та тесеттĕр.
Мĕн пулчĕ халь? Шуйттан пĕлет.

Эх, Гамлет чăтăмĕччĕ, унăн
шеллевсĕр чăрсăр ăсĕ халь –
мĕнле хĕрӳн те киленӳллĕн
эп çапăттăм ултавлăха!

Анчах та, çемçескер,
каллех хурав ыйтатăп,
кирек мĕн çыр, анчах сăмах çыр –
виç-тăваттă...

## 10.

Эп саврăм çак шкула чунран.
Вун çул эп çакăнта çӳрерĕм,
ăс пухрăм, тăрăшрăм, итлерĕм.
Пит йывăр уйрăлап унран.

Ĕнтĕ манран ачалăх кайрĕ.
Вунулт çул тулнă кунăмра

йӑлкӑшакан чӗре кӑварӗ
ҫӗклерӗ ҫулӑм чунӑмра.

Ҫынна халь ӑнланатӑп хӑвӑрт:
тӑрӑхласа ҫыраттӑм сӑвӑ
вӗҫкӗнсене-мӗскӗнсене,
вӗренӳри кахалсене, –
нумай та вӑхӑт иртмӗ акӑ,
килме пӑрахӗҫ асӑма та,
анчах та манмӑп ӗмӗрне
хама ыр тунӑ ҫынсене.

Тата –
ҫак уйӑх ҫутинчи
каҫхи Аксун тӳлек тӗнчи
саркайӑка тӑнланине,
тем анлӑш улӑхсем ҫине
ҫӗкленнӗ шурӑ тӗтрене,
умри тирекӗн ҫулҫине
ирпе уҫ ҫил вылятнине
асилӗп эп ҫине-ҫинех.

11.

Шап-шурӑччӗ садсен ҫеҫкисем,
сисмерӗм те вӗҫсе пӗтнине.
Халь кунтаччӗ, туссем, халь манпаччӗ,
сисмерӗм те пӗччен юлнине.

Уйăхăн та кураттăм эп сире,
хĕвелĕн те кураттăм эп сире.
Ӳтĕмех те пĕтĕ – шăммăм юлĕ,
çавăн чух та манмăп эп сире.

Иртнĕ илĕм-тилĕм çамрăк вăхăт –
куç хупсан та курнан мĕлке пек.
Савни пекскер, халь те чаплă çӳрен,
юмахсенчи патша хĕрĕ пек.

Анчах çунмасть ĕнтĕ чĕрем, шурмасть
сăнăм.
Хăçан кĕлрен вутă пулни пур?
Пĕртăванччĕ чунпа, халь сивĕнтĕм.
Асра малтанхи çеç эсĕ пур.

Ахаль чух та туяп эп çакна,
тĕлĕкре те курап эп çакна.
Ĕмĕрех те иртĕ, ватлăх çитĕ,
çавăн чух та манмăп эп çакна.

12.

Пулаймастăп хампа хам та пиллĕ.
Пиллĕ çеç ăçтан пурнайăн-ха?
Кама кирлĕ çакă, кама кирлĕ,
кам ман пеккине юраттăр халь?

Пĕр тĕлте вăраххăн лараймастăп,
çĕршер çухрăм çаврăнса килеп.
Каç çитсе ирпе-ирех алпастăн
çухалмашкăн таврăнап киле.

Мĕн шыратăп? Мĕн çитмест? Калаймăп
халлĕхе. Калаймăп, ват анне.
Ятлăсăн. Пĕлтермĕ пурпĕр айăп
мĕскере пула ăш вĕçнине.

Çун эс, чун, пăлхан... Эх, халь çитесчĕ
Каспий, Ашхабад таврашсене.
Пĕр поэт унта çӳренĕ, теççĕ,
пусман чух ури çине ĕне.

Ах, туймашкăн хĕвел витĕр тăвăл
эпĕ пĕлнĕ пуль мĕн ачаран...
Хăрамастăп, çирĕп манăн кăмăл,
ан чармаклăр сивĕ куçăра.

Çамрăклăх, ачалăх – уçă, паллă.
Ыттине курман-ха, паллашман.
Иртĕ ĕмĕр, çĕр çултан та калăп:
ыйхăллă чĕре – мана тăшман.

Çĕр çултан та, йĕксĕксем, сире эп
канăç памăп, çĕмĕрĕп ялан.
Ак каллех эп инçетре çӳретĕп –
вĕçнĕçем çунат тĕреклĕ ман.

13.

Çивĕтсенчи ик пысăк лĕпĕш
сенкер, шап-шурă та кĕрен.
Чăнра курса тăранаймастăм,
курма пуçлаттăм тĕлĕкре.

Сăн-пит – çĕн уйăх пек вĕр-çĕнĕ.
Çурхи ир пек унри уяр.
Пӳ-сийĕр хăмăшпа пĕр çемĕ
хумханнăран чунра – уяв.

Чипер айванлăхлăн, тӳрремĕн,
тин курнă евĕр тĕлĕнсе,
куçа чарса пăхнин илемĕ
умра тăрать тĕрĕленсе.

Кĕрхи çилсем харкашнă майăн
кичеммĕн шкул бульварĕнче
чĕвĕлтететтĕр çумăр витĕр
миçен пĕр сунчăк айĕнче!

... Каç ларнă юр. Ах, юр, атьсемĕр.
Никам иртмен-ха таптаса.
Пĕрремĕш юр. Çак çут юр евĕр
ят-чысăр сирĕн тап-таса.

... Çу каçĕнче йĕтемĕн – савăк,
ĕçчен те йышлă çутисем.
Темле пит чаплă хапрăк-савăт
ларать ку, тейĕн, çĕкленсе.

Епле сире ытараймастăм
эсир унта шавланă чух!
Каять те вăхăт – тавраймастăн:
йĕтем те халь, эсир те çук.

Сире хуйха эп палăртмарăм,
палăртмаллаччĕ – савнăçа.
Кайран та ним те калаймарăм,
каламаллиййĕ пулнă çав...

## ЮЛАШКИНЧЕН КАЛАНИ

Умра – сĕм вăрман пек малашлăх. Унта аташса кайма та, ÿксе ĕнсене хуçма та, пуçа çухатма та пулĕ. Епле пулсассăн та, турă мĕн пÿрнине курмаллах ĕнтĕ, килес тăвăлсен айĕнче хуçăлса ÿкес марччĕ кăна. Вĕсене парăнмасăр çĕнтерсе пыма, эй пулăшсам, пÿлĕх, вăй-хал, ăс-тивлет парсам, пĕтме ан пар.

*1956 – 1957 çулсем,*
*Аксу – Чистай.*

## ТУПМАЛЛИ

Иван ЕГОРОВ. Ир палăрнă талант.

**Чăнах-ши вăл, ача чухне...**

Пĕччен хурăн 11
Танташсем 12
Качака 13
Çырма 14
Каç пулчĕ 15
Хытă чирлесен 16
Хĕлле 17
Юр çусан 18
Шăллăма 18
Мулкач 19
Çуркунне 20
Шывармань 20
Эп вилсен 21
Çулла 22
Ирхине 23
Çăлкуçĕ 23
Туляпа Çина 24
Уйрăлу 25
Учитель 26
Манăн ĕмĕт 27
Уйăх пытаннă... 28
Çĕрле 29
Авăр 30
Çумăр çăвать 31
Тулли уйăх 32
Чее ырашпăтри 33
Кушак аçи 34
Паттăр 35
Çавра çил 35

Куккук сассиллĕ вăхăтсем 36
Пĕлĕтсем 37
Çурхи каç вăрманта 38
Каçхине 39
Шухăшласа кăларнă тинĕс 40
Юрату юрри 40
Тăвăл 41
«Ан шавла, вăрман...» 42
«Эс камччĕ çак?» 42
«Мана макăртма...» 43
«Эсĕ вĕçĕмсĕр хурлăхраччĕ» 43
Экзаменсем 44
Этюд 45
Пĕччен йăмра 46
Ёне çитерме 47
Тĕтре 48
Хур чĕппи 49
Икĕ селĕп 49
Йăмăк 50
Ёнесем 51
Йĕтем çинче 52
Çул çинче 53
Çул çинчен 54
Малтанхи юр 55
Хаваслă перемена 56
Ашкăнчăксен юрри 57
Çурхи фантази 58
Каччăсем 59
Çур каçĕн ыр тĕттĕмлĕхĕ 60
Урамра 61
Ан васка 62
Асăнмалăх 64
Мал енче 65
Савнă тус 66
Çывăр, шăллăм 67
Эсĕ пур чух 68

Тăвăлсем 69
Вĕçевçĕ Голландец 70
Шух çил улать 71
Ыраш пусси 72
Пулăç 73
Юмореска 73
Çумăр 74
Тамара 75
Хĕр ташăç 76
Бригадир 77
Эх, Энтри, сухаçă... 78
Чирлĕскер 79
Наçтапа Наття 80
Авланас тесе çӳрет 81
Вăрманта 82
Çĕрлехи хирте 83
Шухăш 83
Ни унта, ни кунта 84
Пудихин Петĕр 85
Шурккана 85
Лена 86
Альфия 86
Парта айĕнче çуралнă сăвă 87
«Чăнах-ши вăл, ача чухне...» 88
Туртаççĕ 89
Вăрман 90
О, полонез, Огинский полонезĕ... 91
Манăн тымар 92

**Шкул вальсĕ**

Ача чунĕ 95
Идеал шыраса 96
Кăмăл 97
Анне патне 98
Виçĕ сăвă 99
Кĕтет е кĕтмест? 100

Алăкăртан пăхрăм 101
Амур хумĕсем 102
Урçа каччă 103
Кĕмĕл серенада 104
Тамарăна 105
Çил ачи 106
Шкул вальсĕ 107
«Чĕреçĕм, канăçсăр чĕре...» 108
Мартри хĕвеллĕ хир 109
Уйрăмлăх 110
Тусăм, тусăм 111
Кармен 112
Çупкă 113
Хăнара 114
Сумел Йăванĕ 115
Поэт мар сăвăç 116
Пĕр хăйшĕн çеç 117
Пĕр редактора 117
Тĕрлĕ çĕрти çырусем 118
Урамсенче 120
«Çусам, çусам, ăш çумăр...» 121
Юлташăм 122
«Ирсерен шкулалла...» 123
«Каç пулсассăн уйăх...» 124
Юрă 125
Поэтсем 126
Юлташ йăмăкĕ 127
Ултă эпитафи 128
«Каç пулсассăнах кĕретĕп...» 129
Çурхи каç 130
Çурхи серенада 131
Серенада 132
Танго 133
«Уйăхлă çурхи вырсарни каç...» 134
«Сан йăл куллун...» 135

«Итлесемччĕ шăпчăк сассине...» 135
Тунсăх пур 136
Сăмахсăр юрă 137
Чечек, хирти чечекĕм 138
Ырă юрă 139
Йĕкĕт юрри 140
Уйрăлу юрри 141
Ăсату юрри 141
Мунчара 142
Пĕчĕк акăшсен ташши 143
Куинджи 144
Моцартпа Сальери 145
Ывăннă карап 146
Есенин 147
Тĕллев патне 148
Терцинсем 149
Çурхи уйăхлă сад 150
Сăвă çурални 151
Сирень турачĕ 152
Юлашки шăнкăрав 153
Шухăшсем аптратсан 155
Калас тени 156
Шӳтле сăвă 157
Юлашки каç 158
Элеги 160
Сивĕ улăх 161
Çыру 162
Сӳрĕк кăмăл 163
Палламан хĕрача 164
Вăрçă 165
Ашшĕсĕр юлнисем 166
Пурнăç улми 167
Хĕвел 168
Пушар 169
Çуса çакнă кĕпе-йĕм 170

Пыл хурчёсем 171
Август каçёсем 172
Шкул умёпе 173
Çуралнă кун 174
Икё хурăн 175
Килтен каяс умён 176
Новелла 177
Ăнланаймастăп 179
Манмăп сана 180
Инçетрен 181
Шанчăклăх 182
Çёнё çул юрри 183
Уйăх 184
«Кантăкран курăнать...» 184

**Хёр уйăрни**

Йăван салтак 187
Паттăр çинчен 192
Хёр уйăрни 198
Пирвайхи тăвăлсем 217

**СЕНИЭЛЬ Михаил Павлович**

# *Таса çутă*

# Чистый свет

Стихи и поэмы,
написанные в школьные годы.

*На чувашском языке*

Художник *В.И.Агеев*
Редактор *И.П.Егоров*
Художественный редактор *А.А.Трофимов*
Корректор *М.П.Егоров*
Оригинал-макет
*Н.Е.Ивановой, Э.В.Кирилловой*

Подписано к печати 22.08.2005.
Формат 60×90[1]/[32]
Бумага офсетная.
Физ. печ. л. 7,5.
Тираж 500 экз.
Печать офсетная.
Гарнитура Times.
Учетно-изд. л. 6,75.
Заказ № 22.

Напечатано в типографии Чувашского государственного
института гуманитарных наук
428015 г.Чебоксары, Московский пр., 29, корп. 1
Лицензия № 04143 от 27.02.01

20.00